С(Чув)
Д-18
4842-Чув

М. Н. Данилов-Чалдун



# Революци çулӑмӗ

Национальная библиотека ЧР
4-004842
4842 иув
до 17.02.95

к2
Д 18



М. Н. Данилов-Чалдун

# Революци çулăмĕ

Чăваш АССР Государство издательстви. Шупашкар 1960

с (чув)

ТУПМАЛЛИ

Революци çуламĕ . . . . . . . . . . 3
Çăлтăрлă çĕлĕк . . . . . . . . . . 65
Тайга паттăрĕсем . . . . . . . . . 90
Ункăран . . . . . . . . . . 111

4842 чув

Чувашская Республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. Горького

**Максим Николаевич Данилов-Чалдун**

**ПЛАМЯ РЕВОЛЮЦИИ**

Рассказы

На чувашском языке

Оформление художника **Иконникова А.**

Редактор **Г. Орлов.** Техн. ред. **П. Перлов.**
Худож. ред. **Н. Кириллов.**
Корректор **Ю. Миронова.**

Сдано в набор 6. IX-1960 г. Подписано к печати 24. X-1960 г. Формат 84×108 /32. Объем 6,72 печ. л. Уч-изд. л. 6,92. Заказ № 1301, Тираж 2500 экз. Цена 3 руб. 10 коп., с 1.1-1961 г. 31 коп.

Типография № 1 Министерства культуры Чув. АССР
г. Чебоксары, Володарского, 5.

ПРОВЕРЕНО 10 ОКТ 2017



## РЕВОЛЮЦИ ÇУЛĂМĔ

I

Малинкин кунти çын мар. Вăл Пушкăрт республикинчен килнĕ. Ăна коммунистсен партин комитечĕ вăхăтлăха ĕçлеме янă. Вăл хăйĕн иртнĕ пурнăçĕ çинчен пĕр хулăн тетрадь çине çапла çырса хăварнă.

Итлĕр, вулатпăр:

...Эпĕ атте-аннене курман. Вĕсем камсем пулнине пĕлместĕп те. Сахрун пичче каласа панă тăрăх, вăл мана пулă тытма кайсан кӳлĕ хĕрринчен тупса таврăннă. Пуп тĕне кĕртнĕ, Витали тесе ят хунă. Сахрун пиччепе инкен ача-пăча пулман пирки вĕсем мана хăйсен тăван ачи пек пăхса ӳстерсе çын тунă.

Сахрун пиччен çĕр пулман. Вăл тимĕрçĕ ĕçĕпе тăранса пурăнатчĕ. Ĕç пăрахсан ялан манпа йăпанатчĕ. Чĕринчен юрататчĕ вăл мана. Сакăр çула çитсен мана шкула вĕренме леçсе ячĕ:

— Вĕрен, ачам, вĕрен. Вĕренни вăл çăкăр ыйтмасть. Йывăр та мар, ăна çурăм хыçне çакса йăтса çӳрес çук,— тесе йăпататчĕ.

Эпĕ хĕлле шкулта вĕренеттĕм. Çулла тимĕрçĕ лаççинче Сахрун пиччене пулăшатăп.

— Ĕçле, ачам, ĕçле, пирĕн, чухăнсен, ĕçпе хырăма тăрантарас пулать. Староста ывăлĕ Якку пеккисем çеç

ĕçсĕр тăранаççĕ. Вĕсемшĕн халăх ĕçлет. Халăх — выçă, вĕсем — тутă, яка тумланса çӳреççĕ,— тесе ăнлантаратчĕ мана Сахрун пичче.

Ăнсăртран Сахрун пичче арăмĕ, Мавра инке, вĕри чирпе чирлесе ӳкрĕ те урăх вара ура çине тăраймарĕ, вилчĕ. Ăна йĕре-йĕре кайса пытартăмăр. Çав тери шел. Калама çук ырă кăмăллă хĕрарăмччĕ. Сахрун пиччепе вĕсем нихăçан та пĕр урлă сăмах калаçман. Пĕрмаях пĕр-пĕринпе ăшă кăмăлпа калаçса пурăнатчĕç. Мавра инкене пытарсан Сахрун пичче тӳсме çук хуйхăрчĕ. Çӳçĕсем пĕрчĕн-пĕрчĕн шуралчĕç. Курпун та туха пуçларĕ.

Вăтăртан çеç иртнĕ пулсан та, ватă сăн çапрĕ. Питçăмартисем çинче пĕркеленчĕксем палăрчĕç. Тĕнчере пирĕншĕн чи хаклă çынна çухатрăмăр. Çакăн хыççăн Сахрун пичче мана тата та ытларах юрата пуçларĕ. Хăйĕн пысăк хуйхине манпа калаçса пусаратчĕ.

Шкулта эпĕ лайăх вĕренсе пыратăп.

— Ачам, кунта вĕренсе пĕтерсен, эпĕ сана хулари шкула вĕренме ярăп,— йăпататчĕ мана Сахрун пичче.

Эпĕ хам та хулана вĕренме каяс тесе ĕмĕтленеттĕм. Хулара пирĕн пĕлекен студент пур. Вăл студент Сахрун пиччепе пĕлĕшлĕ. Вăл каникул вăхăтĕнче кашни çул пирĕн пата хăнана пырать. Сахрун пиччепе пулă тытма çӳреççĕ. Юлашки çул вĕсем амăшĕпе иккĕшĕ, хăнана пырса, эрне ытла пурăнса кайрĕç.

— Витали, кăçал кунта шкултан вĕренсе тух та, çитес çул эпĕ сана хулари шкула вĕренме кĕртĕп. Унта чухăнсен ачисене пит илесшĕн мар та, ан хăра — майлаштарăпăр. Санпа пĕрле хамăн йăмăка — Марфушăна та вырнаçтарăп. Иксĕр вĕренĕр,— тесе хăварчĕ студент тухса каяс умĕн.

Студент калани мана пушшех хаваслантарать. Эпĕ тĕлĕкре те хулари шкулпа аташса выртатăп. Ирхи кун каçчен асран каймасть. Ялан хулари шкул куç умĕнче.

## II

Юлашки çул ялти шкулта вĕренетĕп. Тантăшсемпе калама çук туслă пурăнатпăр. Анчах староста ывăлĕ Яккупа пирĕн «пăрçа пиçмест». Эпĕ ăна нимех те туман. Вăл ман çине темшĕн çиленет. Хам та пĕлместĕп. Эпĕ, тăлăх, чухăн тимĕрçĕ ачи пулсан та Яккуран питех хăрамастăп. Вăл хирĕç тăрсан, эпĕ те ăна хирĕç тăратăп. Тавлашу пырать.

Шăп çав çул манăн çамрăк пуçа сăвă çырас шухăшсем пырса кĕчĕç. Эпĕ «Нарспи» вуланă хыççăн тарăн шухăша кайса çӳре пуçларăм. Шухăшласан-шухăшласан мĕн çинчен çырмалли тупрăм та çырса хутăм:

«Урампа Якку пырать
Мăн хырăмне каçăртса.
Хăйне валли тус шырать
Куçне-пуçне чалăртса.
Пĕр алли ун кĕсйинче
Тепри — пилĕкне тытнă.
Мĕн шухăш-ши пуçĕнче,
Шăлне шăтăрах çыртнă?»

Тепĕр кунне хамăн сăвва пĕтĕм шкул ачисене вуласа патăм. Ачасем, савăннипе, каçса кайса, ахăлтатса кулчĕç.

Çав сăвва çырса вуланă хыççăн Якку ман çине пушшех çиленсе çитрĕ. Мел пулсан, вăл мана халех турткаласа çурма хатĕр. Мана хирĕç ытти пуян çын ачисене пуçтара пуçларĕ.

— Асту, вĕрентĕп-ха эпĕ сана вăл сăвăшăн!— тесе пӳрнипе юнать ман çине.

— Эсĕ вĕрентессисем тахçанах вилсе пĕтнĕ, — тесе тавăратăп Яккăва хирĕç.

Якку яланах ман çине кӳренсе çӳрет. Анчах çапăçма вăйĕ çитеймесрен хăрать пулас.

Пĕрре çапла, Якку перемена вăхăтĕнче тула тухмарĕ, парта хушшинче ларса юлчĕ. Перемена пĕтрĕ. Ачасем пурте кĕчĕç, хăйсен вырăнĕсене тирпейленсе ларчĕç. Учитель кĕрессе кĕтетпĕр. Якку ман çине çаврăнса пăхрĕ те:

— Витали вăрă, вăрă! — тесе кăшкăрса ячĕ.

Ачасем тĕлĕннипе пĕрре ман çине, тепре Якку çине пăхаççĕ.

— Кам, эпĕ вăрă-и? Мĕн вăрларăм эпĕ санне? — çав тери тарăхса ура çине сиксе тăтăм.

Якку çаплах:

— Вăрă!.. — тесе кăшкăрать, ман çине пӳрнипе тĕллесе кăтартать.

Учитель пырса кĕчĕ. Якку тин шăпланса ларчĕ. Эпĕ тӳсме çук тарăхатăп Якку çине: «Мĕншĕн вăл мана нимĕн айăп çук çинчех «вăрă» ячĕ парать-ха?» тесе шухăшлатăп. Чĕре кăкăра çурса тухас пек сиксе тапать. Ăш вут пек çунать. Çапла тарăхса ларнипе, пысăк перемена çитнине те сисеймерĕм.

— Кăнтăрлахи апат тăвăр, ачасем,— терĕ учитель. Хăй тухса кайрĕ.

Ачасем хăшĕ шуратман çĕрулми, хăшĕ тăвар сапнă ыраш çăкрине шывпа сыпса çиеççĕ. Якку çу сĕрнĕ тулă çăкăрне сĕтпе сыпса çиет. Хăй савăнăçлă кулать. Çуллă çăкăра сĕтпе пĕрле чăмламасăрах çăтать. Куçĕсене тăмана пек вылятса чеен пăхкалать.

Сасартăк, хаяр сасăпа:

— Уу-у... Çăкăра такам вăрланă!— çухăрса ячĕ Кĕтӳç Микулай хĕрĕ Марук.

— Кам вăрланине шыраса тупас!— сиксе тăчĕ çисе ларакан Якку.

— Кам вăрланă? Кăтартăр аллăрти çăкăрсене! — терĕм эпĕ парта хушшинчен тухса.

Ачасем пурте аллисенчи çăкăрсене тăсса кăтартаççĕ.

— Капла ăçтан тупатăн. Сумкисене ухтарас!— кăшкăрать Якку ман çине пăхса.

Пурин сумкисене те пăхса тухрăмăр, Марукăн çăкăрĕ çук. Кам вăрланă, паллă мар.

— Кăтарт хăвăн сумкуна! — тет мана Якку.

Эпĕ хамăн парта ăшĕнчен сумкăна кăларса патăм. Якку ман сумкăна чĕтрекен аллисемпе ярса тытрĕ те, хăрах аллине сумка ăшне чиксе ярса:

— Акă кам вăрланă!—тесе çăкăр чĕлли туртса кăларса, ачасене çӳлелле çĕклесе кăтартрĕ.

Эпĕ тăнă çĕрте тĕлĕннипе хытсах кайрăм: «Мĕнле майпа Марук çăкăрĕ ман сумка ăшне кĕрсе выртма пултарнă-ха?» Ним тума пĕлмесĕр, аптраса тăратăп.

— А-а.., Эсĕ куç умĕнче ачасемпе йăпăлтататăн. Куç хыçĕнче вĕсен çăкăрне вăрласа çиен. Ак сана! — Якку мана кăкăртан чышса ячĕ. Эпĕ кутăн-кутăн чакса парта çине йăванса кайрăм. Сиксе тăрса хирĕç тапăнтăм, çук, пĕтĕм пуян ачисем Якку майлă. Чухăнсен ачисем хăраса ӳкнĕ. Эпĕ пĕр-пĕччен. Çапах Яккăва парăнас килмест. Тен, çапăçса та кайнă пулăттăмăр, анчах çав вăхăтра учитель пырса кĕчĕ:

— Мĕн пит шавлатăр? — ыйтрĕ учитель.

— Ав, Витали Марукăн çăкăрне вăрласа хăй сумкине пытарса хунă. Ухтарса тупрăмăр, —тесе элеклерĕ Якку учителе.

Учитель ман куçран тĕлĕнсе пăхать:

— Витали, мĕнле-ха ку?

— Иван Васильевич. Марук çăкăрне эпĕ вăрламан. Ăна Якку хăй... иртнĕ перемена вăхăтĕнче вăл тула тухмарĕ, мана кураймасăр, Марук çăкăрне вăрласа, ман

сумкăна чиксе хунă, — тетĕп. Кăмăл хуçăлнипе куççем шывланчĕç.

— Суять! Хăй вăрланă. Акă çăкăрĕ! — кăшкăрать Якку, çăварне карса пăрахса.

Мĕн тăвас тетĕн, вăл вăхăтра пуянсен влаçĕ. Вĕсен сăмаххи тĕрĕс... Учитель те пуянсем майлă. Майлă пулмасан та юрамасть, мĕншĕн тесен кашни вырсарникун староста патĕнче хăнара пулать. Тата Яккăвăн качча кайман аслă аппăшĕпе туслă пурăнать.

Çапла вара мана, «вăрă» ячĕ парса, вĕренсе пĕтермесĕрех шкултан кăларса ячĕ учитель.

Вăт мĕн турĕ мана староста ывăлĕ Якку. Пĕр айăпсăр пулсан та, çын куçĕ умне курăнма памастчĕ.

— Ачам, ан кулян. Выçă вилмĕпĕр-ха, пурăнăпăр,— тесе йăпататчĕ Сахрун пичче.

Çакăн хыççăн вара эпĕ Сахрун пиччепе пĕрле тимĕрçĕ лаççинче ĕçлеме тытăнтăм. Хулана вĕренме каяс шухăш çапах пуçран тухмасть. Вĕренесех килет.

## III

Ир пулать те каç пулать. Çуркунне пулса иртрĕ. Çу çитрĕ. Утă çулма тухрĕç. Ыраш пусси ылтăн тинĕс пек саррăн курăнса хумханса выртать. Хресченсем ыраш вырма хатĕрленеççĕ: пирĕн пата — тимĕрçĕ лаççине çурласем шăллаттарма илсе пыра пуçларĕç.

Сахрун пичче мана çурла шăллама вĕрентрĕ. Эпĕ хам тĕллĕнех çурла шăллатăп. Пуçра çавах хулана вĕренме каяс шухăш кĕрет. Юлташсемпе те калаçатăп:

— Хулара вĕренсен аван та çав. Пирĕн пек чухăнсен ачисене илмеççĕ пуль, — тесе кулянаççĕ юлташсем те. Вĕсен те ман пекех вĕренес килет.

Пĕрре хам кĕтмен тĕлтен, урамра староста ывăлне — Яккăва хирĕç пултăм. Вăл мана вĕренсе пĕтермесĕр шкултан кăларса янишĕн савăнать:

— Ха-ха-ха!.. Витали, эсĕ хулари шкула вĕренме кайма пуçтарăнать, тесе калаçаççĕ. Чăнах-и? Кĕтсех тăр, илсех пăрахĕç сана унта. Манка чăпти. Ялти шкултан та вĕренсе тухман вĕт-ха эсĕ. Ху çапах хулари шкула — гимназине вĕренме кайма пуçтарăнатăн,— тесе мăшкăлласа кулчĕ манран Якку.

Эпĕ хирĕç тавлашса тăмарăм. Яккуран пăрăнса иртсе кайрăм: «Мĕн санпа калаçса çăвар тутине сая ямалла», тесе шутларăм.

Вăхăт çитсен ыраш пиçсе çитрĕ. Вут пек çунтарса пăхакан хĕвел айĕнче хресченсем тар юхтарса ыраш выраççĕ. Ыраш хушшинче путенесем авăтаççĕ. Улăхра карăш кăшкăрать.

Қăнтăрлахи апат тăвас умĕн пирĕн пата — тимĕрçе кăлкан пек шурă çӳçлĕ, сарлака сухаллă Макçăм мучи пычĕ. Макçăм мучи ватă ĕнтĕ, уя ĕçе каяймасть. Қашни кунах пирĕн пата — тимĕрçе пырса ларса вăхăтне ирттерет. Шӳтникскер. Тем те пĕр çинчен каласа тимĕрçе пынă çынсене култарать. Анчах паян темшĕн вăл салху; сăнĕ-пичĕ çинче пĕр савăнăç та палăрмасть.

— Мĕн пулнă сана паян, Макçăм пиччи? — тесе ыйтрĕ унран Сахрун пичче.

— Ан та кала, ача. Паян кантур ялне çитсе килтĕм... Пире хирĕç Германи патши вăрçăпа тухнă тет. Ватă салтаксене вăрçа илсе каймалли хут килнĕ, — тесе пĕлтерчĕ.

Малтанах Макçăм мучи сăмахне ĕненмесĕр тăраççĕ тимĕрçри çынсем. Вăл шӳт тăвать пулĕ тесе шутлаççĕ.

— Вăрçăра пире, чухăнсене, вилĕмрен пуçне урăх нимĕн те усси çук, — терĕ Макçăм мучи тарăн сывласа.

Çынсем кураççĕ: Макçăм мучи шӳтлĕ мар, чăн калать. Ĕненчĕç. Сахрун пичче ĕçлеме пăрахрĕ. Ним калама аптранă енне:

— Пирĕн юна мĕн чухлĕ кӳпсен те тăранас çук ĕнтĕ вĕсем. Вĕсене вăрçă пултăр. Э-эх, пурнăç... Кăшт лăпланса пурăнаттăмăр-ха. Каллех пуçланать ĕнтĕ халăх юнĕ тăкăнма, — терĕ Сахрун пичче вăраммăн сывласа.

Вăрçă пуçланнă хыпар аçа-çиçĕмлĕ хăвăрт сарăлчĕ. Хĕрсе ыраш выракансем, вырса тултарнă кĕлтисене çыхмасăрах, хăшĕ урапа кӳлсе, хăшĕ юланутпа, хăшĕ çуранах ялалла кĕшĕлтетсе таврăнаççĕ.

Вырса тухман қаçалăксем, çыхман кĕлтесем çаплипех выртса юлаççĕ. Вăрçа каймалли ватă салтаксен ăшчик вăрканипе, е тарăхса çитнипе, ним тума аптраса, чиркӳпе юнашар хупах патне пуçтарăнаççĕ. Хупаха питĕрнĕ.

— Уç! Давай эрех! — кăшкăрса хупах алăкне шакка пуçларĕç.

Хупахçă хупах алăкне уçма хărать. Чӳрече витĕр çеç кĕленчесене тыттарать. Çынсем çавăнтах кĕленче пăккине çапса кăлараççĕ те çăварĕнченех ланкăртаттарса ĕçеççĕ. Пушă кĕленчисене чиркӳ карти çумне çапса çĕмĕреççĕ. Унтан каллех:

— Давай эрех! — кăшкăраççĕ.

Хупах чӳречи чанкăр-р çĕмĕрĕлчĕ. Хăраса ӳкнĕ хупахçă эрехе пĕррех шалтан ывăтать. Ҫĕленчесем выляса çеç тăраççĕ.

— Ĕçсе юлăр, тăвансем! Ҫĕмĕрĕр! Пурĕ-пĕр эпир те çак кĕленчесем пек пĕтетпĕр,— тесе шăнкăр та шанкăр кĕленчесене ватаççĕ.

Ĕсĕклесе йĕрнĕ сасăсем кĕвĕлемен купăс пек илтĕнеççĕ. Ҫавăнтах юрлаççĕ:

Ай, каятпăр, тăвансем,
Ай, каятпăр.
Кайăк хурсем çитми çĕрелле,
Кайăк хурсем кайĕç,
Калле килĕç.
Эпир пĕр кайсассăн —
Калле килес çук.

Хăраса ӳкнĕ пуппа староста таçта тарса пытаннă. Вĕсене тытса хĕнеме шыраççĕ. Анчах тупаймаççĕ.

Ҫуйхăшать ял. Ĕçеççĕ, йĕреççĕ, ташлаççĕ, юрлаççĕ. Пыр тĕпĕсене хырса кăшкăраççĕ.

Юман тенкел юлтăр ĕнтĕ.
Ларса курас çук ĕнтĕ.
Савнă чунăм, юлан ĕнтĕ
Урăх курас çук ĕнтĕ.

Каç пулнă çĕре хуларан полицейскисем çитсе кĕчĕç. Вĕсем пырсан старостăпа пуп та тухрĕç. Ватă салтаксене хулана хăвала пуçларĕç. Ӳсĕрпе турткалашса тăраканнисене çыха-çыха пăрахса ăсатаççĕ. Арăмĕсем, ачи-пăчисем, ашшĕ-амăшĕсем, тăванĕсем куççуль тăкса, татăлса йĕрсе юлаççĕ.

Ҫапла пуçланса кайрĕ 1914 çулхи тĕнче вăрçи. Ҫав вăрçа вара Сахрун пиччене те илсе кайрĕç. Эпĕ, вунтăват çулхи ача, пĕр-пĕчченех тăрса юлтăм.

Пуп кашни вырсарникун кĕлле кĕрет. Улакуракăн ялан пĕр юрă:

— Эй, турă, вырăс патшине тĕрлĕ тăшмансене çĕнтерме пулăш. Патша çемйине хăвăн хăватупа сыхла,— тесе кĕлтăвать. Пупшăн ытла та май ӳкрĕ: вăрçăра суранланнă, вилнĕ салтаксен ячĕпе укçа пуçтарса хăй кĕсйине чикет.

Упăшкисене вăрçа ăсатнă салтак арăмĕсем, ачи-пăчисене ертсе, тырă вырма уялла утаççĕ. Вырсарникун вĕсем, аптранă енне чиркĕве кайса турă амăшĕ умне çурта

лартса, чӗркуҫлене-чӗркуҫлене тӑрса, упӑшкисем ырӑсыва таврӑнасса ыйтаҫҫӗ.

Пуп пӗрех укҫана пуҫтарать.

## IV

Йӗпе-сапаллӑ кӗркунне ҫитрӗ. Шухӑшларӑм-шухӑшларӑм та, мӗн пулсан пулать, шкула вӗренме кӗреймесен, ӑҫта та пулин ӗҫе кӗрсе хырӑма тӑрантарӑп, тесе, хулана тухса утрӑм.

Ҫамрӑк шӑмшак ҫӑмӑл. Урасем хӑйсемех ҫӑмӑллӑн яра-яра пусаҫҫӗ. Ҫирӗм ҫухрӑм хулана часах ҫитрӗм. Хулара чи малтан эпӗ тыткӑна лекнӗ Австри салтакӗсене куртӑм. Вӗсем пӗр виҫҫӗр ҫын ытла. Вӗсене вырӑс казакӗсем ункӑ пек ҫавӑрса илнӗ те лагерелле илсе каяҫҫӗ. Лешсем, пуҫӗсене чиксе, ывӑннӑ урисене аран-аран ярса пусаҫҫӗ... «Ак мӗнле иккен вӑл вӑрҫӑ? Сахрун пичче те вӗсем патне тыткӑна лексен, ӑна та ҫапла хуса, конвоирсем сыхласа ҫӳрӗҫ, мӗскӗне. Урисем ыратнипе аптӑратчӗ. Мӗнле тӳсӗ-ши?» — шухӑша кайса, Австри салтакӗсене шеллесе утса пыратӑп. Тыткӑна лекнисен хушшинче пӗри Сахрун пичче пекех уксахлать. Вӑл чи хыҫалтан лӑкӑштатса пырать. Ак уксах патне пӗр казак лашине сиктерсе пычӗ те:

— Ну, ут, ут! — тесеваскатать.

Уксах австриец казак ҫине пуҫне ҫӗклесе мӗскӗннӗн пӑхать. Юлташӗсен ушкӑнӗнчен юлас мар тесе, васкаса лӑкӑштатать.

Эпӗ шухӑша путнипе ниҫталла пӑхмасӑр утатӑп.

— Эй, ҫул ҫинчен пӑрӑн! — сасӑ илтӗнчӗ. Хӑвӑрт пӑрӑнса, ҫаврӑнса пӑхрӑм. Ман ҫумран пӗр лаша кӳлнӗ тӑрантас вӑшлатса иртсе кайрӗ. Тӑрантас ҫинче икӗ Австри офицерӗ ларса пырать. Кучерта вырӑс салтакӗ ларать. Вӑл, тилхеписене ҫирӗп тытса, урисемпе тапса ларса пырать. Хӑй шыв кӗвенти пек кукӑрӑлнӑ.

«Офицерсене тыткӑнта та лашапа турттарса ҫӳреҫҫӗ. Пуян ывӑлӗсем пуль ӗнтӗ вӗсем», тесе шухӑшласа юлтӑм.

Утсан-утсан пасар площадьне пырса тухрӑм. Унта кӗтӳ пек кӑвак шинель тӑхӑннӑ салтаксем кӗске кунчаллӑ салтак аттисемпе пасар площадӗнчи пылчӑка ҫӑраҫҫӗ. Вӗсенчен хӑшӗ хысна тумтиррисене сутаҫҫӗ:

— Илӗр, илӗр! Ыран фронта тухса каятпӑр. Ҫавӑнпа йӳн хакпах паратпӑр,— тесе аллисенчи тумтирӗсене силлесе кӑтартаҫҫӗ.

Тĕрлĕ енчен хĕрарăм, ача-пăча сасси янăрать:
— Вĕри пельмен, тин çеç пиçнĕ!
— Ириска, ириска!
— Квас, квас!

Пасарăн шăп варринче карусель çаврăнать. Ун тавра халăх кĕпĕрленет: пĕрисем ларса ярăнаççĕ, теприсем черет кĕтеççĕ. Хут купăспа пĕрле параппан сасси пасар илемне кӳрет:

«Ехал из ярмарки ухарь купец,
Ухарь купец, удалой молодец.
Трай-ля-ля, трай-ля-ля...
Ухарь купец, удалой молодец...

Çав пăтă пек халăх хушшинче кăкăрĕсем çине хĕрлĕ хĕрессем çакнă, аллисене çутă шăвăç кружкăсем тытнă икĕ çап-çамрăк хĕрарăм çӳрет:

— Вăрçăра аманнă, вилнĕ салтаксен ачи-пăчисене, кам мĕн чухлĕ пулăшма пултарать, пулăшăр, тăвансем! — тесе, çинçе сассисене чĕтретсе, йăлăнса ыйтаççĕ. Çынсем кружка çине укçасем пăраха-пăраха иртеççĕ. Хĕрарăмсем укçа паракана пуç тайса малалла утаççĕ:

— Тавтапуç! Вырăс воинĕсене пулăшнăшăн сана турă пулăштăр...

Хĕрлĕ хĕреслĕ хĕрарăмсем пасарăн тепĕр вĕçнелле утса кайрĕç. Вĕсен йĕррипе пĕр хăрах уреллă, икĕ алли те çук салтак костыль çине таянса, картузне шăлĕпе çыртса мулкач пек, йăкăлт-йăкăлт сиксе пырать:

— Хаклă тăвансем! Вăрçăра аманнă салтака пулăшăр! Ачам-пăчамсем выçă, — тесе пĕтĕм чĕринчен йăлăнса ыйтать.

Çынсем, хăрах уреллă салтака та шеллесе, картузĕ çине укçасем пăрахаççĕ.

Чиркӳсенче те, пасарсенче те аманнă е вилнĕ салтаксен ачи-пăчисем валли пулăшма укçа пуçтараççĕ. Ăçта хураççĕ? Аманнă салтакĕсем те çавăнтах ыйтса çӳреççĕ, тесе шухăшлатăп. Манăн мĕнле те пулин хамăр пата хăнана пыракан студент Каççиме шыраса тупас килет. Анчах вăл ăçта, хăш урамра, хăш çуртра пурăннине пĕлместĕп. Ăçтан пĕлетĕн? Кунта вĕт хула, ял мар... Пасар тăрăх çапкаланса çӳресен-çӳресен, пĕр студентла тумланнă çамрăк çынна тĕл пултăм:

— Пичче, эсир Каççим ятлă студент ăçта пурăннине пĕлместĕр-и? — тесе ыйтрăм.

Студент ман çине урлă тăрăх пăхса илчĕ те:

— Мĕн тума кирлĕ вăл сана?

— Вăл пирĕн пĕлекен çын.

— Халĕ килĕнче çук вăл.

— Ăçта?

— Тĕрмене хупса лартнă.

— Мĕн айăп тунă вара вăл?

Студент ман çине тепĕр хут пăхса илчĕ те:

— Çамрăк-ха эсĕ пурне те пĕлме, — терĕ те пăрăнса кайрĕ.

Эпĕ ун çине кăмăлсăр пăхса юлтăм:

— Хăй тĕрмере ларсан, амăшĕсем ăçта та пулсан пурăнаççĕ пуль? Тĕлне кала-ха, пичче! — тесе тепĕр хут чупса çитсе ыйтрăм.

Студент ман çине çаврăнса пăхрĕ те:

— Ан çыхлан! Юл ман таврашран! — терĕ çиленсе. Унтан пасар халăхĕ хушшине кĕрсе кайса çухалчĕ.

## V

Эпĕ пасартан тухса ăçта та пулин шкул çурчĕ тупас шухăшпа пĕр аслă урам тăрăх утрăм. Нумайччен çаврăнса çӳрерĕм хула урамĕсем тăрăх. Хам та пĕлместĕп, тен, эпĕ аташса та кайнă ĕнтĕ... Çӳресен-çӳресен, чиркӳпе юнашар пĕр виçĕ хутлă хĕрлĕ çурт патне пырса тухрăм. Вăл çуртăн хапхи умĕнче пĕр салтак пăшал тытса тăрать:

— Пичче, шкул пур-и ку хулара? — тесе ыйтрăм.

— Мĕнле шкул?

— Эпĕ вĕренме кĕрес тетĕп.

— Вĕренме? Халĕ вăрçă вăхăчĕ. Шкулсене хупса пĕтернĕ. Учительсене салтака илнĕ. Ак çак çурт та ĕлĕк шкул пулнă. Халĕ ĕнтĕ казарма тунă. Салтаксем пурăнаççĕ. Хулара пĕр духовнăй гимнази çеç юлнă. Унта сана илес çук. Ан та çӳре, — терĕ салтак.

— Мĕншĕн илес çук?

— Çиййĕнти тумтирĕнтенех паллă, илес çук. Унта пуян ачисем çеç вĕренеççĕ. Сан пек çăпатасене кӳртмеççĕ,— терĕ салтак ĕнентерсе.

Çав вăхăтра казарма хапхинчен пĕр взвод салтак юрласа тухрĕ:

«Пишет, пишет царь германский,  
Пишет русскому царю:  
— Завоюю всю Россию,  
Сам в Москву я жить пойду...»

Взвод хыҫӗнчен унтер-офицер утса пырать.

— Хытӑрах кӑшкӑрса юрлӑр. Ать! два! три! — кӑшкӑрать. Хӑй те салтакӗсемпе пӗрле урисене ҫӳлелле ҫӗклесе тап-тап! пусать.

Салтаксем пыр тӗпӗсене хыртарса юрлаҫҫӗ:

Не журися, царь наш белый,
Мы Россию не дадим.
За Москву, за Русь святую,
Кровь последнюю отдадим...

Эпӗ салтаксем юрласа утни ҫине чылай вӑхӑт пӑхса тӑтӑм.

— Ача, кай кунтан. Офицерсем курсан, сан пирки мана айӑплама пултараҫҫӗ,— терӗ салтак.

Эпӗ ҫаврӑнса утрӑм. Ҫалле яла таврӑнас шухӑшпа, тепӗр хут пасар площадьне ҫитсе тухрӑм.

Каҫ пулчӗ. Пасар вырӑнӗ пушӑ. Кунӗпе ҫын урисен айӗнче ҫӑрӑлнӑ пылчӑк ҫеҫ епреленсе выртать. Унта-кунта ҫӗтӗк-ҫатӑк тумтирлӗ ача-пӑчасем курӑнкалаҫҫӗ. Лавкка хуралҫисем пур.

— Ҫайӑр! Пасар пӗтнӗ вӗт. Мӗн шӑршласа ҫӳретӗр тата? — тесе хӑвалаҫҫӗ ача-пӑчасене лавкка хуралҫисем.

Ача-пӑчасем хуралҫӑсен куҫӗсене курӑнасшӑн мар, лавкка хушшисене кӗрсе пытанаҫҫӗ.

Эпӗ ниҫта кайма аптранипе пасар вӗҫнелле тухрӑм. Куратӑп: пӗр пушӑ лавккара виҫӗ ача тавлашаҫҫӗ: — «Мана сахал патӑр!» — тесе ҫухӑрать пӗри.

— Эсӗ вӑрламан вӗт ӑна — эпӗ... Ак, ыран ху вӑрла та, нумай пулӗ,— тесе вӑрҫать ӑна тепри.

Ачасем тавлашнӑ ҫӗре эпӗ те пытӑм. Мана курсан тавлашма чарӑнчӗҫ:

— Ҫам ачи? Ӑҫтан? Мӗн туса ҫӳретӗн?—тесе тӗпче пуҫларӗҫ.

— Эпӗ кунтан ҫирӗм ҫухрӑмри ялтан. Ҫалле кайма ҫӗрле пулать. Ҫул ҫинче пӗччен хӑратӑп. Ӑҫта та пулин ҫӗр каҫмалли вырӑн пӗлместӗр-и эсир? — тесе ыйтрӑм.

— Хамӑрпа пӗрле айта. Ав, ҫырма хӗрринчи кимӗсен айне. Хваттер укҫи тӳлеме кирлӗ мар. Ахалех вырттарса ярӑпӑр,—терӗ пӗри, малти катӑк шӑлӗсене кӑтартса.

— Э-э, сан ҫийӗнти сӑхману та ҫӗнӗ-ха. Сутсан, пӗр сӑмахсӑр вунӑ тенкӗ параҫҫӗ кӑна,— терӗ тепри, манӑн ҫири сӑхмана хыпаласа пӑхса.

— Мӗншӗн сутас ман ӑна? Вара хамӑн мӗн тӑхӑнас?

— Выçă аптрасан сăхманна мар, кĕпӳ-йĕмне те сутса ярăн.

— Эпĕ выçă мар-ха, пĕр-икĕ кун пурăнмалăх çăкăр пур.

— Выçă мар пулсан, мĕн туса çӳретĕн тата кунта?— терĕ катăк шăл.

— Мана ялта та, хулара та пурĕ-пĕр. Эпĕ тăлăх. Сахрун пиччене вăрçа илсе кайрĕç,—терĕм хирĕç.

— Манăн атте те вăрçăра. Эпир çичĕ ача. Анне чирлĕ. Эпĕ килтен хырăм тăрантарма тухса килтĕм,—терĕ катăк шăл, йывăррăн сывласа.

Ачасемпе калаçсан-калаçсан, эпир пĕр-пĕринпе çывăхах паллашрăмăр. Вĕсем виççĕшĕ те салтак ачисем пулчĕç. Тен, эпĕ вĕсемпе çавăн чухнех пĕрлешсе кайнă пулăттăм. Анчах полицейски кансĕрлерĕ. Вăл лавккасен хушшинчен, сунарçă йытă пек, сиксе тухрĕ те:

— А-а-а... Лекрĕр-и, вăрăсем... Ан хускалăр. Халех персе пăрахатăп!—кăшкăрчĕ полицейски. Эпĕ хам та сисмерĕм, полицейски мана çухаран çавăрса тытса лăска пуçларĕ. Леш ачисем тарса хăтăлчĕç.

Полицейски мана аллинчен вĕçертмесĕр çавăтса пырать:

— Айта, ут!—тесе хăй купарчаран урипе тапать. Манпа пĕрле пулнă ачасем, ши-ши! шăхăрса, полицейскирен мăшкăлласçĕ.

Полицейски вĕсем енне пӳрнепе юнать:

— Эсир те лекĕр-ха ман алла!—тесе утать.

Икĕ хутлă шурă чул çурт патне çитрĕмĕр.

— Айта, кĕр!— ĕнсерен чышса, пĕр тăвăр алăкран кĕртсе ячĕ мана полицейски.— Акă ваше благороди!—Тăваттăран пĕрне тытса ĕлкĕртĕм. Ыттисем тарса хăтăлчĕç. Эпĕ халех лешсене те тытса килĕп,— атти кĕлли çинче çаврăнса тухса кайрĕ.

Сĕтел хушшинче ларакан урлă уссиллĕ полицейски офицерĕ ман çине урлă та тăрăх пăхса илчĕ те:

— Эсĕ хăçан килнĕ ку хулана?—тесе ыйтрĕ кăшкăрса.

— Паян çеç.

— Хăш хуларан?

— Хуларан мар, ялтан.

— Документсем пур-и?

— Çук.

— Мĕн вăрларăн?

— Эпĕ халиччен çын япалине вăрламан,—терĕм.

— Мĕншĕн хулана килтĕн?
— Шкула вĕренме кĕме е, ĕç тупăнсан, ĕçлеме.
— Апла эсĕ çырăва та пĕлетĕн?
— Ялти шкулта тăватă хĕл вĕреннĕ.
— Миçе çулта эсĕ?
— Вунтăваттă тултарнă.
— Апла эсĕ вăрă мар? Мĕншĕн вăрăсен ушкăнне çитсе лекрĕн?
— Эпĕ вăл ачасем вăрă иккенне пĕлмен. Анчах вăл ачасем те вăрăсем мар. Вĕсене çак вăрçă вăрра ертсе янă...
Офицер ман çине шурă куçĕсемпе çаврăнса пăхрĕ те:
— Мĕн, мĕн калаçатăн эсĕ? Вăрçă çынна вăрра вĕрентет-им? Ах, манка чăпти! — терĕ офицер, ури çине сиксе тăрса.
Эпĕ, ялта ӳснĕ пулсан та, офицертен хăрамастăп. Ун куçĕсенчен шăтарас пек пăхатăп.
Офицер сĕтел хушшинчен тухрĕ. Тен, мана çупкаланă та пулĕччĕ-и? Анчах ман «телейрен», шăп çав вăхăтра, тултан пĕри алăка шак-шак! шаккарĕ.
Офицер калле хăй вырăнне ларчĕ:
— Кĕрĕр!
Алăк майĕпен уçăлчĕ. Каялла пуçлă, кĕске туналлă, усăнчăк хырăмлă, лутра çын пырса кĕчĕ. Вăл, сăмах чĕнмесĕр, офицере алă пачĕ.
— Ну, ĕçсем мĕнле пыраççĕ, Тит Кузьмич?— терĕ офицер, кĕске тунан аллине чăмăртаса.
— Тавтапуç. Ĕçсем аван пыраççĕ. Вăрçă вăхăчĕ. Тавар çитет. Хатĕрлесе ĕлкĕрме çук,— савăнăçлăн лăх-лăх кулчĕ Тит Кузьмич.
— Эсир сире çырăва лайăх пĕлекен ача кирлĕ тенĕччĕ пĕркун...
— Мĕн, пур-им?—пӳлсе ыйтрĕ Тит Кузьмич.
— Акă, суймасть пулсан, ялтан килнĕскер. Çырăва ăста пулас. Пит çивĕч калаçать,— терĕ офицер, ман çине кăтартса.
Тит Кузьмич ман çине шăтарас пек пăхса илчĕ те:
— Пултармалла пек ачи. Илсе кайса пăхас. Пултараймасан, кăларса ярăп... Мĕн ятлă эсĕ? Миçе çулта?
— Витали ятлă, хушамат Малинкин. Вунтăвата çулта. Часах вунпилĕк çине пусатăп.
— Ну, Витали, ман пата приказчикра ĕçлеме пыратни?— терĕ Тит Кузьмич, шăлне йĕрсе.

— Пырас. Ма пырас мар. Манăн хуть те ăçта та ĕçлемелле. Мĕн хак хурăн уйăхне?

— Лайăх ĕçлесен хакĕшĕн ĕç тăмĕ. Выçă пулмăн, çăпатапа çӳремĕн...

Çапла эпĕ, хам шухăшламан çĕртен, Тит Кузьмичăн приказчикĕ пулса тăтăм. Калле яла таврăнасси пулмарĕ. Хулара пурăнма юлтăм.

## VI

Тепĕр кун ман çине кăвак халат, пуçа сăмсасăр картуз, урана çутă кунчаллă атă тăхăнтартрĕ хуçа.

— Пĕл, эпĕ сана хам лавккана шанса лартатăп. Ан хапсăн. Çыннăнне хапсăнакан хăйĕнне çухатнă, тет. Чее пул. Тĕнчере тĕрлĕ çын пур: пĕрисем лавккана тавар илме кĕреççĕ, теприсем — вăрлама пăхса çӳреççĕ,— тет мана Тит Кузьмич. Вăл мана, кашкăр çурисене сурăх тытма вĕрентнĕ пек, суту ĕçне вĕрентет.

— Ан хăра, Тит Кузьмич. Мана санăн пĕр пусу та кирлĕ мар,— тесе шантаратăп хуçана. Пĕр эрне хушши хуçапа иксĕмĕр сут турăмăр.

— Çын лавккана кĕрсен, вăл кам, мĕншĕн кĕнине пĕрре пăхса пĕлме вĕрен. Тавара виçнĕ чух, «походлăн» виçса пама тăрăш. Акă, пăх, çапла виçме вĕрен,—тесе япалана виçе чашки çине çӳлтен пăрахать те çавăнтах калле илет.

— Капла ĕнтĕ походлă мар, пĕр вунă мăскал кая виçĕнчĕ,— тетĕп эпĕ хуçана.

— Хе-хе-хе! Пĕлес пулать, кама мĕнле виçсе пама!— тесе кулать Тит.

«Мĕнле-ха ку капла? Хăй çыннăнне хапсăнма хушмасть. Тата çавăнтах тавар илекенсене тĕрлĕ майпа улталама вĕрентет»,— тесе шухăшлатăп.

Пĕр эрне хушшинче суту-илӳ ĕçĕпе паллашса çитрĕм. Хуçа вĕрентнине пурнăçа кĕртетĕп: çынсене пĕрре пăхсах кам иккенне паллатăп; тавара «походлă» виçсе паратăп. Чи начар таварсене «лайăх» тесе сутатăп. Хăш чухне «вăрă» ачасем пырса кĕреççĕ, эпĕ вĕсене йăпатса кăларса яратăп:

— Ме, тухса кай. Пурĕ-пĕр эсĕ ман лавккаран нимĕн те вăрлаяс çук,— тесе хăшне канфет, хăшне-пĕрне пĕр пус укçа паратăп.

Ачасем савăнса тухса каяççĕ:

— Вăт, Титăн ҫěнě приказчикě калама ҫук аван ача. Пырса кěрсен нихҫан та ахаль кăларса ямасть. Астăвăр, ун лавккине кěрсен нимěн те ан вăрлăр,— тесе пěрне-пěри ăс параҫҫě. Урамра курсан: Аван-и!..— тесе пуҫ таяҫҫě мана.

Эрне ěҫлерěм. Уйăх та тулчě. Часах ҫулталăк ҫитет. Эпě лайăх суту тунипе хуҫа тем пек савăнать. Ҫашни вырсарникун «на чай» парать.

— Санăн приказчик пит йăпăлти. Хăйěн ҫемҫе чěлхипе илес мар таварсене те илтерет. Пулать ҫын тěнчере,— тесе мухтаҫҫě мана хуҫан пěлекен ҫыннисем.

— Ачи пултарать,—савăнăҫлăн кулать хуҫа.

Чăнах та, Тит лавккине тавар илекенсем нумай пыраҫҫě. Юнашар лавккасене — сахал, ҫакна кура ытти хуҫасем мана хăйсем патне ěҫлеме куҫма илěртеҫҫě. Шалу укҫи ӳстерсе пама пулаҫҫě. Анчах эпě урăх хуҫа патне куҫма шухăшламастăп: «Пурě-пěр, хуть те хăш хуҫа патěнче те илекенсене улталас пулать. Вěсем пурте пěр тăван. Ан ултала — халех хуса кăлараҫҫě»,—тесе шухăшлатăп.

Пурнăҫсем епле лайăх пулсан та, хуҫапа арăмě пěрмаях, йытăпа кушак пек, харкашса пурăнаҫҫě. Хуҫа ялан ҫěрě-ҫěрěпе таҫта кайса ҫӳрет. Ҫутăлас чухне тин таврăнса выртать.

— Пěлетěп эпě сана, пěлетěп кěҫěр ăҫта ҫěр каҫнине. Эпě пěчěккě мар ěнтě. Улталаймăн мана,— тесе, кушак ами пек, мăкăртатать хуҫа арăмě Маргарита Платоновна.

— Ҫитě! Ан лăкăртат. Кӳпче ыйăхна. Санран ыйтса ҫӳремеҫҫě!— тесе кăшкăрать хуҫа арăмě ҫине. Унтан нимěн чěнмесěр хăй вырăнě ҫине ҫывăрма выртать. Ирхине тăрать те каллех тухса каять.

— Ну, Витали, сана валли мěнле таварсем кирлě?— тесе ыйтать хуҫа кашни каҫ. Эпě ăна мěнле таварсем кирлине каласа паратăп. Вăл хăйěн блокночě ҫине ҫырса илет. Тепěр кунне ҫав таварсене ман пата лавккана турттарса пыраҫҫě.

Пěр ирхине ҫапла лавккана пăсăлнă колбаси турттарса пычěҫ. Илекенсем шăршласа пăхаҫҫě те пăрахса тухса каяҫҫě. Хуҫана пěлтертěм.

— Шуйттан колбасникě! Куҫ умěнче улталарě. Сутнă чух лайăххине кăтартрě. Ҫайран ав, мěн тиесе янă! Ну, юрě. Уншăн эпě те ăна манмăп-ха... Хăҫан та пулсан лектерěп. Ыран лайăххине илсе килěҫ. Хутăштарса яр. Асту,



Чувашская Республиканская библиотека им. Н. Горького
4842

пĕл вара кама сутмаллине. Хуларисене мар, ялтан килекенсене чых. Вĕсем шăрша пит пĕлсех каймаççĕ. Лайăххине кăтарт та, шăршлине виççе чĕркесе пар. Хута ан шелле,—тесе вĕрентет мана хуçа.

— Ăна, кама мĕнлине виççе пама пĕлетпĕр ĕнтĕ. Хуларисен те пырĕсенех ларса каймĕ. Колбаса урăххисен çук. Пирĕн лавккара çеç,— тетĕп хуçана лăплантарса.

— Ну, çывăрма вырт, Витали. Ыран лавккана пур лавккасенчен те иртерех уç. Ир тăнă çерçи тутă пулать, тет,— терĕ те тумланса тухса кайрĕ хуçа.

— Каллех çутăличчен çӳре ĕнтĕ... Çынсене пур, вăрçа илеççĕ. Вăл унта та юрăхсăр. Вăрçа кайнă пулсан хуть, куçăм курмĕччĕ, хăлхам илтмĕччĕ. Куçа кĕретех вĕт урăххисем патне кайса çӳрет,— ятлаçса юлчĕ хуçа арăмĕ. Унтан вырăнĕ çине йăванса кайрĕ те хăй çӳçне хăй çăлса йĕре пуçларĕ. Хăш чухне вăл çиллине ниçта хураймасăр, çийĕнчи кĕпине çуркаласа пĕтерет, çаппа-çарамас тăрса юлать.

Эпĕ, хуçа арăмĕн тирпейсĕр ӳчĕ çине пăхма именсе, кухньăна, хам вырăн çине тухса выртатăп. Вывтнă май Сахрун пичче аса килет: мĕскĕн, урисем ыратаканскер, мĕнле утса çӳрет-ши? — тесе шеллетĕп. Ыйхă килмест. Аптранипе «Иван Петрович» ятлă кĕнеке вулама пуçларăм. Пĕр пуçланăскере вĕçне çитиччен вулас килчĕ. Вуласа тухрăм та аяккалла сирпĕтсе ятăм. Ĕненес килмест. Патша чухăн çын ывăлне мĕнле хăйĕн савăк хĕрне качча патăр? Суя япала, тесе шутлатăп. Çав вăхăтра алăка шаккани илтĕнчĕ.

— Кам унта?— ыйтрăм.

— Эпĕ. Уç, Витали,— тесе чĕнчĕ хуçа.

Тăрса алăк уçрăм. Хуçа ĕçкеленĕ. Калле-малле тайкаланса пырса кĕчĕ. Ман кровать хĕрне ларчĕ:

— Витали, юрататăп эпĕ сана. Эсĕ ман патран урăх... ниçта та ан кай. Пирĕн ача-пăча çук. Ман ывăл пул. Кирлĕ пулсан, эпĕ хамăн мĕнпур мула сан çине çыртаратăп. Акă, тупата туршăн!— чăнласах сăхсăхать хуçа. Хăйĕнчен тӳсмелле мар эрех шăрши çапать. Мăнтăрскер вăкăр пек машлатса сывлать.

Эпĕ хуçа мана мĕншĕн юратнине хам пĕлетĕп: лайăх ĕçленĕшĕн, нумай тупăш панăшăн. Çакăнтан кăшт начартарах ĕçле, тупăш сахалтарах пар, вăл мана ыранах хуса кăларса ярать. «Ман ывăл пул» тесе суйса çеç ка-

лать вăл. Çук, мана унăн мулĕ кирлĕ мар. Эпĕ нихăçан та унăн ывăлĕ пулмастăп. Пулас та çук.

— Витали, эсĕ пĕлетни, эпĕ Маргарита инкӳне юратмастăп. Манăн урăх пур. Кĕçĕр ун патĕнче хăнара пултăм. Асту, инкӳне ан кала эпĕ ăçта пулнине. Ме пилĕк тенкĕ,— тесе кĕсйинчен пилĕк тенкĕлĕх хут укçа кăларса пачĕ мана. Эпĕ алла тытмарăм, вара укçине минтер çине хучĕ.

Эпĕ нимĕн чĕнмесĕр выртатăп. Ман хуçан ӳсĕр сăнне курас килмест. Вăл çав тери усал та харсăр çын. Тем вăхăт, мана çывăрма кансĕрлесе, хăй тĕллĕн калаçса ларчĕ. Çутăла пуçларĕ. Тен татах ларатчĕ пуль, арăмĕ тухса курницăна илсе кĕчĕ. Вăрахчен тавлашрĕç. Арăмĕ темиçе хутчен хаяр сасăпа çухăрнă хыççăн тин лăпланчĕç.

## VII

Ирхине лавккана уçсанах, пĕр илемлĕ, çамрăк хĕрача пырса кĕчĕ.

— Ме, колбасăна, ху çи! Ман укçана калле тавăрса пар! — терĕ ман ума колбаса татăкне пăрахса.

Эпĕ ним тума пĕлмесĕр, кăвакарнă колбаса татăкĕ çине пăхса тăратăп.

— Мĕн туса тăратăн тата? Укçана тавăрса пар тенĕ сана! Колбасăна ху çи, — тесе хĕстерет мана хĕрача.

— Эпир сутнă тавара калле илместпĕр. Укçана та калле тавăрса памастпăр. Хуçа хушмасть, — тетĕп хĕрачана хирĕç.

Хĕрача хурланнипе куçĕсене аллипе хупларĕ, панулми пек чăмăр питçăмартисем тăрăх шăпăртатса куççуль юхса анчĕ.

— Эпĕ, юлашки укçана пуçтарса, чирлĕ анне валли илнĕччĕ. Çиме юрăхсăр, — ĕсĕклесе йĕре пуçларĕ хĕрача.

Хĕрача çине пăхрăм та, хамăн та кăмăл хуçăлчĕ. Çав тери шел пек вăл мана. Укçана калле тавăрса парас тесе тăраттăм. Çав вăхăтра хуçа пырса кĕчĕ. Хĕрачана укçине тавăрса пама ĕлкĕреймерĕм.

— Тит Кузьмич! Санăн приказчик мана çĕрнĕ колбаса виççе парса янă. Укçана тавăрса пар тетĕп. Памасть, — терĕ хĕрача, куççульпе йĕпеннĕ куçĕсене аллипе шăлса типĕтсе. Вăл хуçа пулăшĕ терĕ пулас. Анчах йăнăшрĕ.

— Тавар илнĕ вăхăтра куçусем пулнă пуль вĕт санăн? Пăхса илеççĕ ăна. Халĕ кам пĕлет сана, эсĕ те пирĕн лавккаран илнĕ тавара, те урăх çĕртен илнине йатса килнĕ? Тухса кай лавккаран! Тавар илекенсене ан кансĕрле! — Хĕрачана аллинчен тытса лавккаран çавăтса кăларса ячĕ хуçа.

— Шалчу тултăр! — тесе кăшкăрчĕ хĕрача лавкка умĕнче.

— Айта, ут килнелле. Шăши ылханни кушака ним те мар, — тесе хĕрача еннелле аллипе сулчĕ хуçа.

Эпĕ ним тума пĕлмесĕр хĕрача çине хĕрхенсе пăхса юлтăм. Хĕрача сăмахĕсем: «Эпĕ, юлашки укçана пуçтарса, чирлĕ аннене валли илнĕччĕ» — тенисем ман чĕрене йĕппе чикнĕ пек ыраттараççĕ. Унăн хурлăхлă сасси ман хăлхасенче янăраса тăрать: «Намăс... Хуçана пуйтарасшăн, хам пек чухăнсене улталатăп... Çук, кирлĕ мар ку ĕç. Пăрахатăп. Луччĕ урăх ĕçе каяс», тесе шухăшлатăп.

— Витали, пирĕн ĕç тата вăйлăланать. Куратни, ав, хамăра хирĕç магазина. Упăшкине вăрçăра вĕлернĕ. Арăмĕ пĕччен пултараймасть. Таварне пĕтĕмĕшле сутать. Илес тетĕп. Каçхине эпĕ унпа калаçса татăлтăм. Задатка та патăм. Паян хут çеç тумалла, — тет хуçа савăнăçлăн.

Ман хуçа каланине илтес килмест. Çилĕ тулса çитрĕ. Шăршлă колбасипе тултарнă ещĕке урапа тапса йăвантарса ятăм:

— Тит Кузьмич, малашне эпĕ сан патăнта ĕçлеместĕп. Çитĕ, çулталăк пурăнтăм. Малашне тӳсме çук, — терĕм те лавккаран тухса кайрăм.

Хуçа, сăмах чĕнме пĕлмесĕр, куçĕсене чарса пăхса тăрса юлчĕ ман çине:

— А, расчет илмесĕрех-им? — тесе кăшкăрчĕ хыçалтан.

— Кирлĕ мар! — тесе хыçалалла алла султăм.

## VIII

Эпĕ урама тухсан, хайхи хĕрачана тупса, колбаси укçине калле тавăрса парас тесе, тахçанччен шырарăм. Анчах тупаймарăм. Урампа иртсе çӳрекен çынсем ман çине тинкерсе пăхаççĕ пек: «Ав, Тит приказчикĕ пырать. Ултавçă. Шăршлă колбаси сутакан», — тесе каланăн туйăнать. Эпĕ, çынсем çине пăхмасăр, пуçа чиксе утатăп. Аслă урамран пăрăнса, пĕр тăвăр тăкăрлăка кĕрсе кай-

рӑм. Кунта та ҫынсем урлӑ-пирлӗ ҫӳреҫҫӗ. Эпӗ ҫынсенчен пытанасшӑн. Вӗсем ялан ман умра пӑтранаҫҫӗ.

Вӑл кун эпӗ ниҫта вырӑн тупмасӑр хула тӑрӑх ҫапкаланса ҫӳресе ирттертӗм.

Ҫурхи ҫил лӑпкӑн вӑшӑлтатса вӗрет. Вӑл юлашки юра ирӗлтерсе пӗтерет. Хӗвел те анчӗ. Тěттӗм пула пуҫларӗ: «Кӗҫӗрлӗхе станцӑна кайса ҫӗр каҫас. Ыран мӗн тумаллине куҫ курӗ» шухӑшпа чугун ҫул тӑрӑх утса пыратӑп. Пӗр сасӑ шик! шӑхӑрчӗ:

— Ваҫка! — терӗ те вӑл мана хуса ҫитрӗ.

Пӑхатӑп, хам пек ҫамрӑк ача:

— А-а-а... Эпӗ Ваҫка тесе... Тит приказчикӗ! Аван-и! Мӗн, хуҫу хуса кӑларса ячӗ-им? Ҫапла вӑл пуянсем: ырӑ чухне ҫеҫ ӗҫлеттереҫҫӗ. Кӑшт йӑнӑшрӑн — тапса ҫеҫ кӑларса яраҫҫӗ. Вара хуть те ӑҫта кай, — терӗ вӑл, манпа юнашар утса.

Эпӗ те ӑна палларӑм. Эпӗ хулана пирвайхи хут килсен тӗл пулнӑ катӑк шӑллӑ ача пулчӗ вӑл.

— Хуҫа мар мана, эпӗ хам тарӑхнипе тухса кайрӑм, — тесе пӗлтертӗм.

— Ҫӗр каҫма хваттер ҫуктӑр-ха сан?

— Ҫук. Станцӑна кайса ҫӗр каҫас тетӗп.

— Айта, хамӑр пата. Пирӗн хваттер пысӑк та ӑшӑ, — тесе йӑпатать мана катӑк шӑл.

— Инҫе-и?

— Мӗн инҫи. Ак, халех ҫитетпӗр.

Эпӗ катӑк шӑлпа вӗсен хваттерне кайма килӗшрӗм. Вӑл мана хула вӗҫӗнчи пӗр-икӗ хутлӑ, юхӑнса кайнӑ чул ҫурт патне ертсе пычӗ.

— Акӑ, ҫитрӗмӗр. Кунта урӑх никам та пурӑнмасть. Эпир, тӑлӑх ачасем ҫеҫ, аялти хутӗнче «хваттер» йышӑннӑ. Айта, кӗр ман хыҫран, — терӗ катӑк шӑл. Хӑй ҫавӑнтах аялалла анса курӑнми пулчӗ.

Эпӗ ун хыҫӗнчен кӗме хӑраса тӑратӑп.

— Ну, мӗн хытса тӑратӑн тата? Айта, ан ман хыҫран. Асту, ӳксе ан суранлан. Тěттӗм кунта. Ним те курӑнмасть,— тесе кӑшкӑрать катӑк шӑл аялтан.

Эпӗ шиклене-шиклене аялалла ана пуҫларӑм. Тěттӗм шӑтӑк тӗпне анса ҫитсен, алӑк уҫӑлчӗ. Шалта хӑй ҫути курӑнчӗ. Ача-пӑча сассисем янӑраса кайрӗҫ.

— Ну, кӗр хӑвӑртрах, унсӑрӑн сивӗ кӗрет, — тесе васкатать катӑк шӑл.

Эпĕ ун-кун пăхкаласа кĕтĕм. Куратăп: подвалта туллиех ача-пăча. Арçын ачасем, хĕрачасем те пур. Пилĕкултă çулхинчен пуçласа вунçичче-вунсаккăра çитнисем те курăнаççĕ. Сак тавраш̆ çук. Урай тулли улăм, хут татăкĕсем, тĕрлĕ çĕтĕк-çурăксем йăванса выртаççĕ. Чĕрĕ сывлăш, йывăр шăршă сăмсана çурать. Урай варринчи тавар арчи çинче ăвăс çурта тĕпĕ аран-аран йăлкăшса çунать. Ун умĕнче пĕр шурă сухаллă ватă старик чĕлĕм туртса ларать.

— Çĕнĕ юлташ тупса килтĕн-им? — тесе ыйтрĕ шурă сухал катăк шăлтан.

— Ниçта выртма çук та, хваттере илсе килтĕм, — тесе пĕлтерчĕ катăк шăл.

— Аван. Çемье ӳсет, — терĕ сухал.

— Пурте килсе пĕтнĕ-и, мучи? — ыйтрĕ катăк шăл.

— Пурте. Сана çеç кĕтсе лараттăм, — терĕ сухал.

— Ку мучи те тăлăх. Ывăлĕ пулнă. Ăна вăрçăра вĕлернĕ. Кинĕ хуса кăларса янă та, пирĕн пата çитсе лекрĕ те пурăнать. Тăрантаратпăр, — терĕ катăк шăл.

— Хуçапа кин вĕсем пĕрех, ачамсем. Килĕштерейменрен тапса çеç кăларса сирпĕтеççĕ, — терĕ сухалли ассăн сывласа.

— Ну, ачасем, çывăрăр! — терĕ катăк шăл пурне те илтмелле.

Ун сассине илтсен, шавлакан ачасем шăп пулчĕç. Ăçта çитнĕ унта чĕрĕп пек хутлана-хутлана выртрĕç.

Эпĕ ăна кайран тин пĕлтĕм: катăк шăл çав тăлăхтуратсен атаманĕ пулнă иккен.

— Эсĕ мана вăрă тесе шутлатăн пуль? Эпĕ та сан пекех пĕр хуçа патĕнче ĕçлесе пурăнаттăм. Вĕсем пурте ултавçăсем. Ĕçлесен-ĕçлесен тӳсеймерĕм, тухса тартăм. Халĕ акă, куратăн: епле пурăнатăп. Çăмăл пурнăç. Ĕçлес те килмест. Хырăм тăрантмалăх çăкăр тупăнать, — тесе пăшăлтатать манпа юнашар выртакан атаман.

Кунĕпе хула тăрăх татăк çăкăр шыраса супнă атаман часах çывăрса кайрĕ. Эпĕ çĕрĕпе куç хупмасăр выртрăм: «Вăт епле час пурнăç улшăнать. Ĕнер çеç лавккара çынсене улталаса тавар сутаттăм. Ак кĕçĕр тăлăх-турат ачасен хушшинче выртатăп. Пурнăç... Унта та, кунта та çынсем пурăнаççĕ. Пĕрисем мамăк тӳшек çинче çывăраççĕ. Теприсем — хытă урайĕнче»,— тесе шухăшлатăп.

Çурта тĕпĕ çунса пĕтрĕ. Шурă сухаллă старик те арча

çумне хутланса выртрĕ. Подвалра пăчă та тĕттĕм. Йĕкехӳресем чăйăлтатса чупса çӳреççĕ. Ачасем тĕлĕкĕсенче ашшĕ-амăшĕсене кураççĕ пулас:

— Мама!.. Мама!..

— Папа!..

— Çăкăр пар!.. — тесе кăшкăра-кăшкăра яраççĕ. Анчах вĕсен сассисене ашшĕсем те, амăшĕсем те илтмеççĕ. Çăкăр та памаççĕ.

Вăл çĕр маншăн çулталăк тăршшех туйăнчĕ. Епле вăрăм пулсан та çапах çутăлчĕ. Çĕмрĕк чӳрече витĕр хĕвел кĕрсен, ачасем ыйхисенчен вăранчĕç. Пĕрерĕн, икшерĕн тухса кайса пĕтрĕç. Пĕр шурă сухаллă старик çеç тăрса юлчĕ.

— Ачам, урăх тĕлте хваттер пулмасан, каçпа каллех кунта кил çывăрма, — тесе ăсатрĕ шурă сухал мана.

— Тавтапуç, мучи, — терĕм старик кăмăлĕшĕн.

Урама тухрăм. Ниçталла кайма пĕлмесĕр тăратăп. Манран инçе мар пĕр маттур йĕкĕт хăвăрт утса пырать. Паллană çын пек туйăнать. Аса илтĕм: «Ара, студент! Қаççим вĕт ку» ... шухăшларăм. Лайăхрах паллас тесе, тавраран кайса умне пырса тухрăм. Çавă, Қаççим.

— Аван-и, Қаççим пичче! — тесе кăшкăртăм.

Вăл чарăнчĕ. Ман çине тинкерсе пăхать:

— Қам пултăн эсĕ? Паллаймастăп эпĕ сана...

— Витали эпĕ. Сахрун пиччене манман пуль вĕт?

— А-а-а... Витя, Витали! Ăçтан, мĕнле çитсе лекрĕн эсĕ кунта?

Эпĕ ăна хам пурнăç çинчен кĕскен каласа патăм.

— Айта, килте калаçăпăр. Унсăрăн мана кунта жандармсем асăрхама пултараççĕ, — терĕ Қаççим, ун-кун пăхса.

Унтан эпир хула вĕçĕнчи монастырь карти çумĕпе утрăмăр.

## IX

Монастырь хыçĕнче пĕчĕк çеç, виçĕ чӳречеллĕ пӳрт ларать. Ун патне тĕрлĕ енчен темиçе сукмак пырать. Сукмаксемпе çынсем нумай çӳреççĕ пулас, шăпăрпа шăлса тасатнă пек, тап-такăр, пĕр çӳп татăкĕ те çук...

— Ман аннепе йăмăкăм Марфуша çакăнта пурăнма тивĕçлĕ, — тесе пӳрт патне утса пычĕ Қаççим. Унтан алăкне майĕпен уçрĕ.

— Қаççим, ачам, çитрĕн-им! — савăнăçлăн пăшăлтатса, ыталаса тытрĕ ăна пĕр вăтам çулхи илемлĕ хĕрарăм.

— Анне! — терĕ хуллен Қаççим.

Эх, епле ырă та ăшă вăл — анне! Эпĕ те ыталăттăм та, манăн аннем çук.

— Ачам, халĕ çеç пĕтĕм çурта ухтарса тухса кайрĕç. Эсĕ каторгăран тарнине пĕлеççĕ. Ывăлу килне таврăнсанах жандармсен управленине пырса пĕлтер тесе, манран алă пустарса çыру илчĕç, — пăшăлтатса пĕлтерчĕ амăшĕ.

— Вăл йытăсен ĕçĕ çав. Вăрах юлмарĕ ĕнтĕ, ĕнсисем час хуçăлĕç, — терĕ Қаççим çиленсе.

Унтан вĕсем амăшĕпе юнашар ларчĕç.

— Хăçан çитĕ вăл вăхăт? Ку вăрçă пĕтĕмпех халăха юхăнтарса çитерчĕ. Вилĕм çине вилĕм. Уксах-чăлах, тăлăх-турат мĕн чухлĕ, — терĕ амăшĕ, тарăн сывласа.

— Ан кулян, анне... Революци пуçланатех! Унсăрăн юнлă патша вăрçине чарма çук. Граждан вăрçи çеç, вăл вăрçа тĕп туса, халăха ирĕклĕх пама пултарать, — терĕ Қаççим хĕрсе кайса.

— Эсĕ каланă пек пулсан, питĕ те аванччĕ те-ха, ачам, — терĕ амăшĕ.

— Эпĕ каланă пек мар, анне, пирĕн большевикла парти çавна кĕтет, — терĕ Қаççим амăшне шантарса.

— Ах, хĕпĕртенипе эпĕ асăрхаман та. Ирт, ачам, тĕпелелле, ма алăк патĕнче тăратăн? Қаççим, вăл санăн юлташу пулĕ? — терĕ амăшĕ, эпĕ пуррине асăрхаса.

— Сахрун тимĕрçе астăватăн пулĕ?

— А-а-а... Витали... Çапла пысăк ÿссе кайнă-и ĕнтĕ эсĕ? Пирĕн Марфушăпа пĕр çулта вĕт вĕсем. Вунпиллĕк тултараççĕ, — терĕ амăшĕ савăнăçлăн.

Эпĕ тĕпелелле иртсе лартăм. Қаççим каторгăра пурăнни çинчен калама пуçларĕ. Амăшĕ итлет. Çав вăхăтра пĕр çамрăк хĕрача пырса кĕчĕ. Вăл пĕрре Қаççим çине, тепре ман çине тĕлĕнсе пăхать.

— Мĕн тĕлĕнсе тăратăн: пиччÿ вĕт вăл, паллаймастăн-им? — терĕ амăшĕ.

Эпĕ те палларăм ăна. Вăл хай эпĕ шăршлă колбаса сутнă хĕрача пулчĕ.

— Пичче! — аллисемпе хăлаçланса Қаççиме ыталаса илчĕ вăл.

— Марфуша! — Қаççим йăмăкне вĕçĕмсĕр чуптăвать. Мана вăл хĕрача умĕнче ларма çав тери намăс. Эпĕ

вĕт ăна улталаса, шăршлă колбаса чĕркесе парса янă. Мел пулсан çĕр айне анса кайăттăм. Эпĕ вăтанса шухăша кайса ларатăп. Қаççим эпĕ куляннине сисрĕ:

— Ну, Витали, ан хуйхăр. Малашне ĕнтĕ эсĕ те ĕçхалăхĕшĕн усăллă ĕçсем тума пуçлăн. Вăл тăшмансем пĕр сана çеç мар, пĕтĕм тĕнчене улталаса, хăйсен аллисенче тытса, ĕçлеттерсе пурăнаççĕ, — терĕ мана ачашласа.

— Марфуша, ме, ил колбаса укçине. Анчах эпĕ айăпла мар уншăн. Эпĕ вĕт хуçа хушнипе сутнă. Ӳлĕмрен эпĕ выçă çӳресен те вăл ĕçе нихăçан çыхланассăм çук, — терĕм кĕсъерен пĕр тенкĕлĕх хут укçа кăларса парса.

Марфуша ман куçран шăтарас пек пăхса илчĕ те пуçне пăркаларĕ:

— Çук, кирлĕ мар. Ахалех ăнланатăп эпĕ сана... Чик укçуна, малашне кирлĕ пулĕ, — терĕ.

Эпĕ Марфуша ырă кăмăлне курсан чăтса лараймарăм. Ирĕксĕрех питçăмарти тăрăх куççуль юхса анчĕ.

Марфуша мана йăпатса лăплантарать:

— Ну, Витали, пĕчĕк ача мар ĕнтĕ эсĕ... Сана кура манăн та куççуль тухать...

Қăшт вăхăт иртсен манахла тумланнă пĕр çамрăк çын пырса кĕчĕ.

— А-а-а... Қаççим юлташ та таврăнса çитнĕ. Аван çӳрерĕн-и!— Савăнăçлăн ыталанса Қаççимпа чуптурĕç.

— Қаторга пурнăçĕ, пĕлетĕн мĕнлине...

— Эпир кунта 1-мĕш май кунне хатĕрленетпĕр, — тесе пĕлтерчĕ хайхи çамрăк çын.

— Сыхлаççĕ пулĕ?

— Йытăсем пекех, хыçран шăршласа çӳреççĕ. Куратăн, манах пулса çӳретĕп. Қапла паллаймаççĕ. Вĕсем чее. Пирĕн вĕсенчен виçĕ хут чеерех пулас пулать. Çавăнпа вĕт эпир — большевиксем.

Қаççимпа çамрăк çын вăрахчен калаçса ларчĕç. Эпĕ вĕсен сăмахĕсене нимĕн те ăнланмастăп. Вĕсем пĕтĕмпех эпĕ ăнланмалла мар сăмахсемпе калаçаççĕ. Вĕсен шухăшĕсем те урăх. Çĕнĕ...

— 1-мĕш май листовкисене, пуринчен ытла, казармăра пурăнакан салтаксемпе чугун çул çинче ĕçлекен рабочисем хушшинче салатма тăрăшмалла, кăçалхи демонстрацинче салтаксемпе рабочисем урама тухма тивĕçлĕ, — терĕ Қаççим.

Унтан вĕсем çын илтмелле мар пăшăлтатса çеç калаçа

пуçларĕç. Эпĕ тĕлĕнсе пăхса ларатăп. Мĕншĕн-ха капла хăрана пек çеç калаçаççĕ. Ăнланмалла мар.

Эпĕ салху ларнине кура, Марфуша манпа калаçа пуçларĕ:

— Витали, эсĕ çырăва пĕлетни? — тесе ыйтрĕ вăл манран.

— Пăртакçă пĕлетĕп. Тăватă хĕл вĕреннĕ. Анчах пĕтерме памарĕç. Пуян ывăлĕсем шкултан мăшкăлласа кăларса ячĕç. Учителĕ те вĕсен майлах пулчĕ, — тесе пĕлтертĕм.

— Эсĕ мĕнле кĕнекесем вуланă?

— «Иван царевич», «Бова Королевич», «Еруслан Лазарич» тата темлисене те. Нумай халап пĕлетĕп эпĕ. Çав кĕнекесем çине çырнисене пăхмасăрх каласа пама пултаратăп...

— Халап кĕнекисем мĕскер вĕсем? Ак эсĕ «Степан Разин» çинчен çырнă кĕнекене вуласа пăхни?

— Çук, вуламан.

— Вăл кĕнеке ĕлĕкхи çинчен. Атăл тăрăхĕнче хăйĕн çарĕпе патшасемпе улпутсене хирĕç тăрса çапăçнă çын çинчен çырнă вăл кĕнекене. Пит аван кĕнеке. Вуланăçемĕн вулас килет. Çав Степан Разин атаман пек паттăр пулас килет...

Эпĕ Марфуша калаçнинчен тĕлĕнетĕп. Вăл хĕрача пулсан та манран çĕр хут ытла ăслă. Нумай кĕнекесем вуланă. Эпĕ мĕн? Халап кĕнекисенчен пуçне урăх ним те вуламан. Пĕлместĕп...

Çурхи сулхăн каç тĕттĕмленчĕ. Лампа çутас вăхăт çитрĕ. Анчах темшĕн çутмаççĕ. Каççимпа çав çамрăк çын тата Марфуша амăшĕ пĕр чарăнмасăр калаçаççĕ. Такама кĕтеççĕ. Час-часах чӳречерен пăхаççĕ.

— Темĕскер тытăнса тăчĕ, килеймерĕ-ха, — тет манахла тумланнă çын.

Эпир Марфушăпа часах паллашрăмăр. Пĕр тăван ачисем пек пулса тăтăмăр. Вăл мана пĕрех калаçтарать. Эпĕ мĕн пĕлнĕ таран каласа паратăп. Вăл итлет.

Чылай вăхăт иртсен тепĕр çын пырса кĕчĕ. Ун çинче кивĕрех вăрăм пальто. Аллисем, пичĕ-куçĕ сăрпа вараланса пĕтнĕ.

— Сыхланăр, юлташсем... Лешсем килсе кĕме пултараççĕ, — терĕ вăл тавралла пăхкаласа.

— Ан хăра, пирĕн тулта хурал пур. Ну, мĕнле, илсе килтĕн-и-ха? — тесе ыйтрĕ çамрăк çын.

— Хатӗр, илсе килтӗм, — терӗ пальтоллă çын. Унтан вăл пальто тӳмисене вӗçерчӗ те хӗвӗнчен темиçе тӗркӗм хута сӗтел çине кăларса хучӗ.

— Тавтапуç, юлташ! Пире пулăшнăшăн, — тесе алă тытрӗ хайхи çын.

Пальтоллă çын урăх тытăнса тăмарӗ. Пуç тайрӗ те тухса кайрӗ:

— Вăрах тăрсан, типографинче сисме пултараççӗ, — терӗ алăкран тухса.

— Юлташсем ӗçлеççӗ,— терӗ Қаççим шăппăнтарах.

— Ӗçлеççӗ те, пулăшаççӗ те, — çирӗплетрӗ манахла тумланни.

— Пирӗн пӗтӗм шанчăк рабочисем çинче. Вӗсем çеç революци пуçласа яма пултараççӗ, — терӗ Қаççим татса.

«Революци» сăмах маншăн ăнланмалла мар. Эпӗ ним пӗлмесӗр ларатăп. Иртнӗ каç та çывăрманнипе ыйхă пуса пуçларӗ. Ларнă çӗртех куçсем хупăнаççӗ: «Çывăрас килет» тесе каламашкăн Марфуша умӗнче вăтанатăп. Намăс пек туйăнать.

— Ну, Витали, кӗçӗртен пуçласа эсӗ ӗçе хутшăнатăн. Эпӗ сана ӗнтӗ чылай вăхăтранпа шанатăп. Çавăнпа сирӗн — Марфушăпа иксӗрӗн — çак листовкăсене хула тăрăх хӳмесем, хапхасем çумне çыпăçтарса тухмалла. Анчах астăвăр, жандармсен аллисене çитсе ан лекӗр. Қӗçӗр вӗсем кашни кӗтесрех сыхлаççӗ,— терӗ Марфуша амăшӗ.

Манăн ыйхă вӗçрӗ. Қуçсене алăсемпе сăтăркаласа уçрăм.

— Эпӗ жандармсен куçӗ умне лекес çук, пирвайхи хут мар, вӗреннӗ. Анчах Витали мӗнле? — терӗ Марфуша.

— Ан хăра. Эпӗ те санран кая пулмăп, — терӗм хăюлланса çитсе. Çавăнтах листовкăсене хăшне хӗве, хăшне кӗсъене тултартăмăр та пӳртрен тухрăмăр.

— Пуринчен ытла салтаксем пурăнакан казармăсем таврашне, рабочисен баракӗсем çумне нумайрах çыпăçтарăр, — тесе юлчӗç виççӗшӗ те.

## X

Çуркуннехи тӗттӗм каç. Юр ирӗлсе пӗтнӗ пулсан та, хула урамӗсем типсе çитмен-ха. Ура айӗнчи пылчăкпа хутăш тислӗк чуста пек: лăч-лăч çăрăнать. Хулана икке уйăрса выртакан çырмара çурхи шыв кӗрлесе юхни илтӗнет. Қӗпер урлă çынсем каçса çӳрени шыв çутипе курăнать. Çумăр çумасть пулин те, çанталăка кăвак пӗлӗтсем

хупласа тăраççĕ. Тӳпере уйăх та, çăлтăрсем те курăнмаççĕ. Тĕттĕм çĕр айĕнчен хутран-ситрен полицейскисем шăхăртни илтĕнкелет. Хула лăпкă çывăрать. Фонарь çутнă урам кĕтессисенче хура мĕлкесем тăни курăнать.

— Витали, ав, куратни, хайхи хула йыттисем хурал тăраççĕ, — тесе кăтартать мана Марфуша.

— Куратăп.

— Эсĕ листовкăна çыпăçтариччен унталла-кунталла пăхкала. Никам та курăнмасть пулсан, çыпăçтар та, пăхса ан тăр, васкаса малалла ут, — тесе вĕрентет мана Марфуша.

— Юрĕ,— тетĕп. Хам çапах та шикленетĕп, анчах ун çинчен Марфушăна пĕлтересшĕн мар, хама хам паттăррăн тыткалатăп. Эпĕ шикленнине вăл пĕлсен намăс пек туйăнать. Эпĕ пирвайхи хут вĕт-ха революци ĕçне хутшăнатăп. Çăмăл ĕç мар — лекес пулсан е вилĕм, е тĕрме... Иккĕшĕнчен пĕри куç умĕнче. Анчах лекес килмест. Эпир иксĕмĕр те çамрăк-ха. Пирĕн пурнăç малта хĕвел пек ялтăртатса курăнать...

Акă, аслă урама тухрăмăр.

— Ну, Витали, эсĕ сылтăмалла, эпĕ сулахаялла каяр. Листовкăсене çыпăçтарса пĕтерсен, монастырь хӳми çумĕнче пĕрне-пĕри тĕл пулăпăр. Асту, эсĕ малтан çитсен мана кĕтсе тăр, эпĕ çитсен — сана кĕтĕп. Ҫиле пĕрле таврăнăпăр, — терĕ Марфуша.

— Юрĕ.— Эпĕ сылтăмалла, Марфуша сулахаялла уйрăлса кайрăмăр.

Хăрушă ĕç пулсан та, савăнăç. Урасем çĕре лекмеççĕ. Листовкăсене хапха, хӳме çумне çыпăçтаратăп та çавăрăнса тăрса вулатăп: «Юлташсем! Паян майăн 1-мĕш кунĕ. Рабочисем, салтаксем, пурте урама тухăр! Долой юнлă патша! Долой вилĕм вăрçи! Сывă пултăр революци!» Унтан тата малалла пĕрхĕнетĕп. Хыçран пылчăк анчах сирпĕнсе юлать.

Хам та сисмерĕм, ман ума, тимĕр таканлă аттисемпе тап-тап пусса, икĕ полицейски пырса та тухрĕç. Вĕсем, картана сурăх тытма кĕме хатĕрленнĕ кашкăрсем пек, унталла-кунталла пăхкалаççĕ. Пăшăл-пăшăл калаçаççĕ. Эпĕ хӳме çумне лăпчăнса лартăм. Мана курмасăр иртсе кайрĕç. Хӳме çумне çыпăçтарнă листовкăна курчĕç.

— А-а-а... Листовка! — хулăн сасăпа янрарĕ пĕри. Тепри çăварне шăхличине персе чиксе шăхăрта пуçларĕ. Шыври шапалла: лĕр! — тутарать.

Шăхличĕ сассине илтсен, тĕрлĕ енчен полицейскисем чупса пуçтарăнчĕç.

— Мĕн пулнă?

— Кам, ăçта? — пĕр-пĕринчен ыйтаççĕ.

— Акă, революциллĕ листовка! Халь çеç сыпăçтарса кайнă. Çак урамсене шырăр. Урамра кама курнă, пурне те тытса полици управленине леçĕр! — тесе приказ пачĕ пĕри.

Полицейскисем тĕрлĕ еннелле саланса пĕтрĕç. Кăшкăрашу пуçланчĕ:

— Ав пырать!

— Тытăр ăна!

— Тыт! — çухăраççĕ полицейскисем.

Эпĕ хӳмесем, хапхасем çуммипе йăпшăнса утрăм. Пăхап, пĕр кĕтесрен мана хирĕç полицейски пырса та тухрĕ. Тарма тăтăм. Вăл кĕске пăшалне туртса кăларчĕ те:

— Стой! Вырăнунтан ан хускал! Перетĕп! — тесе кăшкăрчĕ.

Эпĕ ирĕксĕрех чарăнтăм.

Полицейски ман пата утса пычĕ те:

— Айта, ут ман умран! — хушрĕ.

— Ăçта?

— Çитсен курăн!

— Мĕн тума эпĕ сире?..

— Ну, ну, ан калаçса тăр! Ут! — хăвалать мана. Кĕске пăшалĕн кĕпçине ман çинелле тĕлленĕ. Эпĕ ăна паллаа илтĕм. Вăл хăй мана Тит Кузьмича тупса паракан полицейски офицерĕ пулчĕ.

— Ваше благороди, эсир мана палламастăр пулас? — терĕм эпĕ йăпăлтатса.

Офицер ман çине электрически фонарьпе çутатса пăхрĕ. Палларĕ пулас:

— А-а-а... Тит Кузьмич приказчикĕ. Ăçта кайрăн? Мĕн туса çӳретĕн çĕр варринче?

Манăн суйма сăмах часах тупăнчĕ:

— Картла вылярăмăр та, банкĕ пысăк пуçтарăннипе час пĕтереймерĕмĕр. Çавăнпа кая юлса таврăнатăп, — терĕм, ӳсĕре персе, хам тайкаланатăп.

— Сирĕн, приказчиксен, карт шухăшĕ. Айта, уттар ху çулупа. Çитсен Тит Кузьмича салам кала, — терĕ те, мана хăварса, полицейскисем кăшкăрашнă май утрĕ.

Эпĕ, тепĕр урама тухса, юлашки листовкăсене çыпăç-



тарса пĕтеретĕп те, пĕр çурт хӳттине кĕрсе тăрса, полицейскисем мĕн хăтланнине пăхатăп. Манран инçе те мар:

— Стой! — кăшкăрчĕ пĕри.

Пăхатăп, пĕр полицейски хĕрарăма хăвалать: «Ара, ку Марфушăна тытасшăн вĕт»,— шухăшларăм. Мĕнле хăтарас? Вăрах шухăшласа тăма çук. Полицейски Марфушăна хуса çитет. Пăшалĕпе персе ячĕ.

— Стой! — кăшкăрать.

Эпĕ кивĕ хӳме çумĕнчен пĕр хăмине хăйпăтса илтĕм те полицейски хыçĕнчен:

— Стой! — Тыт, тыт! — кăшкăрса чупрăм.

Полицейски те кăшкăрса чупать. Пăшалĕпе кĕр те кĕр перет. Мана та хăй пекки тесе шутларĕ пулас. Эпĕ часах полицейскине хуса çитрĕм те сисиччен хăмапа аллинчен çапрăм. Çав вăхăтрах хăйăрлă тусан ывăçласа илтĕм те çаврăнса тăнă полицейскине куçĕнчен сапрăм. Унăн аллинчи револьверĕ аяккинелле сирпĕнчĕ. Эпĕ хăвăрт полицейскин револьверне ярса илтĕм те Марфуша патне чупрăм. Хуса çитрĕм. Вăл аран-аран уксахласа пырать.

— Марфуша, мĕн пулчĕ сана?

— Ай, сулахай ураран лектерчĕç, — терĕ Марфуша ыратнипе йынăшса.

Эпĕ Марфуша хулпуççи çине хурса йăтрăм та монастырь стени хыçне илсе кĕтĕм.

— Мĕнпе туртса çыхас суранна?

— Пуçри тутăрпа.

Марфушăн пуçĕнче тутри çук. Вăл полицейскинчен хăраса тарнипе пуçĕнчи тутăрĕ ӳксе юлнине те туйман. Шухăшласа тăма çук. Хăрах кĕпе çаннине татса илтĕм те Марфушăн суранлă урине туртса çыхрăм.

— Ну, каяр, хăвăртрах. Ҫилсе тухĕç тата тăшмансем, — терĕм те каллех Марфушăна йăтса утрăм. Анчах манăн кĕске пăшал пуррине Марфушăна каламарăм. Вăхăт çитиччен пытарса усрарăм.

Эпир, хула тăрăх листовкăсем çыпăçтарса, полицейскисемпе кĕрешсе çӳренипе сисмен те, тул çутăла пуçланă. Уяртнă. Шурăмпуç çăлтăрĕ хăпарать...

Марфушăсен пӳрчĕ патне çитрĕмĕр. Пăхатпăр — пӳрт алăкĕ яр уçă выртать. Япалисем вăрă-хурах çаратса тухса кайнă пек, ăçта çитнĕ унта сапаланса выртаççĕ. Пӳрт ăшĕ пушă, никам та çук. Мĕн пулнă? Ҫаççимпа амăшĕ

тата манахла тумланнӑ ҫын ӑҫта? Ӑҫта кайнӑ? Паллӑ мар.

Марфуша часах чухларӗ.

— Ҫурта ухтарнӑ. Тухса тарма ӗлкӗреймен пулсан, пиччепе анне тата Вахрушев юлташа тытса кайнӑ. Айта, эпир те кунтан хӑвӑртрах каяр. Унсӑрӑн вӗсем пире те тытма пултараҫҫӗ, — терӗ Марфуша хӑранӑ сасӑпа.

— Ӑҫта кайӑпӑр?

— Ӑҫта та пулсан каяр. Кунта юлма юрамасть.

Мана леш хам тӑлӑх ачасемпе ҫӗр каҫнӑ чул ҫурт аса килчӗ. Вӑл ҫурт кунтан инҫех мар, чугун ҫул урлӑ ҫеҫ каҫмалла. Вӑл тӑлӑхсем хуса кӑларас ҫук, йышӑнӗҫ пире.

Марфушӑна майлаштарса йӑтрӑм та чугун ҫул урлӑ чул ҫурт патнелле утрӑм. Марфуша суранлӑ ури ыратнипе шӑлне ҫыртса йынӑшать. Эпӗ ӑна пӗтӗм чӗререн хӗрхенетӗп. Анчах ним тума та ҫук.

## XI

Вӑл ир хӗвел юн тӗслӗ хӗрелсе тухрӗ, унӑн шевли кӑвак пӗлӗте те хӗретрӗ. Анчах нумаях ҫутатса тӑраймарӗ, хура, мӑнтӑр ҫумӑр пӗлӗчӗсем, пӗр ҫӗре пуҫтарӑнса, ҫутӑ хӗвеле хура чатӑр пек хупласа хучӗҫ.

Эпир Марфушӑпа ҫыпӑҫтарса тухнӑ листовкӑсем халӗ те хӳмесем, хапхасем ҫумӗсенче ҫыпҫӑнса тӑраҫҫӗ. Полицейскисем пуҫтарса ҫӳренӗ пулсан та — пӗтерейменӗ. «Долой вӑрҫӑ!» «Сывӑ пултӑр 1-мӗш май!» «Долой патша!» — тесе чӗнеҫҫӗ вӗсем.

Пӗр вӑхӑта хура пӗлӗт сирӗлчӗ. Хӗвел йӑл курӑнчӗ. Ҫав вӑхӑтра аслӑ урам тӑрӑх пӗр ушкӑн халӑх пырса тухрӗ; вӑл ушкӑнра пуринчен ытла рабочисем, фронтран аманса сывлӑхсӑрланса таврӑннӑ салтаксем, хӗрарӑмсем, ача-пӑчасем те нумай, вӗсем пуринчен малтан сиккелесе пыраҫҫӗ.

Ушкӑн халӑх тӗлӗнче хӗрлӗ ялав вӑркӑшать. Хут купӑс янӑрать, унпа пӗрле кӑшкӑрса юрлаҫҫӗ:

> Отречемся от старого мира,
> Отряхнем его прах с наших ног.
> . . . . . . . . . . .

Хӗрлӗ ялавлӑ ушкӑна тӗрлӗ енчен ҫынсем пырса хутшӑнаҫҫӗ. Урамра халӑх ушкӑнӗ ӳсет те ӳсет... Ӑҫтан тухмаҫҫӗ пуль вӑл ҫынсем? Ҫур сехет хушшинче урама халӑх лӑках тулчӗ. Ниҫта шӑнӑҫаймаҫҫӗ.

Вставай, подымайся, рабочий народ,
Вставай, на борьбу, люд голодный.
. . . . . . . . . .

Урама тухса тулнă халăха кура хуçасем, купецсем, суту-илÿ тăвакансем хăраса ÿкрĕç пулас; уçнă лавккасене хупа-хупа хучĕç; хапхасене питĕре-питĕре илчĕç. Анчах рабочисем урама вĕсен мулĕсене çаратма тухман. Вĕсем хăйсен вăйĕсене патшапа унăн йыттисене кăтартма тухнă. Выçлăхпа юнлă вăрçа пĕтерме хирĕç тухнă вĕсем. Вĕсене никам та хăваласа кăларман, хушман та, чĕнмен те; вĕсем хăйсен ирĕкĕпе урама тухнă. Вĕсем хăйсен ирĕкĕсемпе юрлаççĕ. Юрă вĕсен кăмăлĕсене çĕклентерет; хăйсен ĕмĕрхи тăшманĕсемпе кĕрешме чĕнет.

— Долой вăрçă!

— Долой выçлăх патша! — тесе кăшкăрни янăра-янăра каять.

Çанталăка хура çумăр пĕлĕчĕ пĕтĕмпех хупласа илчĕ. Çумăр пĕрĕхе пуçларĕ. Аслати авăтать, çиçĕм çиçет. Халăх çанталăк хăрушăланнăран хăрамасть. Саланмаççĕ.

— Ку вăл пĕр вăхăтлăха çеç. Халех иртсе каять. Унтан уяртать, — тесе калаçни илтĕнет. Сасартăк:

— Жандармсем! — тесе кăшкăрнă сасăсем янăраса кайрĕç. Унччен те пулмарĕ, пĕр тăвăр тăкăрлăкран лаша утланнă жандармсемпе полицейскисем лашасене ташлаттарса пырса та тухрĕç. Тÿрех тинĕс хумĕ пек явăнакан халăх ăшне пырса та кĕчĕç.

— Саланăр! — кăшкăраççĕ.

Вĕсем хĕçпăшалсăр халăха лашисемпе таптатма пикенчĕç. Хĕçĕсене аллисене тытнă, пăшалĕсемпе халăх çине тĕлленĕ. Халех касма-пеме хатĕр.

Халăх вĕсенчен хăрамасть. Саланма мар, пушшех пĕр çĕрелле чăмăртанать. Юланутлă жандармсене хăй хушшине кĕртесшĕн мар. Ниме пăхмасăр утаççĕ. Жандармсем çапах кĕреççĕ.

— Саланăр! — çухăраççĕ.

— Мăнтăр сыснасем! Кунта пирĕнпе, хĕçпăшалсăр çынсемпе çапăçиччен, ав, фронта кайăр та чунăр килеиччен çапăçăр!

— Долой патша йыттисем! — тесе кăшкăраççĕ.

Жандармсем халăха пăхăнтарасшăн, пĕрех лашисемпа таптаса халăх çине кĕреççĕ.

— Саланăр!.. Перетпĕр!

— Перĕр!.. Пурĕ-пĕр пĕр вилĕм! — халăх сасси янăрать.

Жандармсем хĕснипе, çынсем пĕрне-пĕри тĕрткеленипе урам тăвăрланса çитнĕ пек туйăнать. Кăшкăрашу пуçланса кайрĕ. Провокаторсем ĕçле пуçларĕç.

— Саланăр. Унсăр ĕç начар пулма пултарать, — тесе халăх хушшинче пăтратаççĕ.

Хăшĕ-пĕрисем хăраса ӳкрĕç пулас. Халăх хушшинчен тухса кая пуçларĕç.

— Юлташсем, ан саланăр! Хирĕç тăрăр! — кăшкăрнă сасăсем илтĕнеççĕ. Жандармсем пĕрех халăх çине кĕреççĕ.

— Юлташсем, утăр малалла! Вĕсем пире ним те тăваяс çук!

Çав вăхăтра жандармсем çине чул муклашкисем, кирпĕч катăкĕсем вăнлатса вĕçе пуçларĕç.

Хĕрлĕ ялав тытнă çын мала сиксе тухрĕ. Халăх ялавлă çын хыçĕнчен юласшăн мар, васкаса утать. Аçта пăхнă унта жандармсемпе полицейскисене лашисем çинчен сĕтĕре-сĕтĕре антарса хĕçпăшалĕсене турта-турта илеççĕ, хăйсене кӳпкеççĕ, çийĕсенчи тумтиррисене çуркаласа тăкаççĕ.

— Вĕлерĕр! — сасăсем илтĕнеççĕ. Хăшпĕр хăраса ӳкнĕ жандармсем халăх хушшинчен тухса тара пуçларĕç. Унччен те пулмарĕ, тепĕр ушкăн жандарм пырса çитрĕ. Вăл ушкăн халăх патне çывхарсанах:

— Пли! — хулăн сасă янăрарĕ. Çавăнтах пăшал сассисем пĕр вĕçĕмсĕр кĕрлерĕç.

Халăх ушкăнĕ пăтранса кайрĕ. Хĕрлĕ ялав тытса пыракан çын месерле çаврăнса ӳкрĕ, пичĕ çинче юн курăнчĕ; хăй ялавне пурĕ-пĕрех аллинчен пăрахмасть. Вăйĕ пĕтсе çитрĕ пулас, ялавĕ тайăла пуçларĕ, халех пылчăк çине ӳксе вараланассăн туйăнать. Çав вăхăтра халăх хушшинчен шинель тăхăннă пĕр çын сиксе тухрĕ те ялава çĕре ӳкме памарĕ, ăна вилекен çын аллинчен илсе, каллех халăх хушшине кĕрсе кайса курăнми пулчĕ.

Жандармсем татти-сыпписĕр переççĕ. Халăх пăтранать. Кам ăçталла пĕлет, çавăнталла тараççĕ. Хăшĕсем чупса пынă çĕртенех йăвана-йăвана ӳкеççĕ.

— Сыхланăр! — сасăсем илтĕнеççĕ.

Жандармсем пĕтĕмпех урса çитрĕç: пăшалпа переççĕ, таракансене хуса çитсе хĕçпе касаççĕ, лашисемпе таптатаççĕ...

Тепӗр пилӗк минутран халӑх саланса пӗтрӗ. Жандармсем лашисене ташлатса иртсе кайрӗҫ. Урамра ӑҫта пӑхнӑ унта ҫын виллисем, суранланнисем, арҫынсем, хӗрарӑмсем, ача-пӑчасем, каҫалӑк ҫинче вырса пӑрахнӑ кӗлтесем пек, выртса юлчӗҫ. Ӑҫта ҫитнӗ унта юн кӳллисем хӗрелсе выртаҫҫӗ.

Ҫурхи ҫумӑр шӑппӑн йӑсласа ҫӑвать, вӑл юн кӳллисене юхтарса шывпа хутӑштарать. Урамӑн икӗ енлӗ канавӗпе юнпа хутӑшнӑ ҫумӑр шывӗ шӑнкӑртатса юхса иртет.

Вӑл ҫулхи майӑн 1-мӗш кунӗ ҫапла пуҫланса, ҫапла пӗтрӗ. Ҫав кун эпӗ пирвайхи хут революци ҫулӑмӗ витӗр утса каҫрӑм. Вӑл ҫулӑм нихӑҫан та сӳнес ҫуккине ӑнланса илтӗм. Вӑл кун маншӑн ӗмӗр-ӗмӗр манми пулса юлчӗ. Ҫавӑнтан вара манӑн чӑн-чӑн пурнӑҫ пуҫланса кайрӗ. Вӑйлӑран та вӑйлӑ ялкӑшакан революци ҫулӑмӗ мана пӗрре пӗҫерчӗ, тепре ҫунатлантарчӗ, вилӗмрен хӑрами турӗ.

— Куртӑн-и, патша йыттисем ӗҫхалӑхне мӗнле пӑхӑнтарасшӑн... Ҫук, пӑхӑнтараймӗҫ. Революци ҫулӑмӗ вӗсене хӑйсене ҫунтарса ярӗ! — терӗ Марфуша.

Марфуша, хӗрача пулсан та, манран темиҫе хут ытларах хастарлӑ.

Вӑл мӗн пӗчӗкрен революци ҫулӑмӗпе ӑшӑнса ӳснӗ. Вӑл революцишӗн ҫуралнӑ хӗр...

## XII

Шырасан-шырасан, паллакан ҫынсенчен ыйтса, Каҫҫимпа амӑшӗ тата Вахрушев ӑҫтине пӗлтӗмӗр: вӗсене виҫҫӗшне те тӗрмене хупса лартнӑ. Ӗмӗрлӗхе Ҫӗпӗре — каторгӑна ӑсатмалла тенӗ хыпар ҫӳрет. Анчах хӑҫан ӑсатмалла, ӑна никам та пӗлмест.

Эпир те Марфушӑпа тӑлӑх ачасем пурӑнакан чул ҫуртра пытанса пурӑнатпӑр. Урама тухсан, хамӑра иккӗленнӗ пирки тытса чарасран хӑратпӑр. Ҫиме енчен аптрамастпӑр, хулара Марфушӑн пӗлекен ҫынсем нумай, вӗсем пире вӑрттӑн апат, укҫа параҫҫӗ.

Ҫапла пурӑнкаласа кун хыҫҫӑн кунсем иртеҫҫӗ. Ӑшӑ ҫу кунӗсем иртсе кайрӗҫ. 1917 ҫулхи сивӗ хӗл ҫитрӗ. Ӗҫхалӑхӗн пурнӑҫӗ куллен-кун начарланса пырать. Тырӑ хакӗ ӳсет. Укҫа йӳнелет. Суту-илӳ тӑвакансем хӑйсен лавккисенче тӗрлӗ таварсем сутми пулчӗҫ. Спичкӑн короб-

кине алӑ пуса сутаҫҫӗ. Краҫҫын вырӑнне авалхи пек хӑйӑ чӗртсе ҫунтараҫҫӗ. Тӑвар пачах ҫук. Тӑварсӑр ҫӑкӑр, яшка ҫиме вӗренчӗҫ.

Марфушӑн суранлӑ ури юсанса ҫитрӗ. Вӑл кашни кун пиччӗшӗпе амӑшӗ тата Вахрушев юлташ пурнӑҫӗсем ҫинчен пӗлсе тӑрать. Тӗрме тавраш не кайса ҫӳрет. Хӑҫан ӑсатасса сыхлать.

Пӗрре ҫапла Марфуша васкаса ҫитрӗ:

— Витали, паян пиччепе Вахрушев юлташа Ҫӗпӗре — каторгӑна ӑсатмалла. Мӗн тӑвар? Хӑтарма май ҫукши? — терӗ вӑл ман куҫран пӑхса.

— Мӗнле хӑтарӑпӑр? Вӗсене вӗт канвоирсем сыхлаҫҫӗ, — терӗм эпӗ.

Марфуша ман ҫине тепӗр хут пӑхса илчӗ те:

— Шухӑшласа та, тӑн ҫитмест. Анчах, мӗн те пулсан туса пӑхасчӗ. Тен, пулӑшӑпӑр,— терӗ мӗскӗннӗн.

Сасартӑк манӑн ӑса килчӗ:

— Марфуша, манӑн вӗт кӗске пӑшал пур. Вӑл пире пулӑшма пултарать, — терӗм.

— Ӑҫтан илтӗн?

— Хай хӑвна персе амантнӑ полицейскинне.

— Вӑл аван пулӗ. Ӑна хӑвпа ил, — терӗ Марфуша хӗпӗртесе.

Эпӗ пытарса усранӑ кӗске пӑшала вырӑнӗнчен илсе кӗсъене чикрӗм. «Акӑ паян унӑн кирлӗ вӑхӑчӗ ҫитрӗ» тесе шухӑшлатӑп.

Марфуша пуҫӗнчи тутӑрне карчӑкла куҫӗсем ҫинерех антарса ҫыхрӗ те:

— Айта каяр. Ӑсатма ӗлкӗрӗҫ тата. Курмасӑрах юлӑпӑр, — терӗ васкаса.

Чугун ҫул урлӑ каҫса, станци патнелле утатпӑр.

— Пиччепе Вахрушев юлташа хӑтарсан, мӗн чухлӗ савӑнӑҫ пулӗччӗ, — тесе утать Марфуша манпа юнашар.

Эпӗ кӗсъере выртакан кӗске пӑшала алӑпа тытса пӑхатӑп, вӑл сиввӗн алла лекет.

— Мӗн пулсан пулать. Хӑтарма тӑрӑшса пӑхӑпӑр. Ӗҫ тухмасан, тытса хупса лартӗҫ. Хӑрушӑ мар, — тетӗп эпӗ.

Марфуша ман ҫине шанать:

— Эпӗ «Амӑшӗ» тесе пӗрне ыталаса илӗп. Эсӗ ҫав вӑхӑтра конвоирсене тапӑн, — тесе вӗрентет мана Марфуша.

Тепӗр ҫирӗм хӑлаҫ утсан, пиртен инҫе мар, тӑватӑ ҫын пынине куртӑмӑр.

— Ав, пиччепе Вахрушев юлташа илсе килеççĕ, — терĕ Марфуша.

— Куратăп.

Каççимпе Вахрушев вăтаçĕртен юнашар утса пыраççĕ, вĕсен пуçĕсенче сăмсасăр картуз, çийĕсенче кăвак арестант халачĕ, урисенче кĕске кунчаллă атăсем. Икĕ конвоир: пĕри малтан, тепри хыçалтан пăшалĕсене хатĕр тытса пыраççĕ.

Станцăпа хула хушшинчи пушă вырăна тухсан, эпир Марфушăпа васкаса хуса çитрĕмĕр вĕсене.

— Çывăха ан килĕр! — тесе кăшкăрчĕ хыçалтан пыракан конвоир!

Каççимпе Вахрушев харăс пуçĕсене çĕклесе пăхрĕç. Пире палларĕç; вĕсен сăнĕсем çинче савăнăç палăрчĕ, тутисем йăл кулчĕç.

— Эпĕ унăн амăшĕ... Юлашки хут пĕрре чуптуса юлам ачама. Ирĕк парăр, тархасшăн, — терĕ Марфуша йăлăннă пек пулса.

— Çывăха ан кил! Перетĕп! — тесе кăшкăрать хыçалтан конвоир.

Марфуша йĕрем пек туса йăлăнать. Хăйĕн çамрăк сăнне кăтартасшăн мар, пуçĕнчи тутăрĕпе куççульне шăлам пек туса питне хуплать.

Эпĕ кĕсъери кĕске пăшала алла тытса хатĕрленĕ. Туртса кăлармалли анчах юлнă.

Малти конвоир, Марфуша «йĕнине» курсан, шеллерĕ пулас:

— Ан тив, юлашкинчен сывпуллашчăр. Амăшĕ вĕт, — терĕ чарăнса.

Хыçалти конвоир та килĕшрĕ:

— Ну, хăвăртрах апла пулсан. Начальниксем курсан, сирĕн пирки пире айăплĕç, — терĕ васкатса.

Марфуша конвоир сăмахне каласа пĕтериччен пиччĕшпе Вахрушев патне пĕрре сиксе çитрĕ те кĕсйинчен револьвер кăларса тыттарчĕ.

— Пăрах пăшална! Унсăрăн вилĕм сана! — тесе сăмахне сăртăнтарчĕ шăлĕ витĕр.

Эпĕ те, пăшала туртса кăларса, тепĕр конвоир умне пырса тăтăм:

— Пар пăшална! Халех перетĕп, — терĕм кăкăрĕнчен тĕллесе. Конвоирсен аллисенчи пăшалсене туртса илтĕмĕр. Вĕсем хăраса ӳкрĕç, сиксе чĕтреççĕ:

— Тархасшăн ан вĕлерĕр. Эпир вĕт çемьеллĕ. Ача-

пăчасем тăлăха юлаççĕ, — тесе йăлăнаççĕ. Пирĕм ума чĕркуçлене-чĕркуçлене ларчĕç.

— Пирĕншĕн сире вĕлерсе нимĕн усси те çук. Хывăр çийĕрти тумтирсене! — тесе хушрĕ Марфуша.

Конвоирсем тумтиррисене васкаса хывса пачĕç. Вĕсен тумтиррисене Каççимпа Вахрушев юлташсем тăхăнчĕç. Лешсене хăйсен арестант тумтиррисене пачĕç.

— Ну, халĕ ĕнтĕ юлăр пиртен. Астăвăр, эпир курăнми пулмасăр вырăнăрсенчен ан хускалăр! — тесе хăварчĕ Марфуша.

Виçĕ минутран хулари çуртсем хушшине кĕрсе кайса курăнми пултăмăр. Конвоирсем чавса лартнă юпасем пек вырăнĕсенчен хускалмасăр тăрса юлчĕç.

Тăлăх-турат ачасем пурăнакан чул çурт подвалне кĕрсен мĕн чухлĕ савăнăç пулчĕ. Ăна сăмахпа каласа та, перопа çырса та пĕтерес çук.

— Ну, Марфуша, Витали! Тавтапуç сире пире хăтăлма пулăшнăшăн! Эсир пире çеç мар, большевиксен партине пысăк пулăшу турăр.

Эпир Марфушăпа савăнăçлă. Халĕ тин эпĕ Вахрушев юлташа палларăм. Вăл хăй эпĕ пирвайхи хут хулана килсен пасарта курса калаçнă студентла тӳмланнă çын пулчĕ.

Астутарсан вăл та мана палларĕ:

— Эпĕ вĕт ун чухне сана хальхи пек чĕререн шанчăклă çын пуласса пĕлмен. Пĕлнĕ пулсан хам пата илсе кайса пурăнтарнă пулăттăм, — терĕ вăл мана ыталаса.

Çапла эпĕ революци çулăмĕ ăшне кĕрсе кайрăм. Революцие ертсе пыракан большевиксемпе туслашрăм. Вĕсем мана юратрĕç. Эпĕ вĕсемшĕн юрăхлă çын пулса тăтăм.

## XIII

Малашне эпир чул çурт подвалĕнче пурăнмарăмăр, Вахрушев юлташ патне хваттере куçрăмăр. Анчах эпир пĕрле нумай вăхăт пурăнаймарăмăр. Парти Комитечĕ Каççиме урăх хулана куçарчĕ. Вахрушев вĕри чирпе чирлесе ӳкрĕ. Вăрахах та вăхăт иртмерĕ, Марфушăн амăшĕ тĕрмере вилнĕ хыпар çитрĕ. Ку вара пирĕншĕн çав тери пысăк хуйхă пулчĕ. Ӳтне илсе хамăр тирпейлесе пытарасшăн тăрăшрăмăр, çук, памарĕç, тĕрмере пытарчĕç.

Пĕрре эпĕ кĕнеке вуласа ларатăп. Марфуша «Урал» ятлă хаçат илсе пырса кĕчĕ. Хăй нихçан та капла пулман, çав тери савăнăçлă.

— Мĕн пулнă сана? Аннӳ ӳтне тупрăн-им? — тесе ыйтрăм эп.

— Акă, ме, вуласа пăх. Революци пуçланнă. Патша çук!.. — терĕ вăл мана хаçатне парса.

Эпĕ вулатăп. Хаçатăн малти страницине çине шултра саспаллисемпе çапла çырнă: «Рабочисемпе салтаксем пĕрлешсе Николай патшана престолĕ çинчен сирпĕтнĕ. Власть Вăхăтлăх правительство аллине куçнă». Хам куçа хам ĕненместĕп. Тепĕр хут вулатăп. Чăнах çапла çырнă.

Вахрушев юлташ вĕри чирпе аташать.

— Долой патша! Долой вăрçă! Пролетари революцийĕ сывă пултăр! — тесе кăшкăрать.

— Вахрушев юлташ, патша çук ĕнтĕ. Революци пуçланнă, — тесе лăплантарать ăна Марфуша. Анчах йывăр чирленĕскер ним те ăнланаймасть. Çавах кăшкăра-кăшкăра ярать.

Пирвайхи кунсенчех хула урамĕсенче халăх кĕрлерĕ. Нумайăшĕ кăкăрĕсем çине хĕрлĕ лентăсем çакса çӳреççĕ. Ăçта пăхнă унта хĕрлĕ ялавсем вĕлкĕшеççĕ. Патша сăнĕсене урама кăлара-кăлара пăрахнă. Вĕсене монастырьти манахсем пуçтарса йăта-йăта кĕреççĕ; патшашăн куççуль юхтарса йĕреççĕ.

— Пĕтрĕмĕр, пĕтрĕмĕр, — куççульпе йĕпеннĕ куçĕсене шăлаççĕ. Пĕрре хĕвеланăçнелле, тепре хĕвелтухăçнелле пăхса сăхсăхаççĕ.

Темиçе ятлă революционерсем сике-сике тухрĕç: пĕрисем хăйсене «социал-революционер» теççĕ, теприсем «анархист», «меньшевик» теççĕ. Пурте вĕсем большевиксене кураймаççĕ.

— Большевиксем вĕсем — нимĕç шпионĕсем. Вăрçа пĕтерсе, Российăна Германие сутасшăн, — тесе темĕн тĕрлĕ суя хыпарсем сараççĕ.

— Учредительнăй собрани сывă пултăр! Урра! Урра! — кăшкăраççĕ.

Хăшĕсем хăйсем мĕншĕн кăшкăрнине те пĕлмеççĕ. Патшана престолĕ çинчен антарса сирпĕтнипе революци пулса пĕтрĕ, теççĕ пулас. Çавăнпа савăнаççĕ.

Кашни кунах урамсенче митингсем пулса иртеççĕ. Тĕрлĕ ораторсем тухса калаçаççĕ. Пĕрисем:

— Вăхăтлăх правительство сывă пултăр!

— Керенский сывă пултăр!
— Вăрçă — татăклă çĕнтериччен!
Теприсем вĕсене хирĕç тăрса кăшкăраççĕ:
— Долой вăрçă!
— Сывă пултăр революци!
— Пĕтĕм власть — Советсене!
Пĕр митингра эпĕ хамăр ялти староста ывăлне Воронов Яккăва хирĕç пултăм. Якку студентла тумланнă. Малтанах эпĕ ăна палламан. Вăл мана палларĕ:
— Малинкин! — тесе чĕнчĕ вăл.
— А-а-а, Якку! Эсĕ те хулара-им? — терĕм эпĕ.
Якку ман çине куç айĕпе пăхрĕ те:
— Эсĕ хăш парти майлă? — тесе ыйтрĕ.
— Эпĕ майлă мар, большевиксен партинче тăратăп, — терĕм кĕскен.
— Нимĕç шпионĕ. Российăна сутакан... — терĕ Якку, йĕрĕнчĕклĕн пăхса.
— Эпĕ сана ахалех пĕлетĕп. Эсĕ — «социал-революционер». Революцие сутакан! — терĕм хирĕç. Урăх тавлашса тăмарăм, пăрăнса кайрăм.
Якку ман çине усал куçĕсемпе пăхса тăрсан пĕлчĕ пулас:
— Большевик? — тесе лах-лах кулчĕ.

## XIV

Сивĕ хĕл кунĕсем иртеççĕ. Çанталăк çуркунне енне сулăнать. Кунсем вăрăмланаççĕ, çĕрсем кĕскелеççĕ. Вăрçă çаплах чарăнмасть. Чарăнма мар, ăна тата малалла тăсасшăн тăрăшаççĕ. Вăрçăран йăлăхса тарса таврăннă салтаксене «дезертирсем», тесе тыта-тыта калле фронта ăсатаççĕ. Каясшăн мар кутăнланаканнисене арестлесех илсе каяççĕ. Тĕрмене хупса лартнисем те сахалах мар ĕнтĕ.
Вахрушев икĕ уйăх чирлĕ выртнă хыççăн кăшт юсана пуçларĕ, тăрса ларакан пулчĕ. Чир хыçĕнчен ăна лайăх апат кирлĕ. Анчах пасарта ним те сутмаççĕ. Хăш чухне ыраш çăкăрĕ пулкалать те, ăна илес тесен те ирхи куна каçчен черетре тăрас пулать. Черет тăрсан та хăш чухне илетĕн, тепĕр чухне нимĕн те лекмест.
Халăх выçă:
— Революци тăвам пек турĕç. Мĕн ырри пур ĕнтĕ? Нимĕн улшăну та çук. Ĕлĕкхи пекех, пурте хăйсен вырă-

нĕсенче лараççĕ, патша кăна çук. Ķаплипех тăрсан, акă, ăна та каллех хăй вырăнне лартас тейĕç-ха...

— Пулĕ... Пурте патша йыттисем пулнăскерсем вĕт. Ķаллех халăх юнне ĕçеççĕ.

— Халăха çĕр паратпăр. Ирĕклĕх! тесе суйрĕç. Ăçта çĕр? Ăçта ирĕклĕх? Ķаллех вĕсен аллинче! — тарăхса калаçаççĕ лавкка умĕнче черетре тăракан çынсем.

Эпĕ большевиксен парти членĕ пулсан та тĕплĕнех ăнланса илейместĕп-ха. Çавăнпа:

— Вахрушев юлташ, патша çук. Революци пулчĕ. Хăçан чарăнмалла ку вăрçă? — тесе ыйтрăм пĕрре.

— Ķурмастăн-им эсĕ, Российăра халĕ икĕ власть: Вăхăтлăх правительство тата Советсем. Вăхăтлăх правительство вăрçа чарасшăн мар, малалла тăсасшăн. Юлашки вăхăтра Советсене те контрреволюционерсем, социалреволюционерсем, меньшевиксем хăйсен аллисене çавăрса илчĕç. Вĕсем те вăрçа чарасшăнах мар — правительство майлă.

— А, мĕн тумалла ĕнтĕ? — тесе пӳлсе ыйтрăм Вахрушев юлташран.

— Мĕн тăвасси паллă. Вăхăтлăх правительствăна Ķеренскипе пĕрле сирпĕтес пулать, Советсене контрреволюционерсенчен тасатса, хамăр алла, — большевиксен аллине памалла. Пирĕнпе вăрçакан государствăсемпе йывăр пулсан та мир тумалла. Вара тин вăрçă чарăнма пултарать, — тесе ăнлантарать мана Вахрушев юлташ.

— Апла пирĕн каллех Вăхăтлăх правительствăпа çапăçмалла?

— Çапăçмасăр влаçа никам та памасть. Ăна вăрçăпа çĕç илетĕн, законĕ çапла.

— Апла пулсан, буржуйсемпе çапăçатпăр.

— Çапăçас пулать, Витали. Унсăр ĕç тухмасть.

Вахрушев юлташ чирĕнчен кăшт чĕрĕлсенех каллех хĕрӳ ĕçе хутшăнчĕ. Çĕрне-кунне пĕлмесĕр тăрăшать. Эпир те Марфушăпа унпа пĕрле. Эпир пурăнакан хваттертен нихçан та çын татăлмасть: рабочисем, салтаксем, хĕрарăмсем ялан пыраççĕ. Вăрттăн пухусем пулса иртеççĕ. Унта пĕр-пĕринпе тавлашаççĕ. Вăхăт-вăхăт çухаран çухана ярса тытас патне çитеççĕ. Хăшĕсем Учредительнăй собранишĕн тăраççĕ. Теприсем — ăна хирĕç.

— Пире Учредительнăй собрани ним те пама пултараймасть. Советсем çеç пирĕн тăван власть.

Çапла Совет влаçĕшĕн кĕрешсе кĕркунне те пулчĕ.

Фронтран салтаксем хĕçпăшалĕсемпех ушкăнĕ-ушкăнĕпе таврăна пуçларĕç. Вĕсем, пурте тенĕ пек, большевиксем майлă.

— Çитĕ унта çапăçса. Халĕ ĕнтĕ буржуйсене çĕмĕрме вăхăт çитрĕ, — теççĕ фронтран таврăннă салтаксем.

Вăл куна нихăçан та манассăм çук. Урама халăх сасартăк тухса тулчĕ. Рабочисем, салтаксем, хĕрарăмсем, ача-пăчасем те унта. Урама шăнăçаймасăр кĕпĕрленеççĕ. Митинг пуçланчĕ. Ораторсем пĕрин хыççăн тепри тухса сăмах кала пуçларĕç.

— Долой вăрçă!

— Долой Вăхăтлăх правительство!

— Долой Керенский!

— Пĕтĕм власть Советсене!

— Социализмлă революци сывă пултăр! — тесе кăшкăра пуçларĕç.

Акă, Вахрушев юлташ трибуна çине улăхса тăчĕ. Вăл халăх çинелле аллине тăсрĕ те:

— Юлташсем! — тесе хулăн сасăпа кăшкăрчĕ. Унăн сассине пурте илтрĕç. Пурте шăп пулчĕç. Малалла мĕн каласса кĕтеççĕ.

— Большевиксем çак империализмлă вăрçă пуçланнă вăхăтрах ăна хирĕç пулнă. Пире ĕçхалăхне çаратакан вăрçă кирлĕ мар. Граждан вăрçи çеç, вăл вăрçа пĕтерсе, ĕçхалăхне ирĕклĕх пама пултарать. Граждан вăрçине большевиксен Революциллĕ комитечĕ ертсе пырать. Буржуйсене çĕнтерсе хамăрăн тăван çĕршывра Совет влаçĕ пултăр тесен, пирĕн пурсăмăрăн та, хĕрлĕгварди отрядне çырăнса, хĕçпăшалланмалла...— Вахрушев юлташа пуçланă сăмахне каласа пĕтерме памарĕç.

— Мана Хĕрлĕ Гвардине çырăр!

— Мана та çырăр!

— Эпĕ те çырăнатăп!

— Çырăр! — рабочисем, салтаксем пĕрин хыççăн тепри кăшкăра пуçларĕç.

Çав кун митингра хĕрлĕгварди отрячĕ турĕç. Рабочисемпе салтаксем пĕрлешсе, Вăхăтлăх правительство влаçне çĕмĕрсе тăкрĕç. Ун вырăнне Совет влаçĕ пулса тăчĕ. Буржуйсем хăшĕ тарма ĕлкĕрчĕç, хăшне тытса чарчĕç.

## XV

Хăй çинчен йывăр тумтирне хывса пăрахнă пек, хула ирĕккĕн сывлать. Шурă юр çуса урамри çӳп-çапсене витсе хучĕ. Ӳсĕр çапкаланса çӳрекен офицерсем курăнми пул-

чĕç. Урамсенче хĕрлĕгвардеецсем, çĕлĕкĕсем çумне хĕрлĕ лентăсем çыпăçтарса, хулпуççийĕсем урлă пăшалĕсене çакса, юрласа иртеççĕ:

«Смело, товарищи, в ногу,
Духом окрепнем в борьбе,
В царство свободы дорогу
Грудью проложим себе...

. . . . . . . . . . .

Ĕлĕкхи земская управа çурчĕн алăкĕ çинче: «Стерлитамакский Военно-революционный комитет» тесе пĕлтерекен вывеска çакăнса тăрать. Çурт тăрринче хĕрлĕ ялав вĕлкĕшет. Ун çинче: «Вся власть — Советам!» тесе çырнă ылтăн саспаллисем курăна-курăна каяççĕ.

Хĕрлĕ пустав витнĕ сĕтел хушшинче ревком председателĕ Вахрушев юлташ ларать. Сахал çывăрнипе унăн куçĕсем шыçнă пек тăртаннă. Митингсенче нумай калаçнипе сасси тытăннă, пырĕ тĕпĕпе хăрăлтатса калаçать. Вăл апат çиме те, çывăрма та хваттере таврăнмасть, çавăнтах çикелесе, сĕтел çинче çывăркаласа пурăнать. Ун патне хĕрлĕгвардеецсем хуларан тухса тарма ĕлкĕреймен буржуйсене, офицерсене тыта-тыта пыраççĕ. Вахрушев вăл буржуйсемпе, офицерсемпе нумай калаçса тăмасть, тӳрех:

— Ну, кала тӳррипе. Ăçта пытартăн ылтăна? Ăçта продовольстви?— тесе ыйтать. Унтан хăшне хупса лартма хушать, хăшне кăларса ярать.

Эпир Марфушăпа хĕрлĕгварди отрядĕнче. Марфуша — сестра, эпĕ — политрук.

Нумаях та вăхăт иртмерĕ. Совет влаçне тĕрлĕ енчен тăшмансем хĕсе пуçларĕç. Хĕвелтухăçĕнчен адмирал Колчак хăйĕн шурă банда çарĕпе Урал еннелле çĕмĕрсе килет. Пирĕн хĕрлĕ отряд çав усал тăшмана хирĕç тăма хатĕрленет. Ăçта, мĕнле хĕçпăшал пур, пурне те пуçтаратпăр. Ĕçме-çиме хатĕрлетпĕр.

Вăхăт çитрĕ. Станцăра туллиех халăх. Вĕсем пире — хĕрлĕгварди отрядне — Хĕвелтухăç фронтне ăсатма пуçтараннă. Вунă вагонлă бронеллĕ поезд станца умĕнче хатĕр тăрать.

«Смело мы в бой пойдем
За власть Советов.
И, как один, умрем
В борьбе за это...

. . . . . . . . . . .

Юрласа çитрĕ отряд. Отрядра шурă сухаллă старик-сем те, тин çеç сухал шăта пуçланă çамрăксем те, хĕрарăмсем те пур. Хулпуççийĕсем урлă винтовкăсем çакнă, пилĕкĕсем тавра патрон лентисем çавăрса çыхнă, çĕлĕкĕсем çумне хĕрлĕ лентăсем çĕлесе çыпăçтарнă. Вĕсем пурте хăйсен ирĕкĕпе тăшмана хирĕç Совет влаçне сыхлама каяççĕ. Çавăнпа йĕмеççĕ. Вĕсене ăсатма пынисен çеç пичĕсем çинче куççуль пĕрчисем курăнаççĕ.

— Сывă пулăр!

— Хăвăрăн сывлăхăрсем çинчен час-часах çыру çырса тăрăр! — тесе ală тытса, ыталанса чуптуса уйрăлаççĕ ăсатма пынă аппшĕ-амăшĕсем, арăмĕсем, ачи-пăчисем, тăванĕсем, савнисем.

Станци умĕ вĕлле хурчĕ çăвăр янă вăхăтри пек кĕрлет.

Акă сарă çӳçлĕ пĕр хĕрарăм хăйĕн савнине ăсатать:

— Чунăм, тăшмана çĕнтерсе ырă сывă таврăн, — тесе чуптăвать вăл çамрăк хĕрлĕгвардееца.

Аппши панă мунча чулĕ пек чашкăра пуçларĕ бронеллĕ поезд пăравусĕ. Трубинчен мăкăрлантарса тĕтĕм кăларать. Ак ревком председателĕ Вахрушев юлташ пăравус çине улăхса тăчĕ:

— Юлташсем! — тесе аллине çӳлелле çĕклесе кăшкăрчĕ вăл. Унăн хулăн сассине пурте илтрĕç.

Сĕрлекен халăх шăпланчĕ. Пурте Вахрушев çинелле çаврăнса пăхрĕç.

— Фабрик-заводсенче, чугун çул çинче ĕçлекен рабочисенчен пуçтарăнса чăмăртаннă хĕрлĕгварди отрячĕ паян тăшмана хирĕç çапăçма фронта тухса каять. Граждан вăрçи — пирĕн вăрçă! Ку вăрçăра çапăçакансен ячĕ ĕмĕр-ĕмĕрех юлĕ. Вĕсем ĕлĕкхи пек капиталистсен интересĕсемшĕн мар, Совет влаçне тĕрлĕ тăшмансенчен сыхлама фронта тухса каяççĕ. Тыла юлакан юлташсен вĕсене тĕрлĕ майпа пулăшмалла... Сывă пулăр, хаклă юлташсем — Революци паттăрĕсем! — тесе пĕтерчĕ Вахрушев хăйĕн сăмахне.

— Урра!

— Сывă пултăр Совет влаçĕ!

— Сывă пултăр революци!

— Сывă пултăр большевиксен партийĕ! — аслати пек кĕрлесе кайрĕ халăх сасси. Оркестр «Интернационал» юрлать. Юлашки минут çитрĕ. Пăравус сывлăша чĕтретсе сухăрса ячĕ.

— Марфуш, лар! — терĕм эпĕ.

— Сывă пул, Вахрушев юлташ! — кăшкăрчĕ Марфуша.

— Сывă пулăр! — пуçĕнчи çĕлĕкне илсе пирĕн еннелле сулчĕ Вахрушев.

Бронеллĕ поезд чашкăрса хĕвелтухăç еннелле хускалса кайрĕ.

Ăсатма пынă халăх аллисемпе сулса тăрса юлчĕ.

## XVI

Вăрçă пуçланнăранпа юсаман чугун çул тăрăх бронеллĕ поезд майĕпен фронталла шăвăнать. Пырсан-пырсан, тăп чарăнса ларать.

— Мĕн пулчĕ? — хĕрлĕгвардеецсем пăравус патне чупса пыраççĕ.

— Кайма çук, малта çула çĕмĕрсе тăкнă, — тесе пĕлтерет машинист.

— Контрреволюци ĕçĕ!

Вăл пире тытса чараймасть. Çула хăвăрт тӳрлететпĕр те, поезд каллех малалла хускалса каять.

Çамрăк Совет влаçне тăшмансем тĕрлĕ енчен унка пек çавăрса илеççĕ: хĕвеланăçĕнчен — Юденич, кăнтăртан — Деникин, Врангель, Краснов генералсем, хĕвелтухăçĕнчен — Колчак адмирал çĕмĕрсе килет. Вăл контрреволюциллĕ генералсене пĕтĕм тĕнчери капиталистсем пулăшаççĕ. Вĕсем, Совет влаçне çĕмĕрсе тăкса, капиталистсен влаçне çĕнĕрен туса хурас задача лартнă хăйсен умне.

Пирĕн бронеллĕ поезд Шур Атăл урлă каçса ĕлкĕреймерĕ. «Ĕпхӳ хулине Колчак çарĕ çавăрса илнĕ» текен хыпар çитрĕ. Çавăнпа Раевка станцинче чарăнмалла пулчĕ.

Колчакăн алă пинлĕ шурă çарĕ сарлака фронтпа Пермь, Хусан, Самар хулисем çине виçĕ чугун çул тăрăх çĕмĕрсе килет. Унăн задачи: Самар хулине илсе, Деникин çарĕпе хутшăнса, Мускав çине пĕрлешсе тапăнасси.

Пирĕн бронеллĕ поезд станцăра вăрах тăчĕ. Юлташсем ним тума пĕлмеççĕ. Вĕсен халех тăшмана çĕмĕрсе тăкас килет. Ĕпхӳ енчен тупă, пулемет сассисем илтĕнеççĕ. Унта В. И. Чапаев хăйĕн дивизипе шуррисене çĕмĕрет. Ку пушшех пирĕн юлташсене хастарлантарать.

— Мĕн кĕтсе тăратпăр эпир кунта? Айтăр, Ĕпхӳ çине Чапаева пулăшма, — тесе васкатаççĕ хăшĕсем.

— Наступление кайма Фрунзе юлташран приказ çук,

Вăл хушмасăр бронеллĕ поезд хускалса кайма пултараймасть, — тесе ăнлантарать юлташсене бронеллĕ поезд командирĕ Прохоров юлташ.

Юлташсем лăпланаççĕ. Вагонсенчен тухса уткаласа çӳреççĕ. Тапак туртаççĕ:

— Приказ кĕтсе тăрсан, вăл, çĕмĕрсе килсе, Самар хулине те çавăрса илме пултарать. Унтан Мускава çитĕ, — тесе пĕр-пĕринпе мăкăртатса калаçаççĕ.

— Приказсăр, хамăр тĕллĕн наступление кайма эпир анархистсем мар, хĕрлĕгвардеецсем, — тесе ăнлантаратăп эпĕ.

## XVII

Çав каç пирвайхи юр çурĕ. Тумхахлă шăн çĕре вăл шурă кĕççе пек витсе тикĕслерĕ. Ĕпхӳ çине наступленипе кайма приказ çĕрле пычĕ. Вăрах кĕтнĕ юлташсем хĕпĕртесе ӳкрĕç.

— Вагонсене кĕрĕр! — приказ пачĕ командир.

Бронеллĕ поезд шурă юрпа витĕннĕ рельсăсем тăрăх малалла хускалчĕ. Ураписем тăкăртатса çаврăнни кăшт çеç илтĕнет. Пăравус хуллен кашлать, хура тĕтĕм палкаса тухса хыçалалла тăрса юлать.

Давлекан, Чишма станцисем хыçала тăрса юлчĕç. Малта Шурă Атăл, ун урлă километр тăршшĕ тимĕр кĕпер курăнать. Кĕпер урлă каçсанах, Ĕпхӳ хули, вăл çӳлĕ сăрт айккинче ывăç тупанĕ çинчи пек ларать. Халĕ вăл шуррисен аллинче. Çуртсем çулăмланса çунни курăнать. Хула çине пĕлĕт пек хура тĕтĕм витĕннĕ.

Буферсем сасартăк пĕр-пĕрин çумне шăнкăл-шанкăл çитсе çапăнчĕç. Поезд тăп чарăнса тăчĕ. Эпир — хĕрлĕгвардеецсем вагонсем çинчен сике-сике антăмăр.

— Мĕн пулчĕ?

— Ма чарăнтăн?

— Малалла кайма çук. Шурă Атăл çинчи кĕпере çĕмĕрнĕ,— тесе пĕлтерчĕ машинист.

— Тӳрлетес!

Çав вăхăтрах:

— Батальон, пли! — сылтăм енчен хулăн сасă илтĕнчĕ.

— У-ух! Тра-та-та!— пăшал, пулемет сассисем йĕркесĕр кĕрле пуçларĕç.

— Вагонсене кĕрĕр! — тесе кăшкăрчĕ командир.

Юлташсем хӑшӗ вагонсем ҫине ларса ӗлкӗрчӗҫ, хӑшӗ лараймарӗҫ, йӑвана-йӑвана ӳкрӗҫ. Эпӗ халь вагон ҫине сиксе кӗрес тесе чупса пытӑм, ларса ӗлкӗреймерӗм, манӑн сулахай алӑ вутпа пӗҫернӗ пек пӗҫерсе илчӗ. Тытса пӑхрӑм, суранланнӑ, юн юхать.

— Марфуша! — кӑшкӑрса ятӑм.

Марфуша ман сасса илтмерӗ пулас. Хирӗҫ чӗнмерӗ.

Суранланнӑ алла ҫыхкаласа аппаланнипе хам та сисмен — поездран тӑрах юлнӑ. Поезд каялла чакнӑ. Мӗн тӑвас? Поезд хыҫӗнчен чупсан шуррисен аллине лекме пултаратӑп. Пӗр вӗсен аллине лексен вара чӗрӗ юласса ан та шухӑшла. Ҫавӑнпа эпӗ чугун ҫул ҫинчен пӑрӑнтӑм та, тавраран ҫаврӑнса кайса, хамӑрӑннисем патне пырса тухӑп, тесе утатӑп.

Ура айӗнчен йӗпе юр нӑтӑрт-нӑтӑрт туса юлать. Инҫетрен йытӑ вӗрнӗ сасӑсем илтӗнеҫҫӗ.

Хам та сисмен, ҫутӑлас умӗн эпӗ пӗр пысӑк мар пушкӑрт ялӗ патне ҫитсе тухрӑм. Малтанах ял вӗҫӗнчи пӗчӗк пӳрт патне пытӑм. Пӑхатӑп, урамра пӗр чун та курӑнмасть. «Ку ялта хӗрлисем-ши е шуррисем-ши?» тесе шухӑшлатӑп. Яла кӗме хӑратӑп. Хӑшпӗр пӳрт трубисенчен тӗтӗм мӑкӑрланса тухать. Сывлӑшра тислӗк вутти ҫуннӑ шӑршӑ сӑмсана ҫурать. Автансем тӗрлӗ сасӑпа авӑта пуҫларӗҫ. Пуҫ тӗлӗнче, халь ишӗлсе анас пек, тачка шурӑ пӗлӗт. Шултра юр пӗрчисем лаплатса анаҫҫӗ. Юр ҫӑвать пулсан та, ҫанталӑк ӑшӑ, ҫил ҫук, лӑпкӑ. Суранлӑ алӑ йӗппе чикнӗ пек чикӗшсе ыратать. Тӳсме ҫук ӗҫес килет. Ҫӑвара юр хыпса ӗметӗп. Шӑла сивӗ тивет. Хыҫалалла ҫаврӑнса пӑхрӑм. Куратӑп, эпӗ килнӗ енчен пӗр мӗлке лӑпӑстатса килет. «Тата кам поездран тӑрса юлнӑ-ши? Халӗ ӗнтӗ, хӑрушӑ мар, иккӗн пулатпӑр» тесе мӗлке ҫине пӑхса тӑратӑп. Хам ҫапах та шансах каймастӑп. Кам пӗлет ӑна, такам вӑл?.. Тен, шуррисен разведчикӗ? Пӳрт ҫумӗнчи ҫатан карта ҫумне лӑпчӑнса лартӑм та нагана кӑларса алла тытрӑм. Мӗлке ҫитессе кӗтетӗп.

Ҫын ҫитрӗ. Ман умран вашлатса иртсе кайрӗ. Ун ҫийӗнче вӑрӑм шинель. Чухласа илтӗм, вӑл пирӗн мар, шурри, хулпуҫҫийӗ ҫинче погон курӑнать. Мӗн тӑвас?.. Персен, сасӑ пулать...

Вӑл, тӳрех картишне кӗрсе, пӳрт алӑкӗ умне пычӗ. Ун ҫине йытӑ вӗре пуҫларӗ. Йытта те урипе тапрӗ, те ҫапрӗ, йытӑ пӗрхӗнсе тухса тарчӗ. Пӳрт алӑкне шак-шак шаккать.

— Уç!—кăшкăрать.

— Кам эсĕ?—пӳртрен хĕрарăм сасси илтĕнчĕ.

— Эпĕ — салтак.

Хĕрарăм пӳрт алăкне уçрĕ.

— Инке, кала, сирĕн ялта хĕрлисем-и, шуррисем-и? — тесе хĕрарăма хăратса тĕпчет.

— Мин пĕлмей, — тет хĕрарăм хăранă сасăпа.

Мĕн тăвас? Çатан урлă сиксе каçса, алăк умне пытăм. Хăлхана алăк çумне çыпăçтарса итлетĕп.

Çын пĕрех хĕрарăмран ыйтса тĕпчет: Леш: «Мин пĕлмей», тесе ответлет.

Мĕн пулсан та пулать. Алăка яр уçса пăрахрăм та:

— Хĕрлисем! Аллусене çĕкле!— тесе кăшкăрса ятăм.

Çын урипе чӳречене тапса çĕмĕрчĕ те тулалла тухса сирпĕнчĕ. Эпĕ те ун хыçĕнчен сиксе тухрăм, наганпа кĕрĕслеттертĕм, лекмерĕ. Çын хыçалалла юр сирпĕтсе тарчĕ. Тата икĕ хутчен петĕм, çук, лектереймерĕм. Хыçĕнчен хăвала пуçларăм. Çын вăрăм шинелĕпе тăлланса чупать.

— Стой! — кăшкăратăп.

Çын чупса пынă çĕртех çийĕнчи шинельне хывса пăрахрĕ те тата хытăрах тарма пикенчĕ. Эпĕ хăвалама пăрахрăм. Вăл вăрмана кĕрсе куçран çухалчĕ. Эпĕ ун шинельне пырса илтĕм. Пăхатăп, ахаль салтак мар, офицер пулнă. Шинелĕн хулпуççийĕсем çинче ылтăн погонсем. Кĕсйисене ухтарса пăхрăм, Колчак укçи туллиех, çырусем нумай, çырусем хушшинче удостоверени пур:

## *УДОСТОВЕРЕНИЕ*

*Предъявитель сего есть подпоручик № полка Яков Степанович Воронов.*

— Ах, тăшман! Ку вĕт хамăр ялти староста ывăлĕ Якку пулнă. Шел, персе лектереймерĕм... Унтан калле яла пырса Яккупа тĕл пулнă пӳрте кĕтĕм.

— Рехмет иптеш, рехмет, мана хăтарнăшăн. Эсĕ пулман пулсан, вăл мана тем те тума пултарĕччĕ, — тесе тав тăвать мана пушкăрт хĕрарăмĕ.

Унтан хĕрарăмран хĕрлисем ăçта тăнине ыйтса пĕлтĕм.

— Хĕрлисем кунтан пилĕк çухрăмри ялта тăраççĕ. Çул тӳп-тӳрĕ. Вăрман витĕр тухсанах,— тесе пĕлтерчĕ хĕрарăм. Çул кăтартса ячĕ мана.

## XVIII

Ир пулчĕ. Юр çума чарăнчĕ. Эпĕ хĕрлисем тăракан ял еннелле утатăп. Вăрмана кĕрсенех, ман ума икĕ хĕрлĕгвардеец сиксе тухрĕç.

— Стой! Ӑам эсĕ? Ăçта каятăн?

Эпĕ чарăнтăм. Хам камне каласа патăм. Вĕсем ĕненмеççĕ. Ман кĕсъесене ухтарма пикенчĕç.

— А-а... Наганĕ те пур. Офицер, — терĕ пĕри.

— Юлташсем, йăнăшатăр эсир. Эпĕ шурри мар...

— Каласса ан тăр, штабра пĕлĕпĕр эсĕ камне. Айта, ут!

Эпĕ хĕрлĕгвардеецсемпе пĕрле хĕпĕртесе пыратăп.

Штабра мана комиссар патне илсе пычĕç. Вăл сĕтел хушшинче карттă çине пăхса ларать.

— Комиссар юлташ, акă офицера тытса килтĕмĕр. Наганĕ те, удостоверенийĕ те пур, — тесе пĕлтерчĕç хĕрлĕгвардеецсем.

Комиссар, карттă çинчен куçне илсе, ман çине пăхрĕ те:

— Ара, Витали, Малинкин юлташ! Эсĕ вĕт ку! Чĕрĕ юлтăн-им! Мана Марфуша: Шурă Атăл кĕперĕ патĕнчи çапăçура вĕлерчĕç, тесе пĕлтерчĕ. Эпĕ сан çинчен хуйхăрса ларатăм-ха, — тесе ури çине сиксе тăчĕ вăл.

— Каççим юлташ! — пĕрне-пĕри ыталаса илтĕмĕр.

Унтан эпĕ хам мĕнле хăтăлнине каласа патăм.

— Аманни хăрушă мар. Чĕрĕ юлнă, çавă аван. Халех сана Раевкăна лазарета леçĕç. Марфуша унта, — терĕ Каççим.

Çав вăхăтра хĕрлĕгвардеецсем подпоручик Воронова тытса пырса кĕчĕç. Вăл ман çине шурă куçĕсемпе çаврăнса пăхрĕ те:

— Каллех санпа тĕл пултăмăр, — терĕ сиввĕн.

— Ку юлашки пулĕ. Урăх тĕл пулмăпăр ĕнтĕ! — терĕм татса.

— Малинкин юлташа Раевкăри лазарета леçĕр, — терĕ Каççим.

Эпĕ Каççим юлташа алă тытса тухрăм. Подпоручик ман çине шурă куçĕсемпе чалăшшăн пăхса юлчĕ.

## XIX

Лазарет умне çитсен, Марфуша хирĕç чупса тухрĕ:

— Витя, Витали! Эсĕ чĕрĕ юлнă! — мана ыталаса илсе чуптурĕ.

Ман суранлă алă тӳрленсе çитнĕ-çитменех, эпĕ вĕри

чирпе чирлесе ӳкрӗм. Çунтарать. Вăхăт-вăхăт тăн çухалать. Марфуша мана чиртен çăласшăн чунне хурса тăрăшать. Анчах чир мана лăскать. Çип татмалăх та вăй юлмарӗ.

— Ох, вилетӗп пуль, — тесе хаш! сывлатăп хăш чухне.

Марфуша мана шеллесе кăвак куçӗсене мăч-мăч хупса уçать. Панулми пек чăмăр питçăмартийӗсем тăрăх куççуль тумламӗсем юхса анаççӗ. Ăна курсан манăн та кăмăл хуçăлать.

Пӗрре çапла Марфуша ман пата пычӗ. Вăл темшӗн пит салху.

— Ан хуйхăр, Марфуша. Чир иртет. Çăмăллана пуçларăм. Çиес киле пуçларӗ, — тетӗп ăна савăнтарасшăн.

— Эсӗ чӗрӗлессе пӗлетӗп. Анчах кунта выртакан хӗрлӗгвардеецсене пурне те Стерлитамакри лазарета леçмелле, теççӗ, — тесе пӗлтерчӗ вăл мана.

— Мӗншӗн?

— Шуррисем хытă хӗстереççӗ... Пирӗн чакмалла пулать.

— Марфуша, эсӗ те пирӗнпе пӗрле пыратăн пулӗ вӗт?

— Малтан чирлӗ юлташсене ăсатса пӗтермелле. Кайран вара эпӗ те унта пыратăп.

— Пур юлташсене те ăсатса пӗтерсен, кайран иккӗн пӗрле кайăпăр вара.

Марфуша кăшт шухăша кайса тăчӗ те:

— Эпӗ сана халех ăсатасшăн, мӗншӗн тесен юлташсене ăсатса пӗтерсен эпӗ, штаба кайса, Қаççим пиччене курса калаçасшăн. Ăна курманни нумай пулать. Тунсăхласа çитрӗм. Телефон тăрăх калаçни мӗн вăл.

— Апла эпӗ те санпа пӗрле Қаççим юлташ патне пырăп.

— Çук, çук, Витя, сана каллӗ-маллӗ турттарса çӳреме юрамасть. Эсӗ чирӗнтен сывалса çитмен-ха. Шăнса çӳресен, каллех апраса ӳкме пултаратăн, — тесе лăплантарчӗ мана Марфуша.

— Мана ăсат эппин. Ху кайран пырăн, — тесе килӗшрӗм.

## XX

Раевкăпа Стерлитамак хушшинче чугун çул çук. Лашапа каймалла. Аслă çулпа кайсан — çаврăнăç, тӳрӗ çулпа кайсан вунпилӗк çухрăм сывăхрах.

Пире каҫа хирӗҫ, лавсем ҫине одеялсемпе чӗркесе вырттарса, ӑсатрӗҫ.

— Ну, сывӑ пул, Марфуша, тен, час курӑймӑпӑр, тен...

— Ҫука ан калаҫ-ха, Витя. Эпӗ унта ыранах пырса ҫитетӗп, — терӗ Марфуша, мана йӑпатса.

Мана леҫекен лавҫӑ — пушкӑрт ҫынни. Вӑл вырӑнтан хускалса кайсанах юрла пуҫларӗ:

> «Шурӑ Атӑлпа пӑрахут анать,
> Инҫетрен кӑшкӑртса.
> Савни савнине ӑсатать
> Хӗрлӗ ҫара, чуптуса.

— Иптеш, юрру пит лайӑх санӑн. Ӑҫтан илтсе вӗрентӗн? — тетӗп.

— Ниҫтан та илтмен. Юрӑсене эпӗ хам шухӑшласа кӑларатӑп. Хаҫат ҫинче те пичетлесе кӑлараҫҫӗ, — тет пушкӑрт мухтанарах.

— Поэт апла?

— Қам пӗлет, ҫынсен кӑмӑлне те каять, те ҫук... Хамшӑн аван пек туйӑнать.

— Маншӑн юрри питӗ лайӑх. Ҫынсене те килӗшмелле, — тетӗп мухтаса.

Пушкӑрт каллех юрлать. Эпӗ итлесе выртса пыратӑп. Манӑн та унпа пӗрле юрлас килет, анчах вӑй ҫуккипе сасӑ тухмасть. Ӑшра унпа пӗрле юрлатӑп.

Ҫул икӗ еннелле уйрӑлса кайнӑ тӗле ҫитрӗмӗр.

— Иптеш, ӑҫтан каяр, аслӑ ҫулпа-и е тӳрӗрен? — терӗ пушкӑрт, лашине чарса.

— Айта, ӑҫтан часрах ҫитетпӗр — ҫавӑнтан, — терӗм.

— Тӳрӗрен кайсан, паллах, часрах ҫитетпӗр, вунпилӗк ҫухрӑм сывӑхрах. Но-о, — терӗ пушкӑрт, лашине аллинчи чӑпӑрккипе ҫапса.

— Иптеш, хӗрлисем чакаҫҫӗ... Эсӗ мӗн шухӑшлатӑн? — тесе ыйтрӑм пушкӑртӑн шухӑшне пӗлес майпа.

Пушкӑрт юрлама чарӑнчӗ, куҫӗ ҫинерех пусса лартнӑ мулаххайне ҫӳлелле ҫӗклесе, ман ҫине ҫаврӑнса пӑхрӗ те:

— Мӗн шухӑшлас? Ак сана леҫсе таврӑнатӑп та, арӑма тата ача-пӑчасене тиесе — хӗрлисемпе пӗрле. Шуррисем патне юлма юрамасть. Мана хамӑр ялти байсем*) курӑймаҫҫӗ, — терӗ тилхепине турткаласа.

---

*) Байсем — пуянсем.

— Эсĕ апла хĕрлисем майлă?
— Ҫамсем майлă пулас тата манăн?
Ҫапла калаҫса пĕр вĕтлĕх вăрманлă вар хĕрне пырса ҫитрĕмĕр. Хĕвел анса ҫанталăка каҫхи сăн ҫапрĕ. Сасартăк пирĕн ума икĕ хĕҫпăшаллă ҫын сиксе тухрĕҫ:
— Стой! Ҫам килет? — кăшкăрчĕҫ иккĕшĕ те харăс.
Пуҫа ҫĕклесе пăхрăм — шуррисен салтакĕсем.
— Ҫам ку, санăн урапа ҫинче выртаканни? — тесе тĕпчет пĕри пушкăртран.
— Чирлĕ ҫын. Тифпа чирлĕ. Хулана больницăна илсе каятăп, — тесе ларать пушкăрт.
— Ну-ка, пăхар, мĕнле чирлĕ ҫын вăл. Тăр, мĕн улпутла выртатăн?!— пĕри ман ҫири одеяла туртса илчĕ.
— Чирлĕ ҫын? Хĕрлĕгвардеец. Ан ҫуну ҫинчен. Комиссар пуль-ха, — терĕ тепри.
— Ан тивĕр ăна. Вăл вĕт тифпа чирлĕ,— терĕ пушкăрт ман хута кĕрсе.
— Акă сана тиф!— терĕ, пăшал аврипе чышса, пĕри пушкăрта.
Мана ҫуна ҫинчен юр ҫине сĕтĕрсе антарчĕҫ.
Пушкăрт лашине ҫавăрса тарма тăчĕ. Анчах, ĕлкĕреймерĕ. Пăшал сасси кĕрлесе кайрĕ. Пушкăрт пĕрре ҫеҫ:— Ай!— кăшкăрчĕ те, ҫуни ҫинчен тĕшĕрĕлсе анчĕ, Лаши аҫа-ҫиҫĕм пек тапса сикрĕ.
— Ӳлĕмрен хĕрлисене турттарса ҫӳреймĕн, сволочь!— тесе вăрҫрĕ салтак.
Ҫапла эпĕ, хам кĕтмен ҫĕртен, шуррисен аллине тыткăна лекрĕм.

## XXI

Мана, чирлĕскере, шуррисем нумай тытса тăмарĕҫ. Тепĕр куннех Хĕвеланăҫ Ҫĕпĕре — концентрационнăй лагере ăсатрĕҫ.
Вăл лагерь Анжерка шахти патĕнчи Яя ятлă юханшыв хĕрринчеччĕ. Патша вăрҫи вăхăтĕнче унта тыткăна лекнĕ Австри, Германи, Чехословаки салтакĕсене хупса усранă. Халĕ кунта хĕрлĕгвардеецсем — вырăссем, тутарсем, украинецсем, еврейсем тата ытти халăхсем те туллиех. Пурсăмăр та эпир Совет влаҫĕшĕн кĕрешнĕ ҫĕртен тыткăна лекнĕ. Пире выҫăллă-тутăллă хупса усраҫҫĕ. Пирĕн апат-ҫимĕҫ кунне — ҫур кĕренке ҫăкăр, типĕ купăста шӳрпи, вĕретмен шыв ĕҫетпĕр. Нумайăшне

тиф лутăркать. Нимӗнле имçам та памаççĕ. Кашни кун вунă-вунпилĕк çын вилеççĕ. Вилнисене лагерь картинчех шăтăк алтса пытаратпăр. Масар ӳсет. Хăшĕсем йывăрлăха тӳсеймесĕр тарма тăраççĕ. Анчах тарма çук. Лагере йĕри-тавра йĕплĕ пралукпа виçĕ аршăн çӳлелле карта тытса çаврăннă. Ун тавра салтаксем пăшалсене хатĕр тытса утса çӳреççĕ.

Çĕнĕрен тытса пынă хĕрлĕгвардеецсем, хăшĕ-пĕрисем, пĕлмесĕр карта витĕр пырса пăхаççĕ. Çавăнтах пăшал сасси кĕрслетет. Хĕрлĕгвардеец çĕре йăванса ӳкет.

Çав вилĕм карти ăшĕнче мăксăр пураса хунă вунă барак ларать, вĕсене нихăçан та хутмаççĕ, мĕншĕн тесен хутма кăмакисем те çук. Кашни баракра пилĕкçĕр çын хĕрлĕгвардеецсем пурăнатпăр. Бараксене хамăр сывлăшпа «хутса» ăшăтатпăр.

Кашни кун шахта ĕçлеме илсе каяççĕ. Хăшĕсем шахтăра ĕçленĕ çĕртех чикĕне-чикĕне анса вилеççĕ.

Хăшĕсем йывăрлăха тӳсеймесĕр:

— Долой Колчак влаçĕ!— тесе кăшкăраççĕ. Ун пеккисене çавăнтах персе пăрахаççĕ.

Пурнăç тем пек йывăр пулсан та, эпĕ юсана пуçларăм, вĕри чир иртсе кайрĕ, суранланнă алă тӳрленчĕ. Анчах тиф хăйĕн паллине хăварчĕ, хăрах хăлха илтми пулса юлчĕ, тата алăсем чĕтрекен пулчĕç. Çиме начаррипе вăй çук. Сăн хуралса кайрĕ. Куç шуррисем те сап-сарă.

Пĕрре мана лагерь начальникĕ полковник Терешко хăй канцелярине чĕнтерчĕ.

— Хм,— терĕ полковник эпĕ алăкран кĕрсен.— Акă мĕн, эпĕ сана хам пата кучера илесшĕн...

— Сирĕн ирĕк, ваше благороди,— терĕм эпĕ ăна честь парса.

— Молодец! Хĕрлĕгвардеец пулсан та, чина честь пама пултаратăн,— терĕ полковник мана мухтаса.

— Так точно!

— Ку аван. Мĕнле майпа эсĕ хĕрлисем майлă пулнă? Ху ирĕкӳпе-и е мобилизаципе?..

— Мобилизаципе, ваше благороди,— суйрăм эпĕ.

— Апла... Ху ăçтисем пулатăн?

— Уфимски.

— Пĕлетĕп. Уфимскисем пирĕн çарта чылайăн. Пушкăрт çынни апла?

— Çук, ваше благороди, пушкăрт мар, чăваш!

— Чăваш!.. Ну, вот. Эпĕ сана пĕр лайăх ĕç хушассăн. Килĕшетни?

— Сирĕн ирĕк, ваше благороди.

— Эсĕ ху кам? Коммунист-и?

— Çук, ваше благороди. Партинче тăмастăп. Çамрăкха эпĕ.

— Ну, эсĕ пире кирлĕ ĕç тăвăн. Эпĕ сана секрет хушам. Хĕрлĕгвардеецсем хушшинче пытанса пурăнакан большевиксене, комиссарсене кăтартса парăн. Уншăн сана награда пулĕ. Ну, мĕнле? Килĕшетĕн-и?

«Ах, тăшман. Ку мана йăпатса сутăн илесшĕн»— тесе шухăшларăм та килĕшем пек турăм:

— Так точно, ваше благороди.

— Халĕ ĕнтĕ, эсĕ манăн кучер пулан. Хулана тухса çӳрĕпĕр.

— Итлетĕп, ваше благороди!

— Асту, эпир санпа калаçнă секрета никам та ан пĕлтĕр. Пĕлес пулсан, хам алăпа персе пăрахăп,— тесе хăратса аларĕ мана Терешко.

— Никам та пĕлмĕ, ваше благороди,— тесе шантартăм полковнике.

Мана çĕнĕ шинель пачĕç. Тăхăнтăм та шуррисен салтакĕ пулса тăтăм. Хулпуççисем çинче погонсем пур, çĕлĕк çумне йăлтăркка какарт çыпăçтарса ятăм.

Полковник патĕнчен тухсан, лашасем пăхакан хĕрлĕгвардеецсем сырса илчĕç мана:

— Малинкин, эсĕ мĕн, ху ирĕкӳпе шуррисен салтакĕ пултăн-им?— тесе ыйтаççĕ.

— Полковник хăйĕн кучерĕ турĕ мана. Кӳлĕр лаша. Эпĕ ăна хулана илсе каятăп,— тесе пĕлтертĕм юлташсене.

— Хулана тухсан, хĕрлисем ăçта тăнине пĕлсе кил,— тесе тĕмсĕрлеççĕ юлташсем, мĕншĕн тесен лагерьте эпир хамăрăн тăван Хĕрлĕ Çар ăçта тăнине пĕлместпĕр. Кашниннех пĕлес килет.

Конюхсем мана пĕкĕ пек авăнчăк мăйлă, маттур хура ăйăр кӳлсе пачĕç. Кусла çине улăхса лартăм. Тилхепине икĕ алăпа явалаcа тытса, ăйăра ташлатса полковник пурăнакан çуртăн крыльци умне пырса чарăнтăм та:

— Тпруу! Хатĕр, ваше благороди! — полковник илтмелле кăшкăртăм.

Терешко, кăвакара пуçланă сухаллă, ватăрах çын пулсан та, рессорлă тăрантас çине çăмăллăн сиксе ларчĕ те:

— Айта, пошел!— терĕ мана.

Эпĕ тилхепине карт! çеç туртрăм. Айăр пуçне ухса, çĕлен пек авкаланса, хускалса кайрĕ. Хапха умĕнче хурал тăракан часовойсем полковнике честь парса тăрса юлчĕç: «Хăтăлтăм... урăх ку вилĕм картине килсе кĕрес çук ĕнтĕ эпĕ. Анчах юлакан юлташсене шел. Хăçан хăтăлĕç?»— тесе шухăшларăм та шик шăхăртăм. Айăрăн таканлă урисем айĕнчен вут тухса пырать. Тăрантас кустăрмисем тумхахлă çул çинче хăш тĕлте çĕре лекеççĕ, лекмен вырăнта сывлăшпа çаврăнса пыраççĕ. Айăр пуçне ухса ыткăнса юртать.

— Кучăр, хуллентерех,— тесе ларса пырать полковник.

Эпĕ йăйăра кăшт тытса чаратăп та каллех тилхепине картлаттарса туртатăп. Айăр тапса сикет.

Анжерка хулипе лагерь хушши икĕ çухрăм. Анжеркăна çитес чух пĕр тарăн вар пур. Вар леш енчен тайга вăрманĕ кашласа ларать: «Çав вăрман хĕрне çитсен анатăп та таратăп. Курса çеç юл вара мана»— тесе шухăшласа пыратăп. Айăра кăшт тытса чарнă май хыçалалла çаврăнса пăхрăм. Тарма май çук. Терешко наганне аллинче тытса ларса пырать.

Вар урлă каçса, Анжерка хулине çитсе кĕтĕмĕр. Кунта ĕнтĕ тарма май çук. Ăçта пăхнă, унта Колчак офицерĕсем, салтакĕсем йăр та яр иртсе çӳреççĕ.

— Стой!— терĕ полковник.

Эпĕ йăйăра тытса чартăм:

— Тпру!

Полковник лаша чарăнасса та кĕтмерĕ, тăрантас çинчен анса икĕ хутлă çурта кĕрсе кайрĕ:

— Эпĕ тухиччен кĕт,— тесе хăварчĕ мана.

Эпĕ кусла çинче ларатăп. Ман умран офицерсем, салтаксем ирте-ирте каяççĕ. Ман çине çаврăна-çаврăна пăхаççĕ. «Анса тарас» шухăшлатăп. Çук, каллех ман умра е офицер, е салтак пырать. Вĕсем мана сыхласа çӳренĕ пек туйăнать. Кусла çинчен ансанах персе пăрахĕç.

Чылай кĕтсен, полковник пĕр вăтам çулхи хĕрарăма хулĕнчен çавăтса тухрĕ. Иккĕш те тăрантас çине юнашар кĕрсе ларчĕç.

— Айта, тӳрех лагере!— хушрĕ полковник.

Тилхепене хускатрăм. Айăр малалла пĕрхĕнчĕ.

— Хуллентерех. Курмастăн-им? — тăрантас çинче хĕрарăм,— терĕ Терешко.

Хуларан тухрăмăр. Вăрман хĕрне çитрĕмĕр.

— Тпру. Ваше благороди, манăн вăрмана кĕрсе тухас килет,— терĕм ăйăра чарса.

— Фу, вăхăтсăр вăхăтра. Лагерь инçе мар, чăтăн,— терĕ полковник.

— Чăтма çук, ваше благороди.

— Анса тухтăр ĕнтĕ,— ман хута кĕчĕ хĕрарăм.

— Ну, хăвăртрах эппин!— килĕшрĕ полковник.

Эпĕ полковник каласа пĕтерессе те кĕтмерĕм, кусла çинчен сиксе антăм та вăрманалла чупса-кĕрсе кайрăм. Вĕсем хĕрарăмпа ларса юлчĕç...

Çапла вара эпĕ вилĕм картине урăх пырса кĕмерĕм. Хăтăлтăм.

## XXII

Анжеркăпа Тайга станци хушши вăтăр çухрăм. Çав хушша эпĕ вилĕмрен хăтăлнă хаваспа хăвăрт утса çитрĕм. Ман телейрен эпĕ станцăна çитнĕ çĕре шăп поезд пырса чарăннă. Пассажирсем ларма хатĕрленеççĕ. Халăхпа пĕрле эпĕ те хыçалти вагона кĕрсе лартăм, мĕншĕн тесен, вăл-ку пулсан, хыçалти вагон çинчен поезд чарăнмасăрах сиксе юлма аван...

Вагон ăшĕнче çутă çук, сĕм тĕттĕм. Ниçта ларма-тăма вырăн çук, халăх туллиех. Эпĕ аран-аран пĕр кĕтессе кĕрсе лăпчăнса лартăм. Кăшкăрашаççĕ, çуйăхаççĕ. Тем те пĕр каласа вăрçаççĕ. Ман çума тата икĕ çын хĕсĕнехĕсĕне кĕрсе ларчĕç. Вĕсем шăппăн пăшăлтатса калаçа пуçларĕç: «Хăтăлтăмăр. Новосибирскине çитесси, унтан вара инçе юлмасть»,— тет пĕри.

— Обь урлă каçсан, çуран та кайма пулать,— тет тепри. Эпĕ итлетĕп: тăван чĕлхепе — чăвашла калаçаççĕ. Чăтса лараймарăм:

— Ăçта каятăр эсир, тăвансем?— тесе пĕринчен хуллен ыйтрăм.

— Каятпăр-ха. Поезд ăçта çитерет, çавăнччен. Ху ăçта каятăн?

— Эпĕ те, сирĕн пекех, поезд чарăниччен каятăп.

— Ара, эсĕ те чăваш-им?— тесе ыйтрĕ тепри.

— Чăваш

— Пĕрле каятпăр апла.

— Пĕрле пулать ĕнтĕ.

Эпир, калаçсан-калаçсан, пĕрне-пĕри часах паллараймăр. Вĕсем Колчак çарĕнчен тарса таврăнакан салтаксем пулчĕç. Анчах шанса çитме çук. Çавăнпа эпĕ хам кам иккенне часах пĕлтермерĕм:

— Эпĕ те, сирĕн пекех, Колчак çарĕнчен таратăп,— тесе çеç каларăм.

Поезд хускалса каяс умĕн вагона икĕ офицер пырса кĕчĕç. Вĕсем вагон ăшне электрически фонарьсемпе çутатаççĕ:

— Документсене хатĕрлĕр!— тесе кăшкăрчĕ пĕр офицерĕ.

Мĕн тăвас? Манăн нимĕнле документ та çук. «Каллех тăшмансен аллине лекрĕм» тесе шухăшлатăп. Урасем ирĕксĕрех чĕтреççĕ. Шăп çав вăхăтра пĕр сасă:

— Караул! Çаратаççĕ!— кăшкăрса ячĕ.

Вагонти халăх пăлхана пуçларĕ. Нимĕн йĕрки те юлмарĕ. Пĕрне-пĕри чышкалаççĕ, тĕрте-тĕрте йăвантараççĕ, таптаççĕ. Кăшкăраççĕ.

— Караул!

— Çаратаççĕ!

— А-ал-ала-а!

Поезда хускалса кайма станци умĕнчи шăнкăрав юлашки звонок пачĕ.

Халăх шавлама лăпланманни офицерсене тарăхтарса çитерчĕ пулас:

— А, кайччăр-и çăва патне,— терĕ пĕр офицерĕ, тарăхса.

— Айта, анар!— терĕ тепри.

Офицерсем тухса кайсан, чĕре лăштах пулчĕ. Халăх та лăпланчĕ. Ахăлтатса кула пуçларĕç.

— Аран-аран хăтăлтăмăр,— терĕ таракан салтаксенчен пĕри.

— Пирĕн пек документсăр çынсем татах пулнă вагонра. Çавсем ăна юри кăшкăра пуçларĕç офицерсен умĕнче,— терĕ тепри.

Вĕсем чăн-чăн Колчак çарĕнчен таракан салтаксем иккенне эпĕ тинех ĕнентĕм.

Поезд хуллен хускалса кайрĕ. Тайга станци хыçала тăрса юлчĕ.

— Ну, юлташсем, хĕрлисем патне çитетпĕр-çитетпĕрех ĕнтĕ,— терĕм эпĕ савăнăçлăн.

— Новосибирскинчен иртесси çеç кансĕр пулĕ. Пĕр унтан иртсен вара киле çитнĕ пекех туйăнать,— тесе пыраççĕ салтаксем.

Эпир ларса пыракан поезд Новосибирскине çĕрле çитсе чарăнчĕ.

— Анăр, поезд малалла каймасть,— тесе пĕлтерчĕç станцăра.

— Мĕншĕн?

— Малтан Хĕрлĕ Çар çĕмĕрсе килет. Называевка стацине çитнĕ. Ыран кунта пулать,— тесе калаçаççĕ çынсем.

Вагон çинчен антăмăр. Станцăра йăл-ял çуртасем çеç çунаççĕ. Кĕрхи çĕр тĕттĕм. Шуррисем чăнах та чакаççĕ. Станци умĕнче туллиех салтаксем, офицерсем кĕпĕрлеçĕ. Каллĕ-маллĕ чупкалаççĕ, кăшкăрашаççĕ. Пуянсем те тарма хатĕрленеççĕ, япалисене лавĕ-лавĕпе станцăна турттарса пыраççĕ. Хĕрарăмĕсем, ачи-пăчисем çуйăхаççĕ.

— Пире кунта вырăн мар. Айтăр аяккинелле,— терĕм эпĕ салтаксене.

— Айтăр, пĕр-пĕр яла çитсе тухăпăр,— терĕ пĕри.

— Унта çиме те тупăпăр,— терĕ тепри.

Эпир станцăран сулахай еннелле пăрăнтăмăр та тĕттĕм çĕрелле кĕрсе кайрăмăр.

Çулсăр-мĕнсĕр, хамăр ăçта кайнине пĕлмесĕр, хĕвеланăç еннелле утатпăр.

Сехет-и, иккĕ-и утсан, пĕр ял патнелле çывхара пуçларăмăр. Малта лампа çутисем йăл-йăл курăна-курăна каяççĕ. Йытăсем вĕрнĕ сасă илтĕнет.

— Сирĕн хĕçпăшал таврашĕ çук-и?— тесе ыйтрăм салтаксенчен.

— Манăн наган пур. Анчах патрунсем сахал, тăваттă çеç,— терĕ пĕри.

— Пар-ха ăна мана. Яла кĕрсен, тем пулать... Тен, пĕр-пĕр тăшманпа тĕл пулма лекет,— терĕм.

Салтак шалаварĕ кĕсйинчен тутăр татăкĕпе чĕркенĕ наганне мана кăларса пачĕ:

— Асту, самосвод,— терĕ вăл асăрхаттарса.

Нагана илсе алла тытса пыратăп.

Яла çитрĕмĕр. Итлетпĕр. Ял шăп çывăрать. Урамра никам та курăнмасть. Хутран-ситрен çеç йытăсем: хавхав вĕреççĕ те каллех лăпланаççĕ.

Укăлча хапхинчен кĕрсенех пĕр пĕчĕк пӳрт чӳречи умне пырса: шак-шак шаккарăм.

— Ҫам унта?— пӳртрен хӗрарӑм сасси илтӗнчӗ.

— Инке, кӗрсе шыв ӗҫсе тухма пулмӗ-ши? Пӳртне кӗртме хӑратӑн пулсан, шывне чӳрече витӗр пар,— тесе ыйтрӑм.

Хӗрарӑм пӗр минут пек чӗнмесӗр тӑчӗ. Унтан:

— Мӗн тӑвас ӗнтӗ. Кӗрсе ӗҫӗр,— терӗ.

Эпир кӗнӗ ҫӗре лампине хӗрарӑм ҫутса ячӗ. Анчах, эпир виҫҫӗмӗр те шинельпе иккенне курсан: шуррисен салтакӗсем тесе шухӑшларӗ пулас, хӑрарӗ. Сӑнӗ улшӑнчӗ. Сӑмах чӗнеймесӗр тӑрать. Тутисем чӗтреҫҫӗ, куҫӗсене хупмасӑр пирӗн ҫине пӑхать.

— Ан хӑра, инке. Эпир сана усал тӑвасшӑн кӗмен. Пит хӑратӑн пулсан, халех тухса кайма пултаратпӑр,— терӗм, хӗрарӑма лӑплантарса.

— Ай, ҫук, ачамсем. Эпӗ хӑ-хӑраса мар... Мейӗр шыв, ӗҫӗр,— терӗ чӗтрекен сассипе, пирӗн ума тулли витре шыв илсе пырса лартрӗ.

Шыв ӗҫрӗмӗр. Ҫалаҫа пуҫларӑмӑр. Хӗрарӑмӑн хӑрани иртрӗ. Эпӗ ӑна хамӑр камсем иккенне каласа патӑм.

— Ҫилӗрсене таврӑнатӑр апла?— терӗ вӑл кӑмӑллӑн.

— Ҫилсене таврӑнатпӑр та, фронт урлӑ тепле каҫса каймалла? Ҫавӑ хӑрушӑ. Санӑн упӑшку ҫук-им?— тесе ыйтрӑм сӑмах ҫавӑрнӑҫӗ май.

— Пур.

— Ӑҫта вӑл?

— Хӗрлисем ҫӗмӗрсе килеҫҫӗ, теҫҫӗ. Ҫавӑнпа пулас, пӗтӗм ялти арҫынсене, хӑшне лашапа, хӑшне ҫуран, Обь хӗрне окопсем чавма хуса кайса пӗтерчӗҫ. Ялта хӗрарӑмсемпе ача-пӑчасем ҫеҫ тӑрса юлтӑмӑр. Ман упӑшкана та ҫавӑнта илсе кайрӗҫ,— тесе пӗлтерчӗ хӗрарӑм.

— Называевка станци кунтан инҫе-и?

— Инҫе мар, Обь урлӑ каҫсан иккӗмӗш станца.

— Обь урлӑ мӗнле каҫмалла?

— И-и... ун урлӑ каҫасси ним те мар, ҫыран хӗрринче кимӗсем туллиех. Кӗсменӗсене хам парса яма пултаратӑп.

— Инке, эпир ӗнертенпе ҫимен. Санӑн кӑшт та пулин ҫӑкӑр пулмӗ-ши?.. Ахаль мар, укҫалла,— терӗм ӑшшӑн калаҫнине курса.

— Ҫимен пулӗ ҫав... Ку вӑрҫӑ сире те, пире те шалт пӗтерсе ҫитерчӗ... Тахҫан чарӑнмалла вӑл...— терӗ те сӗтел ҫине апат хатӗрле пуҫларӗ.

— Вăрах юлмарĕ ĕнтĕ, инке, вăрçă часах чарăнĕ. Хĕрлисем çитсен пурнăç пĕтĕмпех улшăнĕ...

— Хĕрлисем çитсен пурнăç аванланĕччĕ те-ха... Ларса апатланăр-ха, ачамсем,— терĕ хĕрарăм пире сĕнсе.

Эпир шинельсене хывмасăрах сĕтел хушшине апатланма кĕрсе лартăмăр.

Хĕрарăм эпир камсемне пĕлнипе савăнăçлăн калаçа пуçларĕ. Пиртен хăраса кăмака хыçне пытанса ларнă çитĕннĕ хĕрĕ те тухрĕ. Вăл та калаçа пуçларĕ пирĕнпе:

— Эпĕ карательни отряд салтакĕсем пулĕç тесе хăраса пытантăм,— тет хĕрĕ.

— Тӳсме çук вĕт. Қашни яла килмессерен мĕн те пулин сăтăр туса каяççĕ. Пытанкаласа çеç пурăнатпăр,— тесе тарăхать хĕрарăм. Хурланнипе куçĕсенчен куççуль тухать.

Эпир çапла калаçса апатланнă çĕре икĕ çын кап пырса кĕчĕç. Ӳсĕртерех, хăйсенчен пӳтсĕр самогон шăрши çапать.

— Марфа, мĕнле çынсем лараççĕ сан патăнта?— кăшкăрса ячĕ пĕри.

— Салтаксем,— терĕ хĕрарăм.

— Мĕнле салтаксем? Ăçта сирĕн документсем? Халех кăтартăр!— терĕ тепри пирĕн ума пырса.

— Хальхи вăхăтра нумай сирĕн пек çапкаланса çӳрекенсем. Дезертирсем мар-и-ха? А, эсĕ, тата хĕрарăм пуçăпа, мĕншĕн манран ыйтмасăр хваттере кĕртрĕн? Ну, халех кăтартăр хăвăрăн документсене!— кăшкăраççĕ иккĕш те харăс. Хăйсем каллĕ-маллĕ тайкаланаççĕ.

Мĕн тăвас? Ăçта çитнĕ унта йывăрлăх. Вĕсем вĕт пире тытса шуррисем патне те ăсатма пултараççĕ. Вăрах шухăшласа ларма вăхăт çук. Ура çине тăтăм. Қĕсъене хыпашласа пăхрăм. Салтак панă наган шинель кĕсйинчех.

Лешсем пĕрех:

— Қăтартăр документăрсене! — ахăраççĕ. Пĕри кĕсйинчен кĕске пăшал туртса кăларчĕ.

Ман юлташсем хăраса ӳкрĕç.

— Документсем кăтартас-и сире? Юрĕ... Халех,— терĕм те, сĕтел хушшинчен тухса, шинель кĕсйинчен нагана туртса кăларса:

— Акă сире документ! Хур пăшална сĕтел çине! Унсăрăн халех персе пăрахатăп! —тесе пăшал тытнă çыннăн çамкинчен тĕллерĕм наганпа.

Кăшкăракансем шăп пулчĕç. Ӳсĕрсем урăлчĕç. Пăшалне сĕтел çине хучĕç.

— Юлташсем, тытăр иккĕшне те! — терĕм.

Салтаксем, харăс сиксе тăрса, ӳсĕрсене çавăрса илчĕç.

— Çыхăр аллисене хыçалалла! — хушрăм.

Виççĕн икĕ çынна часах алли-урисене çыхса хутăмăр.

— Ну, мĕн тăвас ĕнтĕ сирĕнпе, йытăсемпе?

— Ах, тархасшăн, ан вĕлерĕр! — йăлăнаççĕ ӳсĕрсем.

— Сире вĕлерсе мĕн алла вараламалла? Хуçа арăмĕ, сирĕн кĕлет пур-и? — терĕм эпĕ.

— Пур.

— Кĕлете хупса лартас.

Халĕ вĕсем ӳсĕр. Çутăлсан, ӳсĕрĕсем урăлсан, кăларса ярăпăр, — терĕм. Унтан илсе тухрăмăр та кĕлете хупса лартрăмăр.

— Спаççипах сире. Халĕ юрать эсир пултăр. Унсăрăн вĕсем пире тем кăтартма пултарĕччĕç, — тесе тав тăваççĕ пире амăшĕпе хĕрĕ.

— Камсем пулаççĕ вĕсем?

— Хамăр ялти старостăпа писарĕ. Çавсем кун памаççĕ вĕт пире. Пĕтĕм яла пăхăнтарса пурăнаççĕ. Вĕсем кăтартса панипе мĕн чухлĕ çынсене персе вĕлернĕ, тĕрмене хупса лартнă ĕнтĕ. Ĕлĕк те куштанскерсем, çак власть пулнăранпа пĕтĕмпех урса кайрĕç. Кунĕн-çĕрĕн ӳсĕр, — тесе пĕлтерчĕ хуçа арăмĕ.

— Ну, юлташсем, утатпăр пулĕ малалла, — терĕм эпĕ.

Хуçа арăмĕпе хĕрĕ пире ярасшăн мар:

— Тархасшăн ан кайăр... Эсир кайсанах пĕтереççĕ вĕсем пире, — тесе йăлăнаççĕ.

— Ан хăрăр. Эпир вĕсене... Урăх тарăхтараймĕç, — терĕм амăшĕпе хĕрне лăплантарса.

— Тавтапуçах сире. Килĕрсене çитме ырă кун-çул пултăр, — тесе тав туса юлчĕç. Çул çине çиме çăкăр парса ячĕç. Эпир амăшĕпе хĕрне алă тытса тухрăмăр.

## XXIII

Кимĕпе ишсе Обь урлă каçрăмăр. Çанталăк сивĕ. Паян-ыран юр çăвас пек шурă пĕлĕтсем юхса çӳреççĕ.

Обь хĕррипе анса, чугун çул çине тухрăмăр. Çутăла пуçларĕ. Пире хирĕç ушкăн-ушкăн лавсем килеççĕ. Лавсем çине лайăх тумланнă арçынсем, хĕрарăмсем, ача-

пăчасем тиеннĕ. Хушăран офицерсем те, салтаксем те курăнкалаççĕ.

— Ăçта каятăр эсир капла питĕ ирех?— ыйтрăм малти лав çинче ларса пыракан пĕр салтакран.

— Пĕлместĕр-им? Хĕрлисем çĕмĕрсе килеççĕ... Чакатпăр,— тесе пĕлтерчĕ салтак.

— Хĕрлисем инçе-и?

— Называевка станци вĕсен аллинче. Кунталла килеççĕ. Хăвăр ăçта каятăр?

— Эпир отпускран, хамăр чаçа каятпăр,— терĕм салтака.

— Ан та кайăр. Пурĕ-пĕр хăвăрăн чаçăра тупаймăр. Саланса пĕтнĕ пулĕ. Хĕрлисем патне тыткăна лекĕр,— терĕ салтак пире.

— Каймасан юрамасть. Тен, саланса кайман пулĕ-ха. Шырасан тупăпăр,— тесе малалла утрăмăр.

Кăшт кайсан, лавсем татти-сыпписĕр киле пуçларĕç. Эпир чугун çул çинчен пăрăнса вăрмана кĕтĕмĕр. Шуррисем чакнине пăхса тăратпăр. Нумай та вăхăт иртмерĕ. Чугун çулпа поезд чашкăрса килни илтĕнчĕ.

— Шуррисем поезд çине тиенсе тараççĕ. Айтăр, крушени тăвар,— терĕм юлташсене.

— Давай!— килĕшрĕç юлташсем.

Лавсем иртсе пĕтрĕç. Çул çинче никам та курăнмасть. Эпир чугун çул çине чупса тухрăмăр та рельса çине кивĕ шпалсем купаласа хутăмăр. Хамăр каллех вăрмана кĕтĕмĕр те крушени пуласса кĕтетпĕр.

Ак поезд çул кукрĕнчен хашкаса тухрĕ. Малта мĕн пуласса кĕтмесĕр пĕрхĕнсе килет. Пĕр çирĕм хăлаç пек çитиччен машинист çул çинче шпал купаланса тăнине курчĕ пулас. Пăравусне çухăртса ячĕ, поездне тормозларĕ пулас. Анчах ĕлкĕреймерĕ. Пăравусĕ шпал купи çине пырса тăрăнчĕ, вагонсем пĕрин çине тепри çите-çите çапăнчĕç, йăвана-йăвана кайрĕç. Çын сассисем шăй-шай илтĕнчĕç. Хăшĕ-пĕрисем вагон чÿречисенчен туха-туха ÿкрĕç. Вагон çине вагон утлана-утлана ларчĕç. Малтан хура тĕтĕм мăкăрланса тухрĕ, унтан купаланса выртакан вагонсене çулăм хыпса илчĕ. Чĕрĕ юлнă офицерсем, буржуйсем, арçынсем, хĕрарăмсем çунакан поезд тавра курăнаççĕ.

— Çав кирлĕ-ха вĕсене,— тесе савăнаççĕ ман юлташсем.

— Сахалтарах пулчĕ те, çитĕ-ха, çĕрле пулнă пулсан,

шăршисем те юлас çук та вĕсен,— тетĕп эпĕ,— айтăр, юлташсем, малалла. Тата мĕн те пулсан тĕл пулмăпăр-и?..

Чугун çул тăрăх вăрман хĕррипе утатпăр. Ҫайсан-кайсан каллех лавпа килекенсене куртăмăр.

— Лашăрсене хăвăртрах хăвалăр! — кăшкăраççĕ лаша утланнă офицерсем.

Лавсем çинче ларса пыракан салтаксем лашасене патаксемпе шартлаттарса çапаççĕ. Анчах ывăнса çитнĕ лашисем салтаксене итлемеççĕ. Пуçĕсене чиксе аран-аран утаççĕ. Салтаксем офицерсем асăрхаман хутлăхран лавсем çинчен сиксе анаççĕ те, вăрманалла тарса кĕрсе, тăрса юлаççĕ. Хăшĕ-пĕрисем лашисемпех пăрăнса вăрманалла кĕреççĕ.

Эпир нумаях та каяймарăмăр, пире хирĕç тепĕр поезд килни курăнчĕ.

— Ав, поезд килет!

— Айтăр, кăна та крушени тăвар,— тесе пыраççĕ ман юлташсем.

Эпир чугун çул çине хăвăрт чупса тухрăмăр та кивĕ шпалсем йăтса рельса çине пăрахрăмăр. Пăхатпăр: пăравус çинче хĕрлĕ ялав вĕлкĕшет.

— Ҫул çинчен шпалсене илсе пăрахăр! Хамăрăннисем килеççĕ,— тесе кăшкăртăм.

Ҫавăнтах шпалсене илсе пăрахрăмăр.

— Ну, юлташсем! погонăрсене татса ывăтăр!— терĕм те, пуçри çĕлĕке хывса, çулваррине тухса тăтăм.

Бронеллĕ поезд эпĕ çул çинче тăнине курсан хаяррăн кăшкăрса ячĕ. Мана пăрăнма хушать. Анчах манăн ăна чармалла, мĕншĕн тесен вăл шуррисен крушени пулнă поезчĕ çине пырса кĕме пултарать.

Эпĕ çĕлĕкпе сулнине ăнланчĕ. Ман пата вунă халаç çитмерĕ, поезд чарăнчĕ.

— Мĕн кирлĕ сана? Ҫам пулатăн эсĕ? Мĕншĕн поезда чаратăн?— тесе, аллине наган тытса, малти вагон çинчен сиксе анчĕ сăран пиншак тăхăннă командир.

— Эпĕ 10-4-мĕш номерлĕ бронеллĕ поезд çинче политрук пулнă Витали Малинкин. Шуррисем патĕнчен тыткăнран тарса килетĕп...

— Малинкин юлташ! Эсĕ вĕт ку!— мана ыталаса илчĕ командир.

Эпĕ те ăна палларăм. Вăл 10-4-мĕш номерлĕ бронеллĕ поезд командирĕ Прохоров юлташ пулчĕ.

— Ну, айта, поезд çине ларатпăр. Марфуша та пи-

рӗнпе. Халь ҫеҫ сана асӑнса калаҫса килеттӗмӗр-ха. Эпир сана вӗлернӗ тесе шутланӑ вӗт,— терӗ Прохоров.

Вагона кӗрсенех мана юлташсем сырса илчӗҫ. Ӑҫта ҫӳренине, мӗнле хӑтӑлнине ыйтса пӗлеҫҫӗ. Эпӗ вӗсене йӗркипе каласа паратӑп. Марфуша, савӑннипе, урӑх сӑмах тупса калама пӗлмест:

— Витя, Витали! Ҫаллех эпир санпа пӗрле!— Куҫӗсене ман ҫинчен илмесӗр пӑхать, тутисем йӑл кулаҫҫӗ.

10-4-мӗш номерлӗ бронеллӗ поезд Новосибирск еннелле чашкӑрса пырать. Тулта юр ҫӑвать. Йӗркесӗр саланса кайнӑ Колчак ҫарӗн салтакӗсем хыҫалалла тӑрса юлаҫҫӗ. Поезд, пырсан-пырсан, пӗр тупӑран: ух! перет. Унӑн сасси шуррисене вилӗм хыпарӗ парать. Революци ҫулӑмӗ пӗтӗм тӗнчене саланать.

# ÇĂЛТĂРЛĂ ÇĔЛĔК

## I

— Андрюш, ачам, вăрмана кайса, хăмла çырли татса таврăн-ха. Вĕретсе, шывне ĕçсе тарласан, тен, кăшт çăмăл пулĕ,— терĕ Андрюшăн иккĕмĕш уйăх чирпе асапланса выртакан амăшĕ — Пăлаки.

— Юрĕ, анне, халех кайса килеп.

Çавăн пек ача вăл Андрюш. Мĕн пĕчĕкренех амăшне итлет. Ăна пур ĕçре те пулăшать. Амăшĕ чирлесе ӳкнĕренпе хăй яшка пĕçерет, кăвас хурать, çăкăр унать, вут хутать. Йăмăкĕ пур та, Ульяна ятлăскер, вăл çамрăкха — çиччĕ çине çеç кайнă.

Андрюш çур витре каякан пурак илчĕ. Унтан кĕсйине пĕр пысăк чĕлĕ çăкăр чикрĕ те:

— Ульяна, эпĕ хăмла çырли татса киличчен эсĕ ниçта та ан кай. Аннене пăх. Шыв ыйтсан — ĕçтер, çиесси килсен — çитер,— терĕ йăмăкне.

— Юрĕ, аннене пăхăп,— тесе юлчĕ Ульяна.

Çулла. Çанталăкăн чи илемлĕ вăхăчĕ çитнĕ. Уйра тырă ĕлкĕрет. Вăрманта тĕрлĕ çырла пиçет. Кайăк-кĕшĕксем тĕрлĕ сасăпа юрласа савăнаççĕ. Пыл хурчĕсем, тĕкĕлтурасем, сăпсасем нăрлатса вĕçеççĕ.

Андрюш çынран çӳлĕ хăмла çырли аврисен хушшинче тин пиçсе кӳпченĕ хĕрлĕ çырласене, пĕрчĕн-пĕрчĕн пуçтарса, пурак ăшне тултарать. Вăл, çамрăк пулсан та, нимрен те хăрамасть. Çапах та аслă тайга ăшĕнче пĕч-

ченçи кичем пек туйăнать. Çавăнпа та Андрюш пырсан-пырсан пĕр шик! шăхăрса илет. Унтан вăл акă юрласа та ярать:

Ан кашла, вăрман, ан кашла,
Çулçу час тăкăнĕ.
Ан авăт, куккук, ан авăт,
Сассу час тытăнĕ...

Çак юрра Андрюш шкулта вĕреннĕ вăхăтра хăй шухăшласа кăларнă. Ăна хăйĕн тетрачĕ çине те çырса хунă. Пултармалла ача. Анчах ашшĕ çук. Çитменне тата амăшĕ чирлесе ӳкрĕ.

Сасартăк инçе те мар, пĕр çын шик! шăхăрчĕ. Андрюш çырла татма чарăнса итлерĕ: «Хăрушă мар, ман пек çырла татакансем татах пур-ха»,— тесе шухăшларĕ. Унтан çын шăхăрнă май утрĕ.

— Эй, кам унта?! — тесе вăрмана янăратса кăшкăрчĕ Андрюш. Сасси инçете кайса тепĕр хут: нта-а... тесе пĕтрĕ.

Хăмла çырли аврисене чаштăртаттарса, Андрюш умне пĕр кĕске пиншак тăхăннă çын тухрĕ. Вăл хулпуççийĕ урлă винтовка çакнă, унăн пуçĕнче вĕçлеке тăрăллă çĕлĕк, çĕлĕкĕн çамки çинче пилĕк кĕтеслĕ хĕрлĕ çăлтăр йăлтăртатать.

— Ача, мĕн вăрман тăрăх çуйăхса çӳретĕн? Аташса кайрăн-им? Упа тытса çиесрен хăрамастăн-им эсĕ, е? — терĕ винтовкăллă çын, Андрюш патнелле пырса.

Андрюш, кĕтмен çĕртен пăшаллă çынна курсан, кăшт хăраса ӳкрĕ. Ун çине тинкерсе пăхрĕ. Çавăнтах хăюлланса илчĕ. Хăйĕн паттăрлăхне палăртасшăн пулчĕ:

— Аташман та эпĕ. Упаран та хăрамастăп!

— Çапах та, мĕн туса çӳретĕн эсĕ вăрманта пĕр-пĕччен?— ыйтрĕ пăшаллă çын.

— Курмастăн-им, хăмла çырли пуçтаратăп.

— Куратăп, пурак йăтса çӳретĕн. А çырлу ăçта?

— Татма ĕлкĕреймерĕм-ха.

— Питĕ хăюллă ача пулас эсĕ, упаран та хăрамастăн,— тесе йăл кулчĕ пăшаллă çын.

— Упаран мĕн хăрамалли. Вăл вĕт çын сассине илтсенех тарать.

— Упасене хăратма кăшкăрса çӳретĕн апла эсĕ?..

— Вăрманта мĕншĕн шăппăн çӳрес. Сасăпа çӳресен кичем мар...

— Çапла. Хăш ял ачи пултăн эсĕ?— йăпăлтатса ыйтрĕ пăшаллă çын.

— Эпĕ, Кедравка ялĕнчен.

— Кунтан инçе-и сирĕн ял?

— Инçе мар, акă, вăрман урлă каçсанах курăнать пирĕн ял.

— Аван. Мĕн ятлă эсĕ?

— Андрюш.

— Аçу мĕн ятлă?

— Атте? Атте манăн Захар ятлă пулнă. Халĕ вăл çук. Пилĕк çул ĕнтĕ, вăрçа кайнăранпа таврăнман. Хамăр та пĕлместпĕр: те вилĕ, те чĕрĕ. Çыру та ямасть,— тесе пĕлтерчĕ Андрюш ашшĕ çинчен.

— Аннӳ пур-и?— йăвашшăн ыйтрĕ пăшаллă çын.

— Пур. Анчах вăл чирлĕ выртать. Паян çавăнпа хăмла çырли татма килтĕм. Хăмла çырли шывĕ вĕретсе ĕçтерсен, çăмăлтарах пулмĕ-ши, тесе шутлатпăр.

— Мĕн чирпе чирлĕ аннӳ?

— Пĕрре яла салтаксем килчĕç те аннене, атте ăçта çӳрени çинчен ыйтса тĕпчесе, хĕнесе, хăратса пĕтернĕ. Çавăн хыççăн тытамак чирĕпе асапланать. Вăхăт-вăхăт аташса выртать. Хамăр та аптранă ĕнтĕ, темле чĕртмелле?

— Йытăсем, пĕр айăпсăр хĕрарăма тарăхтараççĕ,— хăй тĕллĕн калаçса илчĕ пăшаллă çын.

— Йытăран та усалскерсем. Яла пырсан тӳсме çук айĕн-çийĕн пăтратаççĕ. Куçĕсем умне мĕн лекнĕ, пурне те хăйсемпе илсе каяççĕ,— терĕ Андрюш.

Пăшаллă çын Андрюш çине тинкерсе пăхрĕ. Çамрăк пулсан та, вăл шанчăклă ача пек туйăнчĕ.

— Андрюш, эсĕ шуррисен салтакĕсене курнă ĕнтĕ. Усалскерсем. Хĕрлисене пĕлетĕн-и эсĕ?— тесе ыйтрĕ пăшаллă çын.

— Пĕлместĕп. Халиччен курман. Пичче, эсĕ ху кам пулатăн? Хĕрлисем-и, е шуррисем-и?— тĕпчесе ыйтрĕ ача.

— Палла,— тесе, йăл кулчĕ пăшаллă çын.

Андрюш лешĕн куçĕнчен тинкерсе пăхрĕ.

— Ăçтан паллас? Халиччен эпĕ сан пек шĕвĕр тăрăллă, çамки çинче хĕрлĕ çăлтăрлă çĕлĕк тăхăнса çӳрекен салтаксене курман. Акă, сана пирвайхи хут тĕл пултăм. Пирĕн яла пырса çӳрекенсем вĕсем — шуррисем. Çавăнпа питĕ усалскерсем,— терĕ Андрюш.

— Ăçтан пĕлетĕн, тен, эпĕ те усал пулĕ.

— Çук, пичче, эсĕ усал мар. Пичче, кала-ха, мĕнле пилĕк кĕтеслĕ çăлтăр вăл санăн çĕлĕк çамки çинчи?— ыйтрĕ Андрюш.

— Ах, епле эсĕ, ăслă, пурне те пĕлесшĕн. Ку хĕрлĕ çăлтăр вăл пирĕн Хĕрлĕ Çар салтакне пĕлтерет.

— Пичче, апла эсĕ хĕрлисен салтакĕ! Халĕ палларăм ĕнтĕ?— савăнса кайрĕ Андрюш.

— Палларăн. Эпĕ хĕрлисен салтакĕ — партизан,— тесе пĕлтерчĕ пăшаллă çын.

Андрюш салтак куçĕнчен тинкерсе пăхать. Савăннипе ним тума пĕлмест.

— Пичче, пар-ха, эпĕ санăн çăлтăрлă çĕлĕкне тăхăнса пăхам. Мана килĕшет-и вăл? — йăлăнса ыйтрĕ Андрюш.

— Çук, ку çĕлĕке сана тăхăнма юрамасть-ха.

— Мĕншĕн тăхăнма юрамасть?— кăмăлсăр пулчĕ Андрюш.

— Çамрăк-ха эсĕ.

— Çамрăк? Вуниккĕ тултарнă ĕнтĕ эпĕ. Тата пилĕк çултан каччă пулатăн, тет, мана анне.

Пăшаллă çын ахăлтатса кулса ячĕ:

— Ха-ха-ха! Каччă. Ну, юрĕ-ха. Акă, эпĕ сана пĕр ĕç хушам. Çавна тусан, хамăн çĕлĕке тăхăнтартса пăхма пултаратăп.

— Мĕн ĕç?

— Паян эпĕ çимен. Манăн çиес килет. Эсĕ яла кайса çăкăр тупса килме пултаратăн-и? Ахаль мар. Укçа парăп. Çăкăр илсе килсен, çăлтăрлă çĕлĕке тăхăнтартса кăтартăп. Килĕшетĕн-и?

— Пичче, манăн кунтах çăкăр пур. Ме, çи,— терĕ Андрюш, хăйĕн кĕсйинчи чĕлĕ çăкăрне кăларса парчĕ.

— Тавтапуç.— Пăшаллă çын чĕринчен тав турĕ. Вăл çавăнтах çăкăра çыртса илсе чăмла пуçларĕ.

— Пичче, эпĕ сана çăкăр патăм, халĕ çăлтăрлă çĕлĕкне тăхăнтартса пăхтарăн-и?

— Ме, тăхăнса кур,— пăшаллă çын, пуçĕнчи çĕлĕкне хывса, Андрюш пуçне тăхăнтартрĕ.

Андрюшăн кăмăлĕ тулчĕ. Вăл тем пек савăнчĕ. Амăшĕ çĕнĕ кĕпе çĕлесе тăхăнтартсан та, нихăçан капла хĕпĕртемен. Кĕпе мĕн вăл? Ăна çын мĕн çуралсанах тăхăна пуçлать. Вăт ку çăлтăрлă çĕлĕке Андрюш хăй ĕмĕрĕнче пирвайхи хут тăхăнса курать.

— Пăх-ха, пичче, килĕшет-и мана?

— Калама та çук килĕшет. Чăн-чăн хĕрлĕ салтаках пултăн. Шинель тăхăнсан, аллуна пăшал тытсан, паллас та çук,— тесе мухтарĕ пăшаллă çын.

Халĕ ĕнтĕ Андрюшăн çĕлĕке тăхăнса курни çеç сахал, ăна пĕтĕмпех хăйĕн тăвасси килсе кайрĕ.

— Пичче, сут эсĕ ку çăлтăрлă çĕлĕкне мана.

— Ай-ай, епле ача эсĕ. Çук, Андрюш, çĕлĕке сутма юрамасть. Ăна мана командир юлташ панă.

Андрюш кăмăлсăр пулчĕ. Унăн мĕнле те пулин çĕлĕке хăйĕн тăхăнас килет. Ку çăлтăрлă çĕлĕке тăхăнсан, вăл хăй пек ачасен хушшинче командир пулма пултарать.

Пăшаллă çын çакна туйса илчĕ. Ачан кăмăлне хăварасшăн пулмарĕ.

— Андрюш, эсĕ мана ху çиес çăкăра патăн. Уншăн тавтапуç сана. Эпĕ сана тепĕр ĕç хушам. Итлĕн-и?

— Тата мĕнле ĕç? Итлеп!— сиксе ÿкрĕ Андрюш.

— Эпĕ çисе тăраннипе çеç сахал. Манăн вĕт юлташсем те пур. Вĕсен те çиес килет. Эсĕ, яла кайса, нумайрах çăкăр илсе кил. Вара эпĕ сана çак çĕлĕке пуçĕпех пама пултаратăп.

— Чăнах-и! Халех кайса илсе килетĕп, пичче!— кăшкăрса ячĕ Андрюш.

— Мĕншĕн суяс ман сана. Эпĕ вĕт шуррисен салтакĕ мар, пĕлетĕн, хĕрлĕ салтаксем суймаççĕ, чăннине çеç калаççĕ.

— Эпĕ халех, пичче. Эсĕ ниçта та ан кай. Çак вырăнта кĕтсе тăр мана,— терĕ Андрюш, кайма хатĕрленсе.

— Тăхта. Ме укçа, çăкăра укçапа ил. Асту, мĕншĕн, камшăн çăкăр илнине никама та ан кала.

Пăшаллă çын Андрюша хут укçасем кăларса пачĕ.

— Юрĕ, пичче. Эсĕ мана хăвăн çăлтăрлă çĕлĕкне пама шантаратăн. Ман çине те шан. Никам та пĕлмĕ,— терĕ Андрюш, укçисене кĕсйине чиксе.

— Тата ялта шуррисен салтакĕсем пур-и, çук-и — çавна пĕлсе кил.

— Юрать,— Андрюш çавăнтах, хăмла çырли аврисене хумхантарса, ялалла май чупрĕ.

## II

Яла çитсен, Андрюш килне кĕрсе амăшĕпе йăмăкĕн куçĕсене курăнмарĕ. Унта кĕрсен те, вĕсен çăкăр çук. Хăйсем те аран-аран пурăнкалаççĕ. Çавăнпа вăл тÿрех

кӳрше кайрӗ. Пахчисем урлӑ каҫса хӑйӗнчен икӗ ҫул аслӑ Костьӑна тӗл пулчӗ.

— Андрюш, мӗншӗн пирӗн пахча урлӑ каҫса ҫӳретӗн? Хӑяр вӑрлама кӗтӗн-им?— кӑшкӑрса ячӗ Костя.

— Ан шарла, Костя, санӑн канфет ҫиес килет-и?

— Мӗн, санӑн канфет пур-им? Пар, ҫиер,— хӗпӗртесе ӳкрӗ Костя.

— Канфет ҫук та, укҫа пур. Укҫа пулсан, канфет та пур,— тесе йӗкӗлтерӗ Андрюш. Унтан пӗр хут укҫа кӑларса кӑтартрӗ.

— Пар укҫуна! — Халех лавккана кайса канфет илсе килем,— терӗ Костя аллине тӑсса.

Андрюш, Костьӑран кулнӑ пек, укҫине кӑштӑрт кӗсйине чиксе хучӗ.

— Ай-ай, епле эсӗ чее. Хатӗр укҫапа канфет илсе ҫиесшӗн. Ху мӗн паран?— кулса ыйтрӗ Андрюш.

— Мӗн парас манӑн? Ав пахчаран хӑяр парӑп.

— Мӗн тӑвас ман санӑн хӑярупа? Пирӗн хамӑрӑн та хӑяр пур.

— Ну, картаран ҫӑмарта илсе парам.

— Ҫӑкӑр пар. Вара ҫур кӗренке канфет илмелӗх укҫа парӑп.

— Суймастӑн-и?

— Ма суяс ман сана. Малтан ҫӑкӑрна илсе тух. Вара укҫа парӑп. Акӑ вӑл,— Андрюш тепӗр хут укҫине кӑларса кӑтартрӗ.

Костя ирӗлсех кайрӗ. Канфет ҫиесси килнипе сурчӑкне ҫӑтрӗ. Куҫӗсем йӑлтӑр-йӑлтӑр ҫуталаҫҫӗ.

— Эпӗ халех. Кӗтсе тӑр ҫакӑнта,— терӗ Костя. Унтан вӑл, пӳртне хӑвӑрт кӗрсе, амӑшӗнчен вӑрттӑн пӗр пысӑк ҫӑкӑр йӑтса тухрӗ.

— Ме ҫӑкӑр. Пар укҫуна. Асту, ҫур кӗренке канфет илмелӗх.

Андрюш ҫӑкӑрне илсе хучӗ те ним шӑрламасӑр Костьӑна хут укҫа кӑларса пачӗ.

— Ме, пыр, ытти ачасене те кала. Камӑн канфет ҫиес килет, ҫӑкӑр илсе килччӗр ман пата. Эпӗ ҫакӑнта, мунча хыҫӗнче, кӗтсе ларӑп,— тесе калама ҫеҫ ӗлкӗрчӗ Андрюш. Ҫак вӑхӑтра унӑн хӑлхинчен такам алли ярса та тытрӗ.

— А-а... эсӗ, манка чӑпти. Укҫа парса, хӑвӑртан аслӑ ачасене ҫӑкӑр вӑрлама вӗрентетӗн! Канфет ҫитересшӗн!

Андрюш карт! туртӑнчӗ. Пӑхать: Костя амӑшӗ. Вӑл

мунча хутма тесе пынă та ачасем мĕн калаçнине мунчара вăрттăн итлесе тăнă-мĕн.

Андрюш, çакна курсан, Костя амăшĕпе тавлашса тăмарĕ, çăкăра ярса илчĕ те тарчĕ, çатан урлă сиксе каçрĕ.

Костя амăшĕн аллинчен вĕçерĕнеймерĕ.

— Акă сана канфет! Ӳлĕмрен ан хăтлан капла! — тесе хăлхинчен лăскать Костьăна амăшĕ.

Костя мăйкăча лекнĕ куян пек пуçне пăркалать. Куççулĕсем шăпăр-шăпăр юхаççĕ. Амăшĕн алли çирĕп тытнă хăлхаран, вĕçертмест. Хăлхи кăмăрчакĕсем шăтăр-шăтăр тăваççĕ, вутла пĕçертет.

— Каçар, анне. Эпĕ вĕт ăна çăкăра ахаль паман. Укçалла сутнă,— тесе амăшне йăлăнать Костя.

— Ан вăрла! Аннӳнтен вăрттăн ан ил ӳлĕмрен!— тесе такмакла-такмакла лăскать амăшĕ Костьăна хăлхаран.

— Çакна курсан, мунча патне ачасем пуçтарăнчĕç. Костьăна амăшĕ хăлхаран лăсканине хăшĕ пахча çатанĕ çине хăпарса, хăшĕ çатан витĕр пăхаççĕ.

— Мĕншĕн? Мĕн вăрланă вăл?— тесе пĕр-пĕринчен ыйтса пĕлеççĕ ачасем. Анчах тĕплĕн пĕлекен никам та çук. Андрюш пĕлет. Вăл никама та шарламасть. Унăн хăйĕн хуйхă, çăкăр пуçтарса вăрмана илсе каймалла. Унта ăна пăшаллă çын кĕтет. Андрюш вăрах пымасан, вăл пăрахса та кайма пултарать. Вара унăн çăлтăрлă çĕлĕк пĕтет. Костя амăшĕ кансĕрлерĕ. Çав пулман пулсан, халиччен вăл çителĕклĕ çăкăр тупса каятчĕ ĕнтĕ. Çитменне тата Костя амăшĕ Андрюш амăшне: «Ачу укçа таçтан илнĕ. Укçа парса çăкăр пуçтарать. Мĕн тума пуçтарать вăл çăкăр?»— тесе элеклесе кăтартĕ. Чирлĕ амăшне хуйхă пулĕ. Кăшт çăмăлланнăччĕ-ха. Каллех тытса пăрахĕ. Ульяна хăраса пĕтĕ.

Андрюш çапах та пуç усмасть. Ачасене çăкăр илсе пыма хушать. Лешсем тултараççĕ. Андрюш укçа парать. Тепĕр çур сехетрен Андрюш тăватă çăкăр йăтса вăрманалла кĕрсе кайрĕ.

Андрюшран укçа илнĕ ачасем пĕрин хыççăн тепри лавккана пыра-пыра кĕреççĕ. Пурте канфет илеççĕ. Пĕрпĕринпе вăрттăн калаçаççĕ. «Укçа ăçтан илтĕн?— ыйтаççĕ. Анчах пĕри те: «Андрюша çăкăр сутса», тесе калакан çук.

Андрюш çăкăрсене аран йăтса çитерчĕ. Кунĕ ахаль



те шăрăх. Халĕ вăл мунча кĕнĕ пекех чăм шыва ÿкрĕ. Питçăмартийĕсем тăрăх шапăртатса тар юхать. Костя амăшĕ туртса ыраттарнă сылтăм хăлхи хĕрелсе кайнă, вут пек пĕçерет.

Пăшаллă çын Андрюша хаваслăн кĕтсе илчĕ:

— Ах, епле вăйлă эс, ача. Тăвата çăкăр трук йатса çитернĕ.

— Татах та нумайрах илсе килес тенĕччĕ, Костя амăшĕ кансĕрлерĕ,— терĕ Андрюш мухтанса. Унтан ĕç мĕнле пулнине каласа пачĕ.

— Ну, ан хуйхăр уншăн, Андрюш, эсĕ вĕт вăрласа мар, укçа парса илнĕ. Аннÿ: «укçа ăçтан илтĕн?», тесе ыйтсан, çул çинче тупрăм, те,— вĕрентрĕ ăна пăшаллă çын.

Унтан вĕсем хăмла çырли сулхăнне хире-хирĕç ларчĕç.

— Халĕ ĕнтĕ пăртак канар та, унтан эпĕ сана ăсатса ярăп. Пăх-ха, эсĕ яла кайса киличчен, эпĕ сана валли пĕр пурак туллиех хăмла çырли татса пуçтартăм,— терĕ пăшаллă çын, тулли пуракне Андрюш умне лартса.

Андрюш савăнса кайрĕ. Çÿхе тутисене йăл култарчĕ.

— Пичче, эпĕ эсĕ хушнине турăм. Халĕ ĕнтĕ çăлтăрлă çĕлĕкне паратăн-и?

— Ме, тăхăнса лар. Анчах халĕ эпĕ ăна сана ялна парса ямастăп,— терĕ пăшаллă çын, хăйĕн çăлтăрлă çĕлĕкне Андрюш пуçне тăхăнтартса.

— Мĕншĕн?— пÿлсе ыйтрĕ Андрюш.

— Халĕ ăна сана тăхăнса çÿреме юрамасть. Шуррисен салтакĕсем курсан, уншăн сана тĕрмене хупса лартма пултараççĕ. Хăçан эпир, хĕрлисем, шурă салтаксене çĕнтеретпĕр, çавăн чухне вара эпĕ сана çак çăлтăрлă çĕлĕке пусĕпех парăп. Эсĕ ăслă ача вĕт. Килĕшетĕн пулĕ çапла? Ĕнен, эпĕ сана суяс çук,— терĕ пăшаллă çын, Андрюша аллипе хулпуççийĕнчен çупăрласа.

Андрюш пĕр вăхăт кăмăлсăр пулса ларчĕ. Унтан пăшаллă çын çине мĕскĕннĕн пăхса илчĕ.

— Хăçан-ха эсир вăл шуррисене çĕнтеретĕр?

— Вăрах мар юлчĕ, тепĕр икĕ уйăхран эпир вăл тăшмансене çĕнтеретпĕрех. Ун чухне вара эсĕ çак çăлтăрлă çĕлĕке тăхăнса çÿретĕн.

Андрюшăн кăмăлĕ тулнă пек пулчĕ. Унăн хăйĕн те шуррисемпе çапăçасси килсе çитрĕ. Ним шухăшламасăрах:

— Пичче, эпĕ те санпа пĕрле пырам-и?— персе ячĕ.

Пăшаллă çын Андрюшăн куçĕнчен пăхса илчĕ. Унтан ачана йăпатса каларĕ:

— Çамрăкрах çав-ха эсĕ, шăллăм. Тата анну чирлĕ, тетĕн. Ăна пăхас пулать. Эсĕ, манпа пĕрле пымасан та, пире пулăшма пултаратăн. Паянхи пек кашни кун çăкăр илсе килĕн çак вырăна. Яла шуррисен салтакéсем пырсан — пĕлтерĕн. Çаксене туни пирĕнпе пĕрле çӳренинчен те хаклăрах пулĕ. Эпĕ сана уншăн ахаль тумăп. Кирлĕ пулсан, пĕчĕк пăшал та тупса парăп. Эсĕ пĕчĕк пăшал курнă-и? Ак çакăн пеккине,— терĕ пăшаллă çын, пилĕкĕ çумĕнче çакăнса тăракан пăшалне кăларса кăтартса.

Пăшаллă çын ытла ĕнентерсе калаçнипе, Андрюш вăл мĕн хушнине йăлтах тума хатĕр.

— Юрĕ, пичче. Кайран вара эсĕ ан ултала мана. Эпĕ те эсĕ мĕн хушнă, çавна туса пырăп.

— Эпĕ сана улталаса мар, чăн калатăп. Çăлтăрлă çĕлĕк, пĕчĕк пăшал санăн пулĕç. Килĕшетĕн-и?

Вĕсем çапла калаçса ларнипе хăйсем те сисмен, сасартăк:

— Стой... Руки вверх!— ахăрчĕ пĕр сасă.

Пăшаллă çын хăвăрт сиксе тăчĕ те хăмла çырли аврисем хушшипе пĕрхĕнсе кĕрсе кайрĕ. Вăл Андрюша тăхăнтартнă çăлтăрлă çĕлĕкне те манса хăварчĕ.

Курăк ăшĕнче ларакан Андрюша шуррисен салтакĕсем асăрхаса пăхмарĕç. Пăшалĕсене хатĕр тытса, партизан хыçĕнчен тапса сикрĕç.

— Стой!— кăшкăрчĕç вĕсем. Пăшал сассисем кĕрлесе вăрмана янратрĕç. Андрюш курса та юлаймарĕ, умĕнчен те упа, те кашкăр курăка çĕмĕрсе тепĕр еннелле тарчĕ.

Халĕ ĕнтĕ Андрюш чухласа илчĕ. Вăл пуçĕнчи çăлтăрлă çĕлĕкне хывса аллине тытрĕ те курăк хушшинчен тăвată уран упаленсе инçетелле тарчĕ.

Пăшал пенисем çавах ухлатса илтĕнеççĕ. Унтан Андрюш ури çине тăрса чупрĕ: «Тăшмансем персе вĕлерчĕç пулĕ», тесе шухăшларĕ, партизана шеллесе. Кăмăлĕ хуçăлчĕ. Куçĕсем ирĕксĕрех шывланчĕç. Çул çине тухрĕ те килнелле утрĕ. Аллинчи çăлтăрлă çĕлĕкне темиçе хутчен тăхăна-тăхăна пăхрĕ.

## III

Килне Андрюш салхуллăн пырса кĕчĕ.

Амăшĕ Андрюшăн аллинчи çăлтăрлă çĕлĕкне асăрхарĕ:

— Ара, ачам. Мĕнле тĕнчере çук çĕлĕк илсе таврăннă эсĕ? Кам пачĕ? Ăçтан тупрăн?

Андрюш çăлтăрлă çĕлĕке ăçтан илнине амăшне пĕлтермерĕ.

— Вăрманта çӳренĕ чухне тунката çинчен тупса илсе таврăнтăм. Малтанах эпĕ ăна йывăç кăмпи тесе. Тытса пăхрăм та, çĕлĕк пулчĕ тăчĕ. Тупнă япалана пăрахса хăвармарăм. Илсе таврăнтăм,— тесе суйрĕ вăл.

Ульяна пиччĕшĕн аллинчи çăлтăрлă çĕлĕкне илсе пуçне тăхăнчĕ те:

— Пичче, пăх-ха, пăх. Мана килĕшет-и?— тесе путек пек сиккелерĕ.

— Хĕрачасене валли мар вăл. Арçын ачасене çеç килĕшет,— терĕ Андрюш.

Ульяна кăмăлсăр пулчĕ. Пуçĕнчи çĕлĕкне хывса калле Андрюша пачĕ.

— Хăвах тăхăнса çӳре эппин,— терĕ тутисене мăкăртса.

Амăшĕ Андрюша ĕненчĕ: «Çĕлĕкне чăнах та вăрмантан тупнă пулĕ», тесе шухăшларĕ. Тыткаласа пăхрĕ.

— Питĕ лайăх çĕлĕк. Хĕлле, сивĕ вăхăтра тăхăнсан, хăлхусене ăшăтма çунаттисем те пур,— тесе мухтарĕ.

Ульяна урама выляма тухса чупрĕ.

— Пирĕн пичче, вăрмана хăмла çырли татма кайсан, шĕвреке тăрăллă, çамки çинче хĕрлĕ çăлтăрлă çĕлĕк тупса таврăннă,— тесе пĕлтерчĕ хăйĕн тантăшĕсене.

Çакăн хыççăн Андрюшăн çăлтăрлă çĕлĕкĕ çинчен ялти ача-пăчасем те пĕлчĕç. Çăлтăрлă çĕлĕк курма пыра пуçларĕç.

— Андрюш, çăлтăрлă çĕлĕкне кăтарт-ха. Эпир те курар,— тесе ыйтаççĕ.

Андрюш, кăтартасшăн мар пулса, турткаланса тăчĕ.

— Нимĕнле çăлтăрлă çĕлĕк те çук манăн. Кăмпа вăл,— тесе пытарасшăн тăрăшрĕ вăл.

Çук, Ульяна хăй пиччĕшĕн суйине кăларчĕ:

— Суять, кăмпа мар. Чăн-чăн çăлтăрлă çĕлĕк. Хам тăхăнса куртăм. Мана ĕненмесессĕн, ав, аннерен ыйтăр.

Вăл та тытса пăхрĕ,— тесе янăрать Ульяна ачасен умĕнче.

Андрюшăн ним тума та пулмарĕ, çăлтăрлă çĕлĕке ачасене кăтартмаллах пулчĕ.

— Ăçтан илтĕн?

— Кам пачĕ?— тесе тĕпче пуçларĕç ачасем.

Андрюш ачасене те амăшне калана пекех:

— Вăрмантан, тунката çинчен тупрăм,— тесе суйрĕ.

Ача-пăчасем шалт тĕлĕнеççĕ. Хăшĕ ĕненсех пăрахрĕç, хăшĕсем иккĕленеççĕ:

— Атьăр эпир те кайса шырар. Тен, татах пур пулĕ унта çакăн пек çăлтăрлă çĕлĕк.

— Суять вăл. Кам пăрахса çӳретĕр унта çакăн пек çăлтăрлă çĕлĕке,— тесе пĕр-пĕринпе тавлашаççĕ.

Костьăпа Миша, никама пăхмасăр, вăрмана кайса çăлтăрлă çĕлĕк тупасшăн шыраса çӳрерĕç. Çапах та вĕсем ахаль таврăнмарĕç. Андрюшăн хăмла çырли татса тултарнă пуракне, унтан тăватă çăкăр тупса таврăнчĕç. Вĕсем хăйсен Андрюша укçалла сутнă çăкăрĕсене палларĕç. Ачасем шухăша путрĕç:

— Мĕне пĕлтерет-ха ку? Пиртен укçа парса çăкăр илчĕ. Унтан вăрмана кайса пăрахнă?— тесе тĕлĕнеççĕ.

Андрюш çăлтăрлă çĕлĕк çинчен пĕлтернĕшĕн Ульянана çиленнĕ.

— Карма çăвар. Мĕне кирлĕччĕ сана çăлтăрлă çĕлĕк çинчен çынсене пĕлтерме? Хам йăнăш турăм. Сана кăтартмалла марччĕ,— тесе пĕр йăмăкне вăрçать, пĕр хăйне хăй ятлать.

Çăлтăрлă çĕлĕк хыпарĕ часах пĕтĕм яла сарăлчĕ. Малтан ача-пăчасем пĕлчĕç. Унтан ваттисем те сисрĕç. Пурте тĕлĕнеççĕ. Тĕлĕнмесен те май çук. Кун пек шĕвреке тăраллă, çамки çинче хĕрлĕ çăлтăрлă çĕлĕке никам та халиччен курман.

Костьăпа Миша амăшĕсенчен вăрттăн сутнă çăкăрĕсене килĕсене илсе таврăнмарĕç. Андрюш патне кĕртсе пачĕç.

— Ме çăкăрусене, пуракна. Çăлтăрлă çĕлĕк тупнипе савăнса кусене те манса хăварнă.

Андрюш тин астуса илчĕ хăйĕн пуракĕпе çăкăрĕсем çинчен. Пăшаллă çынна пĕтĕм чунĕнчен хĕрхенчĕ: «Персе вĕлерчĕç ĕнтĕ ăна. Унсăрăн вăл кайран та пулин çăкăрĕсене пырса илсе кайнă пулĕччĕ. Ыран кайса пă-

хап-ха. Тен, чĕрех юлнă пулĕ. Ҫаллех тĕл пулăпăр», тесе шухăшларĕ.

Ҫăлтăрлă ҫĕлĕк пирки нумай каласрĕҫ ялти ҫынсем. Мĕнле ҫĕлĕкне никам та пĕлекен ҫук. Пĕр Андрюш ҫеҫ пĕлет. Анчах вăл никама та пĕлтересшĕн мар, пытарать.

Сасартăк: «Яла шуррисем килсе ҫитнĕ», текен хыпар сарăлчĕ.

— Ачам, пытар ҫĕлĕкне. Тем курса тăрăпăр ун пирки,— тесе асăрхаттарчĕ Андрюша амăшĕ.

Андрюш, ҫăлтăрлă ҫĕлĕкне пӳрт тăррине хăпартса пытарас тесе, аллине тытса тухатчĕ. Ăна хирĕҫ пĕр офицерпа тепĕр салтак пырса кĕчĕҫ.

— Тăхта-ха, ача. Мĕн ку санăн аллунта?— тесе чарчĕ офицер Андрюша.

— Ҫĕлĕк,— терĕ Андрюш хăранă сасăпа.

— Пар-ха кунта,— офицер Андрюш аллинчен карт туртса илчĕ ҫĕлĕке. Унтан ҫаврăкаласа пăхрĕ:

— Ăҫтан илтĕн? Ҫам пачĕ ку ҫĕлĕке сана?

— Хăмла ҫырли татма кайсан, тунката тăрринчен тупса таврăнтăм...

— Ан суй, анчăк ҫури! Ҫала тӳррипе! Ăҫтан илтĕн? Ҫам пачĕ?— шăлне ҫыртса ахăрчĕ офицер.

— Никам та паман. Ҫаларăм вĕт сире: вăрмантан тунката тăрринчен тупса таврăнтăм, тесе.

— Ха-ха-ха! Пĕчĕккĕ пулин те епле суять вăл!— лахлатса кулчĕ офицер.

— Мĕн мăшкăллатăн. Пар ҫĕлĕке,— Андрюш офицер аллинчи ҫĕлĕке туртса илме тăчĕ.

Офицер Андрюш ҫине куҫĕсене хĕссе пăхрĕ те:

— Ах, анчăк. Эсĕ тата манпа тавлашма-и-ха! Акă сана!— пĕтĕм вăйĕпе Андрюшăн пуҫĕнчен чăмăрĕпе ҫапрĕ.

Андрюш ҫĕр ҫумне хутланса ларчĕ. Аллисемпе пуҫĕнчен ярса тытрĕ:

— Ой!

— Халех штаба леҫсе хăвар. Унта каласа парĕ,— терĕ офицер, хăйпе пĕрле пынă салтак ҫине пăхса.

— Слушаюсь, ваше благороди!—терĕ салтак. Унтан Андрюша аллинчен тытса ури ҫине тăратрĕ.

— Ара, пысăк пуҫăрпа мĕншĕн эсир ачана хĕнетĕр? Мĕн айăп турĕ вăл сире?— чирлĕ амăшĕ, чупса тухса, Андрюша ҫăлса юласшăн пулчĕ.

— Қай, вата кăркка!— офицер Андрюш амăшне урипе тапса йăвантарчĕ.

Икĕ уйăх ытла чирпе асапланса типсе хăрнă мĕскĕн хĕрарăм çĕре сăмсипе чикĕнсе анчĕ.

Салтак Андрюша, кашкăр сурăх путеккине тытса кайнă пек, сĕтĕркелесе урама илсе тухрĕ.

— Йытăсем. Ачана ăçта илсе каятăр?!— кăшкăрса юлчĕ Андрюш амăшĕ.

Офицер çӳçĕ-пуçĕ сапаланса кайнă хĕрарăм çине йĕрĕнчĕклĕн çаврăнса пăхрĕ те:

— Ан ахăр. Халех персе пăрахăп! Йытă ами!— тесе кăшкăрса пăрахрĕ.

## IV

Салтак Андрюша сĕтĕркелесе штаба çитерчĕ. Хĕнесе ăнтан янипе, пирĕн Андрюш аран сулкаланса тăрать. Сăмси-çăварĕ, пичĕ-куçĕсем юнпа, тăпрапа вараланса пĕтнĕ, кĕпи çурăкĕсенчен ӳчĕ курăнать. Ури туписем, атăпа тапнипе, кăвакара-кăвакара тухнă.

— Ваше высокороди. Акă çакă ача ĕнтĕ вăл красноармеец шлĕмне тăхăнса çӳрекенни,— тесе пĕлтерчĕ салтак. Унтан Андрюшăн çăлтăрлă çĕлĕкне сĕтел çине хучĕ.— Акă шлĕмĕ те.

Хурчка пек курпун сăмсаллă, вăрăм мăйăхлă, кукша пуçлă, чармак куçлă, шатра питлĕ полковник пĕрре çăлтăрлă çĕлĕк çине, унтан ӳсĕр çын пек аран сулкаланса тăракан Андрюш çине пăхса илчĕ.

— Ну, кала! Ăçтан илтĕн ку çĕлĕке эсĕ?— шăлĕ витĕр ыйтрĕ полковник.

— Илмен эпĕ ăна. Вăрмантан тупрăм,— кĕскен ответлерĕ Андрюш юнлă сурчăкне çăтса янă хыççăн.

— Вăрмантан? Қам пăрахса хăварнă-ши ăна унта?

— Пĕлместĕп,— пуçне пăркаларĕ Андрюш.

— Çапла... Пĕлместĕн?— полковник ури çине тăрса, каллĕ-маллĕ утса çаврăнчĕ. Унтан Андрюш умне пырса тăчĕ.

— Пĕлместĕп, тетĕн? Қала-ха, эсĕ камсене юрататăн? Офицерсене-и е комиссарсене-и?

Андрюшăн, вăйĕ пĕтнипе, пуçĕ çаврăнса кайрĕ. Вăл тăнă çĕртех урайне чĕркуçленсе ларчĕ. Полковник мĕн каланине те лайăххăн илтмерĕ.

— Шыв ĕçтер!— хушрĕ полковник, алăк патĕнче юпа пек хытса тăракан салтака хушса.

— Слушаюсь!— Салтак тулалла хăвăрт тухса, витрепе шыв йатса кĕчĕ те, пĕр курка тултарса, Андрюшăн çăварĕ патне илсе пычĕ.

Андрюш куркари шыва пĕр канмасăр ĕçсе ячĕ. Çăмăл пек туйăнчĕ. Хăш сывларĕ.

— Ну, кала: офицерсене юрататăн-и эсĕ, е комиссарсене-и?— тепĕр хут ыйтрĕ полковник.

Андрюш ури çине тӳрленсе тăчĕ.

— Никама та юратмастăп,— хуллен каларĕ.

— Комиссарсене те юратмастăн? Апла пулсан, мĕншĕн-ха эсĕ вĕсен çĕлĕкне тупса тăхăннă? Мĕншĕн офицерсен картузне тупса тăхăнмастăн? — йĕкĕлтесе ыйтрĕ полковник.

Андрюш пĕр вăхăт чĕнмесĕр шухăша кайса тăчĕ. Унтан кантри татăлнипе анса ларакан йĕмне çӳлерех çĕклерĕ те:

— Хĕрлĕ çăлтăрлă вăл çĕлĕк, çавăнпа эпĕ ăна юрататăп,— терĕ.

Полковник хăйĕн картузне аллине илчĕ:

— Пăх-ха, офицерсен те картуз çамки çинче çăлтăр пекки пур. Кăна юратмастăн-им? — тесе картуз кокардине пӳрнипе тĕксе кăтартрĕ.

— Вăл çăлтăр мар. Ăмăрткайăк. Шăвăç татăкĕ,— терĕ Андрюш.

Полковник ачапа шӳт тума хăтланчĕ пулас:

— Ну-ка, офицер картузне тăхăнса пăх. Килĕшет-и сана,— тесе Андрюшăн пуçĕ çине картузне лартрĕ.

Андрюшăн çилли тулса çитрĕ. Вăл пуçĕнчи полковник картузне хывса илчĕ те урайне çĕклесе çапрĕ:

— Мĕншĕн эсĕ мана мăшкăлласшăн? Хăвăн кукша пуçна тăхăнса çӳрекен таса мар картузна манăн таса пуç çине лартса çӳçсĕр хăварас тетĕн-им!

Картузне çĕре çĕклесе çапсан, полковник çиленсе кайрĕ, Андрюш ăна парăнасла ача маррине туйса илчĕ.

— Халех илсе тухса, ав, мукаçей кĕлетне хупса лартăр. Çамки тирĕ çине, шлем çумĕнчи çăлтăрпа виççе, çăлтăр касăр. Ыран йрхине кăтартăр,— тесе приказ пачĕ полковник.

— Рады стараться, ваше высокороди,— тесе честь пачĕ салтак, Андрюша аллинчен çавăрса тытрĕ.

— Ан тыт мана алăран! Эпĕ хам та утса тухатăп,— терĕ Андрюш, салтак аллине чышса ярса.

Шăп çав вăхăтра тата икĕ салтак тепĕр çынна штаба илсе пырса кĕчĕç.

Андрюш пуçне çĕклесе пăхрĕ. Вăл хăйĕн умĕнче хайхи вăрманта курса калаçнă пăшаллă партизана курчĕ: «Вĕлермен. Чĕрĕлле тытса килнĕ», тесе шухăшларĕ. «Пичче», тесе чĕнме тăчĕ. Çук, шарламарĕ.

— Ну, ну, ут! Мĕн куçна чарса пăрахрăн!— салтак Андрюша, ĕнсинчен чышкаласа, алăкран кăларса ячĕ.

Партизан ача çине тинкерсе пăхса илчĕ: «Ку ачана мĕншĕн айăпласа тыткăна илнĕ-ши?»— тесе шухăшларĕ.

Сĕтел çинче выртакан хăйĕн шлемне курсан тин чухларĕ вăл Андрюша мĕншĕн айăпланине. Хăйĕнчен ытла Андрюша шеллерĕ.

— Сволочь! Ачана çапиччен мана çап!— тесе кăшкăрчĕ партизан, салтак çине пăхса.

— Ну, ну, хуллентерех. Эсĕ вĕт кунта тайга вăрманĕнче мар,— тесе малалла чышса ячĕ пĕр салтакĕ партизана.

Аллисене хыçалалла туртса çыхнă партизан урай варрине тăсăлса ӳкрĕ.

— А-а... Ку ватти лекнĕ,— савăнса кулчĕ полковник.

Салтаксем полковник хушнине пурнăçлама пуçларĕç, Андрюш умĕнчех çĕлĕкне çуркаласа, хĕрлĕ çăлтăрне хăйпăтса илчĕç.

— Ну, ача, тӳс. Кайран атаман пулăн,— терĕ пĕр салтакĕ, Андрюшăн аллисене хыçалалла çавăрса тытса.

Тепĕр салтакĕ хĕрлĕ çăлтăрне, Андрюшăн çамки çине хурса, виçсе пăхрĕ.

— Аван, шăп кĕрсе ларать. Ха-ха-ха!— ахăлтатса кулчĕ.

Андрюш малалла мĕн пуласса кĕтет. Мел пулсан, хăй шухăшĕпе, салтаксене тем туса тăкĕччĕ. Анчах вăл çамрăк — вуникĕ çулхи ача, мĕн тума пултартăр. Салтаксем иккĕн, ватă, сухаллăскерсем. Вĕсен аллисенче пăшал. Андрюшăн нимĕн те çук, пушă алăпа. Кĕсйинче пекĕ пурччĕ. Ăна та туртса илчĕç. Çав пекĕ пулсан, вăл халех салтаксен хырăмĕсене чике-чике çурса, пырши-пакартисене юхтарса кăларĕччĕ. Мĕнле намăс мар-ши çак салтаксене пĕчĕк ачана асаплантарма?

Салтак хĕç вĕçĕпе Андрюшăн çамки тирĕ çине пилĕк кĕteслĕ çăлтăр каса пуçларĕ.

Андрюш мĕнле çирĕп ача пулсан та:

— Ой! ой!— кăшкăрать. Питçăмартийĕсем тăрăх шăпăртатса вĕри юн юхса анать.

— Ан ахăр. Ку çăлтăр ĕнтĕ çĕлĕк çумĕнчи çăлтăр пек мар, çĕтĕлмĕ, кивелмĕ, ĕмĕрпех çамку çумĕнче çакăнса çӳрĕ,— мăшкăлласа кулать салтак.

Чылай асаплантарсан, Андрюшăн сасси лăпланчĕ. Нумай юн юхнипе тăнĕ çухалчĕ. Малалла мĕн пулнине тĕлĕкри пек çеç астăвать. Куçĕ умĕнче сухаллă салтаксем мĕлке пек мĕкĕлтетеççĕ.

Каç пулчĕ. Çанталăка каçхи хура сăн хупласа илчĕ. Ялта йытăсем вĕреççĕ. Унта-кунта çынсем кăшкăркалани илтĕнет.

Нумай-и, сахал-и вăхăт иртсен, суранлă çамки вут пек пĕçерсе ыратнипе тата çунса каяс пек ĕçесси килнипе, Андрюшăн тăнĕ çитсе кĕчĕ. Юн хĕвĕнсе, куçхупанкисем çĕленсе ларнă куçĕсене пӳрнисемпе тăрмаласа уçрĕ. Йĕри-тавра пăхкаларĕ: кĕлетре тĕттĕм, нимĕн те курăнмасть, шăшисем çеç чик-чик тукалаççĕ. «Чăн-ши ку, тĕлĕк-ши. Ăçта-ши эпĕ — шухăшлать. Чухласа илеймест. Аллипе хыпаласа пăхать. Çук, тĕлĕк мар, хĕнесе пĕтернипе ӳт-тирĕ йĕппе чикнĕ пек ыратать. Çăвар ăшĕ типсе ларнă. Чĕлхине çыртса пĕтернипе шыçăнса кайнă çăвар калама та çук ыратать. Ура çине тăчĕ. Йĕри-тавра стена. Пĕр вырăнтан çеç пăртак çутă курăнать. Çутă патне утса пычĕ. Чухларĕ—кĕлет алăкĕ. Хăмаран пуранă çӳлĕ пӳлме. Ун ăшĕнче тырă. Андрюш вăрманта тĕл пулнă пăшаллă çынна аса илчĕ: «Халĕ мĕн турĕç-ши ĕнтĕ ăна? Ăçта хучĕç-ши? Вĕлерчĕç пулĕ», тесе шухăшларĕ. Кĕлет алăкĕ шăтăкĕнчен пăхрĕ. Тулта пĕр салтак пăшал тытса тăрать: «Мана хураллать ĕнтĕ ку. Мĕнле хăтăлас. Çутăлсан каллех асаплантараççĕ ĕнтĕ вĕсем мана», тесе шухăшлать. Çав вăхăтра унăн хыçĕнче пĕр çын йывăррăн сывласа ахлатрĕ.

Андрюш аллисемпе хыпашласа çынна тупрĕ:

— Кам эсĕ?— пăшăлтатса ыйтрĕ.

— Эпĕ,— хăрăлтатрĕ çын.

Андрюш ăна сассинчен палларĕ, вăл хăйне çăлтăрлă çĕлĕк паракан партизан пулчĕ.

— Пичче, эсĕ вĕт ку!— хăй те сисмерĕ, чутах кăшкăрса яратчĕ.

— Асту, ытла ан шарла, шăллăм. Хурал тăракан салтак илтĕ,— терĕ партизан хуллен. Унтан вĕсем пă-

шăлтатса калаçа пуçларĕç. Андрюш хăйĕн çамки тирĕ çине çăлтăр каснине каласа пачĕ.

— Ы-ых, тăшмансем! Ну, ан хуйхăр, Андрюш. Пире вĕлерсен те, хĕрлисем пурпĕрех вĕсене çĕнтереççĕ. Ун чухне вара хăйсене те пĕр пек кучченеç пулĕ,— тесе Андрюша ыталаса юратрĕ партизан.

Тĕттĕм çĕр майĕпен шуса иртет. Ял лăпкă мар. Унта та кунта ача-пăчасем йĕреççĕ. Пĕри таçта «хурах!» кăшкăрать.

— Ав, илтетĕн-и, Андрюш, яла çаратаççĕ салтаксем.

— Илтетĕп,— пăшăлтатать Андрюш.

— Андрюш, мĕнле тухса тарас пирĕн ку кĕлетрен?— тет партизан хуллен.

Вĕсем шуррисен тыткăнĕнче, кĕлетре хупăнса ларaççĕ пулсан та, шанчăкĕсене çухатмаççĕ. Мĕнле те пулсан хăтăлма тăрăшаççĕ. Апла та, капла та пурпĕр вилĕм. Вăхăт кĕтмест. Çĕр иртет. Çутăласси çывхарать. Автансем иккĕмĕш хут авăтса ячĕç.

Андрюш аллисемпе хыпашласа пӳлме çине хăпарчĕ.

— Пичче, кĕлет тăррине улăмпа çеç витнĕ. Улăмне çăлса шăтаратăп.

— Шăтар.

Андрюш улăма чаштăртаттарса çăла пуçларĕ. Васкаса ĕçленипе çан-çурăмĕ ыратнине, вăйĕ пĕтнине манса кайрĕ. Пĕтĕм шухăшĕ: мĕнле те пулсан хăтăлас. Хăй çеç мар, пуринчен ытла унăн партизана çăлас шухăш. Пилĕк минутран кĕлет тăрринчи улăма шăтарчĕ. Малтан пуçне кăларса пăхрĕ. Курать: хăйсене хурал тăракан салтак кĕлет çумне тăнă та, пăшалĕн кĕпçи çине таянса, тĕлĕрет.

— Пичче, тухмалли шăтăк хатĕр. Кам малтан тухать?— тесе ыйтрĕ Андрюш.

— Эсĕ тух, Андрюш. Иксĕмĕртен пĕри хăтăлма тивĕçлĕ эпир. Андрюш, эсĕ хăтăлсан тӳрех вăрмана, хамăр курса калаçнă вырăна кай. Унтан инçе мар пĕр вар пур. Çавăнта пирĕн партизансен отрячĕ тăрать. Вĕсем эпĕ шуррисен аллине тыткăна лекнине пĕлмеççĕ. Яла кайнă тесе, кĕтеççĕ ĕнтĕ. Çитсенех кунти ĕçсем çинчен каласа пар,— тесе вĕрентрĕ партизан.

— Юрĕ, пичче.

Акă Андрюш шăтăкран тухрĕ. Шурăмпуç çăлтăрĕ фонарь çутнă пек ялтăртатса хăпарать. Автансем авăтаççĕ. Ял çывăрать. Тутлă ыйхă вăхăчĕ çитнĕ. Андрюш, кушак

пек, çĕре пĕр сасăсăр анчĕ. Салтак сисмерĕ. Вăл пăшалĕ çине таяннă та хăрăлтатсах çывăрать. Тен, ним сисмесĕрех тăрса юлчĕ пулĕ. Анчах Андрюш салтак çине пăхса утнипе урлă выртакан пĕренене курмарĕ те, ун çине такăнса ӳкрĕ. Салтак ыйхинчен вăранчĕ.

— Стой! Қам çӳрет кунта?— кăшкăрса вăл пăшалне пеме хатĕр тытрĕ.

Андрюш сиксе тăчĕ те, пĕтĕм вăйне пуçтарса, тепĕр кĕлет хыçнелле тапса сикрĕ. Унтан, çатан урлă сиксе каçса, пахчаналла кĕрсе кайрĕ.

— Стой!— салтак Андрюш хыçĕнчен хăваласа пырать. Пăшалĕпе пересшĕн пулчĕ, переймерĕ. Ача таçта кĕрсе кайрĕ.

Çак вăхăтра партизаншăн калама çук усăллă вăхăт пулчĕ. Вăл çăмăлах тарса хăтăлчĕ.

Андрюш пĕр еннелле, партизан тепĕр еннелле тарса курăнми пулчĕç. Салтак унталла чупрĕ, кунталла пăхрĕ, нимĕн те тăваймарĕ. Тыткăнри çынсене тартнăшăн хăйне айăпласран хăраса, кĕлет алăкне питĕрнĕ çăрине çапса ватрĕ те алăкне уçса пăрахрĕ. Унтан хаяр сасăпа:

— Хурах! Хурах!— кăшкăрса, пăшалĕпе çӳлелле пере пуçларĕ. Пăшал сассине илтсен офицерсем, салтаксем пуçтарăнчĕç.

— Мĕн пулчĕ?— ыйтаççĕ.

— Ялти мужиксем темиçен пуçтарăнса килчĕç те, хама хупăрласа илсе, тытса тăчĕç. Ав, кĕлет алăкне питĕрнĕ çăрана çĕмĕрсе, тыткăнри çынсене кăларса ячĕç. Унтан хăйсем те тарса пĕтрĕç,— тесе суйрĕ салтак. Çук, салтак пурпĕрех хăйĕн айăпне пытараймарĕ. Урса çитнĕ полковник наганне тытса кăларчĕ те çавăнтах салтака персе пăрахрĕ.

## VI

Андрюш, пахчасем урлă каçса, анкартисем хыçне тухрĕ. Унтан вăл тӳрех вăрманалла кĕрсе кайрĕ, партизанпа курса калаçнă вырăна пычĕ. Пăхкаларĕ. Никам та курăнмасть. Унтан вăл, партизан каланă тăрăх, вар еннелле утрĕ. Тӳсме çук ĕçесси килет, суранĕсем чикĕшсе ыратаççĕ. Қурăк çине вăйлă сывлăм ӳкнипе шыва кĕрсе тухнă пек йĕп-йĕпе. Йĕплĕ курăксем çара урисене чиксе ыраттараççĕ. Андрюш ăна пăхмасть. Вăл вараллла васкаса анать. «Вар тĕпĕнче шыв пур ĕнтĕ. Пĕр тăрани-

чен ĕçетĕп,— тесе шухăшлать.— Унтан партизансене шырама пуçлатăп. Пичче хăтăлчĕ-ши?» — хăйпе пĕрле кĕлетре ларнă партизана аса илет.

Умĕнче сасартăк курăк чăштăр-чăштăр туса илчĕ. Андрюш хăраса ӳкрĕ. Чарăнса тăчĕ. Мĕн унта? Тен каллех шуррисен салтакĕсем? Андрюш шăппăн итлесе тăрать. Малалла мĕн пуласса кĕтет. Шуррисен салтакĕсем пулсан — халех тапса сикме хатĕр. Кам пĕлет, тен унта партизансем çĕр каçнă? Халĕ ыйхинчен вăраннă. Апла тесен — калаçĕччĕç, сас-чӳ илтĕнмест.

Андрюш çапах та курăк чаштăртатакан çĕрелле хуллен утса пычĕ. Пăхать: унта упа амăшĕ икĕ çурине чĕчĕ ĕмĕртсе выртать.

Андрюш хăратам тесе шутларĕ:

— Уй!— кăшкăрса ячĕ.

Упа амăшĕ мĕкĕрсе икĕ ури çине сиксе тăчĕ. Андрюш патнелле пырать. Ача хăранипе çаврăнса тарма тăчĕ, курăкпа çыхланса ӳкрĕ. Упа вăрăм-вăрăм ярса пусать. Хыçĕнчен çурисем сиккелесе выляса пыраççĕ. «Шуррисенчен тарса хăтăлтăм. Упа çăварне çитсе лекрĕм»,— тесе шухăшларĕ Андрюш. Хăй те сисмерĕ:

— Пулăшăр!— тесе чун-хавалĕпе кăшкăрса ячĕ. Вăрман таçта çити янраса кайрĕ.

Андрюш аран сиксе тăчĕ, йывăç тăррине хăпарса кайма хătланчĕ. Упа амăшĕ çывăхах çитрĕ. Акă халех туртса çурма хатĕр. Шăлĕсене шатăртаттарать, сурчăкне сирпĕтет.

Андрюш йывăç тăррине хăпарма ĕлкĕреймерĕ. Урăх йывăç патне чупса пырса, пытанса тăчĕ. Упа йывăçа малти урисемпе ыталаса тытрĕ.

Çав вăхăтра Андрюш хăйĕнчен инçе мар пĕр çын курчĕ. Ку çын та шĕвреке тăрăллă, хĕрлĕ çăлтăрлă çĕлĕк тăхăннă. Аллине пăшал тытнă.

— Пичче, пулăш! Упа тытать мана!— йăлăнса, чунхавалĕпе кăшкăрчĕ Андрюш.

Партизан пăшалĕпе упа амăшĕн çамкинчен тĕллерĕ те ух! персе ячĕ.

Упа мĕкĕрсе месерле çаврăнса ӳкрĕ. Çурисем амăшĕ çине сиксе ларчĕç. Вĕсем амăшĕ ĕмĕртме выртрĕ терĕç курăнать, чĕчĕ ĕмесшĕн нăйкăшаççĕ.

Андрюш пăшаллă çын патне пычĕ.

— Пичче, халĕ те эсĕ пултăн. Унсăрăн вăл мана халех тытса çиетчĕ,— терĕ Андрюш чĕтрекен сассипе.

Пăшаллă çын, Андрюшăн юнлă питне-куçне, çуркаланса пĕтнĕ кĕпи-йĕмне курсан, тĕлĕнсех кайрĕ.

— Ара, ачам, сана упа тулларĕ-им?— тесе ыйтрĕ.

— Çук, упа мар. Эпĕ шуррисен аллинчен тарса хăтăлтăм. Вĕсем манăн çамка тирĕ çине санăн çĕлĕк çумĕнчи çăлтăр пек çăлтăр касса мана асаплантарчĕç. Манпа пĕрле тепĕр партизан пурччĕ. Пĕлместĕп, вăл те хăтăлчĕ, те çук. Хăтăлаймарĕ пулсан, паян вĕлереççĕ ĕнтĕ ăна,— тесе пĕлтерчĕ Андрюш.

— Ав, мĕншĕн упа сана тапăннă. Эсĕ юнлă... Леш, эсĕ пĕлекен партизан мĕнле çын вăл?— ыйтрĕ пăшаллă çын.

— Сан пекех, çăлтăрлă çĕлĕк тăхăнса çӳрет. Пăшалĕ те пур,— пĕлтерчĕ Андрюш. Унтан вăл ĕç мĕнле пулнине каласа пачĕ.

— Ачам, айта хăвăртрах. Упа амăшĕ вилнĕ. Çурисем амăшне пăрахса ниçта та каймĕç. Вĕсене кайран тирпейлĕпĕр. Леш, санпа пĕрле пулнă партизан вăл — пирĕн отрядран. Ăна хăтарас пулать,— терĕ пăшаллă партизан.

Унтан вĕсем вар тĕпнелле анса кайрĕç.

Хĕвел хĕрелсе тухрĕ, вăрман çинелле кармашса хăпарчĕ. Çанталăкăн чи илемлĕ вăхăчĕ. Йĕри-тавра тĕрлĕ кайăк-кĕшĕксем юрласа илем параççĕ. Шăна-пăвансем сĕрлесе вĕçеççĕ.

Андрюшпа партизан вар тĕпне анса çитеймерĕç — вĕсен умне шуррисенчен хăтăлнă партизан çитсе тухрĕ.

— Ах, аран хăтăлтăм! Андрюш, эсĕ те кунта çитнĕ. Аван! Халĕ ĕнтĕ эпир вĕсене парăпăр,— терĕ партизан.

Унтан вĕсем çырмана анса шыв ĕçрĕç те отряд патнелле утрĕç.

— Усманов юлташ, эпир сана пĕтĕмпех çухатрăмăр Ялта пурăнать пулĕ тесе, шырама кайма тухрăм,— терĕ упа амăшне персе вĕлернĕ партизан.

— Андрюша тав тăвас пулать. Çавă хăтарчĕ мана,— терĕ Усманов.

Андрюш савăнăçлăн кулчĕ:

— Эпĕ хăтарман сана, пичче, пĕрле хăтăлтăмăр.

## VII

Ывăлĕшĕн хуйхăрнипе Андрюш амăшне вĕçĕмрен иккĕç хут тытса пăрахрĕ. Тăнĕ кĕрсен вăл, хăйне хăй тирпейленсе, кровать çине выртрĕ: «Ульяна ăçта çӳрет-ши

тата? Мĕнле те пулсан пĕлесчĕ, Андрюша мĕн турĕҫши?» — тесе хуйхăрчĕ.

Ҫак вăхăтра пĕр офицер тата икĕ салтак пырса кĕчĕҫ.

— Ну, ватă кăркка! Ывăлу ăҫта? Қала тӳррипе! Унсăрăн начар пулĕ!— терĕ офицер кăшкăрса.

Хĕрарăм сиксе чĕтрет. Халĕ ĕнтĕ вăл хăйне тытса кайма килнĕ пулĕ тесе хăрать.

— Андрюша ĕнер хăвăр тытса кайрăр вĕт. Ҫавăнтан вара вăл киле таврăнман.

— Суятăн! Ăна мужиксем тарма пулăшнă. Ҫамрăксем, киле таврăнмасан, ниҫта та кайма пултараймасть. Халех тупса пар!— урине тапса кăшкăрать офицер.

— Акă, ҫутă хĕвел. Суятăп пулсан, халех ҫĕр айне анса каям. Андрюш киле таврăнман,— терĕ Андрюш амăшĕ, офицер ҫине тилмĕрсе пăхса.

Салтаксем ун сăмахне ĕненмеççĕ, ҫуртне айĕн-ҫийĕн ухтарса, Андрюша шыраççĕ. Анчах вĕсен тăрăшни ахалех. Андрюш ҫук.

— Тăр, ватă кăркка. Мĕн чире персе выртатăн!— офицер хĕрарăма, уринчен тытса, урайне сĕтĕрсе антарчĕ.

Андрюш амăшĕ хаяр саспа кăшкăрса ячĕ те, ҫавăнтах ăна тытса пăрахма пуҫларĕ. Вăл урисемпе тапăртатать, аллисемпе ҫапкалать, пуҫĕпе урайне ҫапать.

Салтаксемпе офицер ахăлтатса кулаççĕ.

— Ну-ка, пĕр витре сивĕ шыв илсе кĕрĕр. Чирне лăплантарар,— терĕ офицер.

Пĕр салтакĕ, хăвăрт тухса, пĕр витре сивĕ ҫăл шывĕ йăтса кĕчĕ.

— Яр пуҫĕ ҫине!— хушрĕ офицер.

Салтак йнсăр выртакан хĕрарăм ҫине сивĕ шыв чашлаттарса сапрĕ.

Хĕрарăм каллех хутлана-хутлана тапăртата пуҫларĕ.

Ҫак вăхăтра Ульяна пырса кĕчĕ.

— Пиччесем, мĕншĕн эсир чирлĕ аннене асаплантаратăр? Ăна вĕт тытса пăрахать,— тесе амăш умне пырса тăчĕ Ульяна.

Офицерпе салтаксем тинех ĕненчĕҫ: хĕрарăм юри тумасть, ăна чăнах та тытса пăрахать. Унтан вĕсем хăвăрт тухса кайрĕҫ.

Чылай выртсан хĕрарăмăн тăнĕ кĕчĕ.

— Ульяна, ачам. Мĕн пулнă мана?— куçĕсене уçса хуллен пăшăлтатрĕ вăл.

— Салтаксем...— сăмахне каласа пĕтерейменрĕ Ульяна, йĕрсе ячĕ.

— Çав тăшмансемех манăн чуна илеççĕ ĕнтĕ. Андрюш, Андрюша мĕн турĕç-ши?—тесе вăрăммăн сывларĕ. Хăй вилес патне çитнĕ пулсан та, ывăлне асăнать. Сăнĕ сап-сарă сарăхнă. Шăммисем саланса каясран ӳчĕ çеç тытса тăрать. Қăлкан пек çӳçĕ тăкăнса пĕтнĕ, куçĕсем анса ларнă, пĕтĕмпех вилнĕ çын сăнĕ çапнă.

— Анне, ан хуйхăр-ха. Пиччене вĕсем нимĕн те тăвайман. Вăл тухса тарнă,— тесе амăшне лăплантарать Ульяна.

— Аçтан чăттăр? Çамки çине çăлтăр каснă, тет, вĕт. Çав çăлтăрлă çĕлĕк пиркиех пуçне çирĕ ачам. Таçтан тупса таврăнчĕ çав çĕлĕке?— тесе тарăхать амăшĕ.

— Хам куçпа куртăм, пиччене хупса лартнă кĕлетĕн алăкĕ çĕмрĕк. Тата тăрри те шăтăк.

— Ĕненместĕп. Суяççĕ вĕсем, тарнă тесе. Тарман, вĕлернĕ ĕнтĕ вĕсем Андрюша.

Андрюш амăшĕн чирĕ йывăрланать. Вăхăт-вăхăт вăл вилес патнех çитет.

Ульяна, тăлăха тăрса юласран хăраса, татăлсах йĕрет.

Шуррисен салтакĕсем яла çаратаççĕ. Пур-и, çук-и, ăна-кăна пĕлмеççĕ. Пырса кĕреççĕ те:

— Хатĕрле апат!

— Давай эрех!— тесе çеç ахăраççĕ.

Ыйтнине тупса памасан, хĕнесе тухса каяççĕ. Çак хушăра миçе арçынна, миçе хĕрарăма хĕнерĕç пулĕ. Ăна шутласа та кăларма çук. Ялта чăх-чĕппе, хур-кăвакалсене хăвармарĕç. Мĕн курнă — тытаççĕ те пусаççĕ. Хуçинех пĕçерме хушаççĕ.

* * *

Тул çутăлас умĕн. Шăп тутлă ыйхă вăхăчĕ. Андрюш амăшĕ, тытса пăрахса иртсе кайнă хыççăн, шухăша кайса выртать. «Чĕрĕлейĕп-ши? Пĕрре те пулин Андрюша курасчĕ. Вара вилсен те ӳкĕнмĕттĕм», тесе шухăшлать. Унччен те пулмарĕ, пăшал сассисем: ух! ух! кĕрлерĕç.

— Ульяна, ачам. Тăр-ха. Пăх, мĕн шавлаççĕ унта?— Андрюш амăшĕ тутлă ыйхăпа çывăракан хĕрне вăратрĕ.

Ульяна тӑрса чӳречерен пӑхрӗ.

Урампа шуррисен салтакӗсем тараҫҫӗ. Пулемет такӑлтатать.

— Ачам, камсем переҫҫӗ унта?

— Шуррисене,— пӗлтерет Ульяна.

— Хӗрлисем ҫитрӗҫ пулӗ!

Андрюш амӑшӗ, чирлӗ пулсан та, чӳрече умне пырса тӑчӗ. Тинкерсе пӑхать.

Хӗрӳллӗ ҫапӑҫу пӗр сехет хушши пычӗ. Шуррисем каллӗ-маллӗ чупкаларӗҫ. Ялтан тухса тарасшӑн пулчӗҫ. Ҫук, ӑҫта пӑхнӑ унта салтаксем, пусса пӑрахнӑ сыснасем пек, юн юхтарса выртаҫҫӗ. Хӑшӗ вилнӗ, хӑшӗ суранланса пӗтнӗ.

Ҫутӑлчӗ. Яла партизан отрячӗ пырса кӗчӗ. Малта хӗрлӗ ялав вӗлкӗшет. Ав, отряд командирӗ Щетинкин пырать. Унпа юнашар кӑвак лаша утланнӑ Андрюш килет. Андрюшӑн пуҫӗнче те ыттисенни пекех хӗрлӗ ҫӑлтӑрлӑ ҫӗлӗк. Аллинче винтовка, пилӗкӗнчен кӗске пӑшал ҫакса янӑ. Уринче сӑран атӑ. Паллама та ҫук, чӑн-чӑн партизан. Ҫитменнине тата шинель тӑхӑннӑ. Суранлӑ ҫамкине шурӑ бинтпа ҫавӑрса ҫыхнӑ. Лаши мӑйӗнчен икӗ упа ҫурине вӗренсемпе кӑкарса янӑ. Вӗсем урлӑ урисемпе лаплаттарса пусса утаҫҫӗ.

— Ха, пӑхӑр-ха, пӑхӑр! Леш, упа ҫурисене ҫавӑтса пыраканни, Андрюш тӗслех!

— Ҫавӑ — Андрюш!— кӑшкӑраҫҫӗ отряда кӗтсе илекен ҫынсем.

Пуринчен ытла ача-пӑчасем савӑннӑ. Сиккелесе чупаҫҫӗ.

— Андрюш!

— Андрюш!

Лаши ҫинче Андрюш йӗнер пускӑчӗсем ҫине урисемпе тӑрарах тӳрӗ ларса пырать, кӑкӑрне малалла каҫӑртнӑ.

Ывӑлӗн ятне илтсен, чирлӗ амӑшӗ те урама тухрӗ.

— Андрюш ачам! Эсӗ чӗрӗ-ҫке!

Андрюш, лашине чарса сиксе анчӗ те, амӑшне ыталаса илчӗ.

— Анне!— чуптӑвать амӑшне.

— Пичче!— Ульяна та ыталарӗ пиччӗшне.

— Спасибо сана, амӑшӗ, ҫакӑн пек герой ҫуратса ӳстернӗшӗн,— тесе Андрюш амӑшне тав турӗ Щетинкин.

Унтан аллинчен тытса, питçăмартийĕсенчен виçĕ хут чуптурĕ.

— Хăвăра тавтапуç, ачамсем, манăн ачама вилĕмрен çăлнăшăн,— пăшăлтатрĕ Андрюш амăшĕ.

Халĕ ĕнтĕ вăл чирлĕ çын пек мар, тутисем кулаççĕ, куçĕсем выляççĕ...

Партизансем, Андрюшпа амăшне мухтаса:

— Урра! Урра!— кăшкăраççĕ.

Тайга вăрманĕ хыçĕнчен хĕвел хĕрелсе тухать.

Ялта савăнăç.

## ТАЙГА ПАТТĂРĔСЕМ

### I

Вăл ял вырăнĕнче ĕлĕк пĕртен-пĕр сунарçă пӳрчĕ çеç сăрт айккинче хĕвеле хирĕç салхуллăн пăхса ларнă. Пӳрт çумĕнчен хура шывлă, нумай пулăллă Барсас шывĕ шăппăн пĕтĕрĕнсе юхса иртнĕ. Йĕри-тавра хура вăрман кашласа ларнă. Вăл вăрман Қальчугин шахтинчен пуçласа Нарыма çитиччченех сарăлса выртнă. Унта ĕмĕртенпех упасем, рысьсем, тилĕсем, никамран хăрамасăр, хуçа пулса асса çӳренĕ. Вăхăт çитсен — кĕркунне, вăл тавраналла сунарçăсем пынă. Пĕр вăхăта вăрманта пăшал сассисем кĕрленĕ. Йытăсем вĕрнĕ. Юр çуса сивĕтсен, сунарçăсем каялла кайнă. Вара вăрман каллех лăпланнă. Анчах хура вăрман нихăçан та кашлама чарăнман: вăл çулла та, хĕлле те çилпе те, çилсĕр те, ялан кашланă. Вăхăт-вăхăт вăйлă çил-тăвăл тухса, вырăнĕ-вырăнĕпе ĕмĕрхи йывăççене тĕпĕ-тымарĕпех кăкласа пăрахнă. Ун пек вырăнсене çĕнĕ хунав шăтса тухса ӳснĕ.

Тĕнче вăрçи пуçланас умĕн çав сунарçă утарĕ патне Утриван ятлă пĕр пуян куçса пынă. Вăл унта икĕ хутлă, çирĕм тăвата чӳречеллĕ пӳрт ларттарнă. Йĕри-тавра виçĕ аршăн çӳлĕшĕ хӳме тытса çавăрнă.

Утриван хыççăн унта кĕçех виç-тăвата кил куçса пынă, вара вăл вырăнта пĕчĕк ял пулса ларнă. Ялне «Утар» тесе ят панă.

Çав Утар ялне Вассапа Уçăп та çĕнĕ çĕре куçса пынă. Малтанах вĕсем икĕ çул хушши Утриван патĕнче тарçăра пурăннă. Унтан, тăвата кĕтеслĕ пĕчĕкçĕ пӳрт лартса,

хӑйсем тӗллӗн пурӑна пуҫланӑ. Уҫӑп ашшӗ — Ехрем старик — пулӑ тытса сутнӑ укҫипе пӗр ӗне туяннӑ.

— Ҫӑсалхи пӑрушне ӳстерсен, икӗ чун ӗне пулать. Хӗле кӗрсен, сунара ҫӳресе кайӑк-кӗшӗк тытса сутсан, укҫипе лаша туянатпӑр,— тенӗ Уҫӑппа Васса.

Пирвайхи ҫулсенчех Утар хресченӗсем тырпул нумай акайман, мӗншӗн тесен вӑрман кӑкласа акасси ҫӑмӑл ӗҫ мар. Ҫавӑнпа хӑшӗсем вӑрманта сунара ҫӳресе, хӑшӗсем Барсасра пулӑ тытса тӑранса пурӑннӑ. Ҫур яла яхӑн Утриван патӗнче тарҫӑра ӗҫлесе тӑранкаласа пурӑннӑ.

Вӑхӑт ҫитсен, Вассасен ӗни пӑруланӑ. Пӑрушне Васса пӗчӗк ача пек пӑхса ӳстернӗ. «Икӗ ӗне пулать», тесе кӗтнӗ. Уҫӑп сунара ҫӳресе кайӑк-кӗшӗк тытса сутса, лаша туянасса ӗмӗтленсе пурӑннӑ. Анчах ӗмӗтленнӗ ӗмӗчӗ ҫитмен. Ҫав ҫул, шӑп ыраш вырнӑ вӑхӑтра, Уҫӑпа, иккӗмӗш хут салтака илсе, тӗнче вӑрҫине хуса кайнӑ. Ялтан пӗр Уҫӑпа ҫеҫ мар, унпа пӗрле тата вунӑ ҫынна илсе кайнӑ. Вунӑ хӗрарӑм юратнӑ упӑшкисенчен уйрӑлнӑ,— хӑшӗсем тен вӑхӑтлӑха, хӑшӗсем тен ӗмӗрлӗхех. Пӗчӗк ача пек татӑлса йӗнӗ Васса.

Пӗр ҫул ҫитнӗ. Иккӗ те иртнӗ. Виҫҫӗ тулнӑ. Анчах Васса хӑйӗн юратнӑ упӑшкине кӗтсе илеймен. Малтанах Уҫӑп час-часах ҫырусем ҫырса тӑнӑ. Ҫашни ҫырӑвӗнчех: «Ан хуйхӑр, Васса. Кӗтсе тӑр — вӑрҫӑ чарӑнсанах таврӑнӑп. Аттене те салам кала», тесе йӑпатса ҫырнӑ. Чӑнах та, Васса вӑрҫӑ чарӑнса упӑшки таврӑнасса тем пекех кӗтнӗ. Хӑш каҫ, упӑшки асне килсен, пӗр куҫ хупмасӑр ҫӗр каҫнӑ. Ҫывӑрса кайсан та, тӗлӗкӗнче Уҫӑпа курнӑ. Ҫапла кӗтсе пурӑннӑ ҫӗртех, Уҫӑпран ҫыру килми пулнӑ.

— Вӗлерчӗҫ пуль, ҫавӑнпа ҫыру ҫук...— кунӗн-ҫӗрӗнех йӗнӗ Васса. Ҫӑвак куҫӗсем путса аннӑ унӑн. Ватӑ хуняшшӗ—Ехрим старик — кинне пӗтӗм чунӗнчен шелленӗ.

— Ҫинӗм, ытла ан хуйхӑр-ха... Вилмен пулсан, вӑрҫӑ чарӑнсан таврӑнӗ...— йӑпатнӑ вӑл кинне.

Васса йӗме чарӑнман, кинӗн куҫҫульне курсан, Ехрим старикӗн те куҫӗсем шывланнӑ.

— Ах, атте,— тенӗ Васса.— Эпӗ Уҫӑпран пуҫне никама та юратмастӑп. Вӑл киле таврӑнмасан та, эпӗ урӑх ҫынна савассӑм ҫук. Виличченех сана пӑхса усрӑп, атте.

Ҫапла кинӗпе хуняшшӗ иккӗшӗ те макӑрнӑ. Вӗсен куҫҫульне никам та курман.

* * *

Барсас шывĕ тикĕт пек хура. Унта пулăсем чăмпăлт-чăмпăлт чăмаççĕ. Пулăсене тытса çиесшĕн кукăр çунатлă чарлансем шыв çийĕпе вĕçсе çӳреççĕ. Вĕсем вĕçсе пынă çĕртех шыва шăмпăрт! чăмса тухаççĕ.

Барсасăн сылтăм çыранне хыр вăрманĕ пусса ларать, сулахай енче çаранлăх сарăлса выртать. Унтаункă пек çаврака кӳлĕсем хăмăшпа витĕнсе выртаççĕ. Ирлĕ-каçлă кайăк-кăвакалсем нартлатса ярăнса ишсе çӳреççĕ.

Çăва тухсан, Ехрим старик мĕн кĕркуннеччченех Барсас хĕрринче пулă тытса пурăнать. Ăшă вăхăтра каçхине те киле таврăнмасть, çырма хĕрринчех, хурăн хуппинчен тунă хӳшĕре çывăрать. Эрнере пĕрре çеç килне таврăнса, мунча кĕрсе кĕпе-йĕм улăштарать те каллех çырма хĕррине анать. Мĕн тытнă пуллине Васса кашни кун пырса илсе каять. Унтан ăна Кальчугин шахтине кайса сутать. Укçипе çăнăх-кĕрпе илсе таврăнать.

Ялти салтак арăмĕсем нумайăшĕ Утриван патĕнче тарçăра ĕçлеççĕ. Васса ун патне каймасть.

— Пуян вăл сана ĕçне виличчен ĕçлесен те тăраниччен çимелĕх памасть. Ан çӳре. Хамăрах тăранăпăр,— тесе йăпатать кинне Ехрим старик.

Çапла, çамрăк кинĕпе ватă хуняшшĕ пулă тытса тăранса пурăнаççĕ. Лаша чунĕ пулмасан та, икĕ ĕне усраççĕ. Сĕт-турăх çителĕклĕ, сутмалăх та ытлашши пур.

Утă çулнă вăхăтра Ехрим старик кинне купасем тума пулăшать.

«Ватă пулсан та,— атте пур. Вăл вилсе кайсан, пĕччен мĕнле пурăнăп-ши?» — хуйхăрать Васса. Савнă упăшкипе икĕ çул пурăнса ача çуратманни кулянтарать ăна. «Ача пулсан — йăпанчăк пулĕччĕ», тесе шухăшлать вăл. Упăшкинчен çыру килмесен те, вăрçă чарăнсан, Уçăп таврăнас пекех туйăнать ăна. Кунĕн-çĕрĕн кĕтет упăшкине Васса. Анчах вăрçă чарăнассин тĕлли-палли курăнмасть. Малтанах патшалăхпа патшалăх вăрçатчĕç. Халĕ ĕнтĕ Раççей халăхĕ икĕ енне уйрăлса çапăçать: пĕр енче чухăнсем тăраççĕ, тепĕр енче — пуянсем. Анчах çак икĕ вăй мĕншĕн çапăçнине Васса ниепле те чухласа илеймест, мĕншĕн тесен вăл хутла сахал пĕлет, пурĕ те икĕ çул кăна вĕреннĕ. Тата ниçта та тухса çӳремен.

— Шăп тĕлĕнмелле ку çынсенчен. Тем çитмест. Темшĕн çапăçаççĕ,— тесе тĕлĕнет Ехрим старик те.

— Çапăçакансем мĕншĕн çапăçнине пĕлеççĕ пуль те-ха,— тесе тавăрать Васса хуняшшĕне.

Çапла кинĕпе хуняшшĕ кашни кунах вăрçă çинчен калаçаççĕ. Вăрçă чарăнасса кĕтеççĕ. Анчах ниепле те кĕтсе илеймеççĕ. Вăхăт малаллах шăвать.

* * *

Пĕрре çапла Ехрим старик тетелĕсене шыва карнă та хӳшши умĕнче чĕлĕм туртса ларать. Сасартăк хыçра пăшал сассисем кĕрлесе кайрĕç.

— Мĕн, камсем унта пăшал персе çӳреççĕ? Хамăр ялсем-ши е шахтăран сунарçăсем çамрăк пăчăрсене пеме килнĕ-ши?— тесе хăй тĕллĕн калаçса илчĕ Ехрим старик. Çав самантрах ун патне пĕр çамрăк çын хашкаса чупса пычĕ.

— Мучи, тархасшăн эсĕ мана киммӳпе çырма леш енне каçма ирĕк пар,— йăлăнса ыйтрĕ вăл.

Ехрим старик ун çине тĕлĕнсе пăхрĕ: «Салтака каясран тарса çӳрекенскер пулас ку», тесе шухăшларĕ.

— Мĕн тума каçасшăн эсĕ çырма леш енне?— тесе ыйтрĕ вăл.

— Эпĕ, мучи, шуррисенчен тарса килетĕп...— терĕ çамрăк çын чĕтрекен сасăпа.

Ехрим старик темĕн чухласа илчĕ:

— А-а-а... Вăл пăшал сассисем сан çине пулчĕç-и-ха... Эпĕ сунарçăсем çамрăк пăчăрсене переççĕ, тесе ларатăп. Ну, турă санпала, кимĕ унтах ав, лар та ишсе каç...

— Пысăк тав сана, мучи...

Çамрăк çын самантрах çырма хĕррине чупса анса кимĕ çине ларчĕ те шывалла кĕрсе кайрĕ. Анчах вăл кимĕпе ишме пĕлмест иккен, ăна хăвăрт юхакан шыв самантрах анаталла юхтарса кайрĕ.

— Эккей, хамăн лартса каçарса ямаллаччĕ. Кимми ӳпĕнсе кайсан, путса вилĕ айван,— тесе ӳкĕнсе, ури çине сиксе тăчĕ Ехрим старик. Кăшкăрма хăтланчĕ. Анчах кимĕ, шыв кукринелле юхса кайса, курăнми пулчĕ. Ехрим старик, курпунне кăларса, çыран хĕррине чупса анчĕ.

— Эй, старик! Çакăнтан пĕр çын иртсе кайнине курмарăн-и!— илтĕнчĕ ăна кăшкăрнă сасă.

Ехрим старик сасă енне çаврăнса пăхрĕ те хăйĕнчен инçе те мар виçĕ салтак тăнине курчĕ. Пĕри ылтăн по-



гонлă — вăл офицер пулас. Виççĕшĕн аллисенче те — пăшал. Вĕсене курсан Ехрим старик хăраса ӳкрĕ. Хирĕç сăмах калама пĕлмесĕр хытса тăрать. Çамрăк çынна курнине те каласан аван, те каламасан лайăх. Каласан — кимĕ çине лартса янăшăн хăйне айăплама пултараççĕ.

— Ну, мĕн юпа пек хытса тăратăн?! Çын иртсе кайнине куртăн-и? Хăш еннелле кайрĕ? Çакăнтан иртмесен — урăх ăна валли çул çук!..— тесе кăшкăрчĕ çиллĕн офицер.

Ехрим старик кăшт шухăшласа тăчĕ те:

— Салтак гимнастерки тăхăннă пĕр çын, ав, çавăнталла чупса иртсе кайрĕ,— тесе, шыв юхăмнелле хирĕç тăвалла аллипе тăсса кăтартрĕ.

— Суймастăн-и?! Асту! Суйсан — эпир сана кайран та шыраса тупăпăр!— тесе, аллинчи револьверĕпе юнаса хăратрĕ офицер.

— Ватă пуçăмпа ма суяс ман сире. Чăннипе калатăп: çавăнталла иртсе кайрĕ,— терĕ Ехрим старик ĕнентермех тăрăшса.

Офицер, хăйĕн салтакĕсене ертсе, Ехрим старик кăтартнă май, шыва хирĕç, тăвалла васкаса утрĕ.

— Ах, чуниллисем! Çыннин, тен, пĕр айăп та çук. А вĕсем ăна çаплах тайга тăрăх тискер кайăк пек хуса çӳреççĕ,— хăй тĕллĕн калаçса тăчĕ Ехрим старик.

Çамрăк çынна хăвалакан офицерпа хĕçпăшаллă салтаксем курăнми пулсан, Ехрим старик шыв юхăмне май, анаталла лакăштатса чупрĕ.

Ватăскерĕн кăкăрĕ пӳлĕнет. Кăшкăрсан та сасси аран хăрăлтатса тухать. Çухрăм ытла чупсан тин вăл кимĕ çине ларса кайнă çамрăк çынна хуса çитрĕ.

Кимĕ çинчи çын ни леш хĕррине, ни ку хĕррине ишсе тухаймасăр çапкаланать. Кимми халь ӳпĕнсе каяс пек каллĕ-маллĕ чӳхенет, шыв пĕтĕрĕнсе юхакан вырăнсенче вăл пĕр тĕлте çаврăнса тăрать, унтан каллех юхса каять.

— Кунталла иш, кунталла!— тесе кăшкăрать Ехрим старик.

Тата çур çухрăм пек юхсан, кимĕ аран-аран çыран хĕррине çитсе перĕнчĕ.

— Ишме пĕлмесен, ма кимĕ çине ларас! Калаççĕ ăна: ишме пĕлместĕп, тесе. Хам лартса каçарса янă пулăттăм.

Кимми шел мар, хӑвна шел, путса вилме пултаратӑн,— тесе, тарӑхса ятлаҫать Ехрим старик.

Кимӗпе ишсе чӑм шыва ӳкнӗ ҫын кимӗ ҫинчен тухрӗ.

— Халь хӑрамалли ҫук ӗнтӗ. Леш, сана хуса киле кен салтаксене эпӗ, ав, тӑвалла кӑтартса ятӑм. Ан тив, вӑрман тӑрӑх шыраса ҫӳреччӗр,— терӗ Ехрим савӑнӑҫлӑн.

— Тавтапуҫ сана, мучи, мана хӑтарнӑшӑн. Эсӗ киммӳне паман пулсан, вӗсем мана тытатчӗҫ,— терӗ ҫамрӑк ҫын.

Самаях ывӑннӑ Ехрим старик, ҫыран хӗррине ларса, кукӑр чӑпӑклӑ чӗлӗмне тивертсе ячӗ.

— Эсӗ хӑш ялсем пулатӑн, ачам?— тесе ыйтрӗ вӑл.

— Эп ялтан мар,— шахтӑран, мучи...

— Кальчугин шахтинчен-и?... Апла—инҫетрисем мар.

Ехрим старик, чӗлӗмне вӑрӑммӑн туртса, тӗтӗмне палкаттарса кӑларса ячӗ.

— Ма хӑвалаҫҫӗ вӑл салтаксем сана? Мӗн айӑп турӑн?..

Ҫамрӑк ҫын кӗскен каласа пачӗ:

— Эпир юлташпа ӗнер ҫеҫ Австрирен таврӑнтӑмӑр — тыткӑна лекнӗччӗ эпир унта. Вӑл пӗр кунлӑха ман пата хӑнана чарӑнчӗ. Эпӗ хам авланман. Килте ман ватӑ анне ҫеҫ. Вӑл пире мунча хутса кӗртрӗ. Мунчаран таврӑнсан чей ӗҫсе ларатпӑр. Сасартӑк пирӗн пата пӗр офицер тата икӗ салтак пырса кӗчӗҫ.

— Эсир-и-ха ҫак Австрирен тыткӑнран таврӑннӑ ҫынсем?— тесе ыйтрӗ офицер.

— Вара, эпир пулатпӑр,— терӗм эпӗ.

— Эсир хӗрлисен ҫарӗнче пулнӑ-и?— тӗпчет пирӗнтен офицер.

— Ҫук, эпир Хӗрлӗ Ҫарта пулман. Вӗсем пире вӑйпа илмерӗҫ. Эпир хамӑр ирӗкпе юлмарӑмӑр. Киле таврӑнса ҫемьесене курас килчӗ,— терӗм эпӗ.

— Хӗрлисен ҫарӗнче пулман... Хм-м... Эсир пирӗн ҫара хӑвӑр ирӗкпе ҫырӑнатӑр-и?— ыйтрӗ пирӗнтен офицер.

Эпӗ хамӑн юлташ ҫине пӑхса илтӗм.

— Пӗлместӗп, юлташ мӗн шутлать... Анчах эпӗ хам ирӗкпе ҫырӑнма пултараймастӑп. Вӑрҫӑ йӑлӑхтарса ҫитерчӗ ӗнтӗ. Канас килет,— терӗм.

— Эпӗ те хам ирӗкпе ҫырӑнмастӑп,— терӗ юлташ.

— Хăвăр ирĕкĕрпе çырăнмастăр пулсан, эпир сире вăйпа илетпĕр...

— Сирĕн ирĕк,— терĕм эпĕ офицера.

— Ну, тумланăр! Атьăр пирĕн хыçран!— тесе хушрĕ офицер.

— Мĕн тăвас?— Вĕсем хĕçпăшаллă. Пăхăнтарчĕç. Тумланса тухрăмăр. Офицер малтан, эпир варринче утатпăр. Пирĕн хыçран салтаксем пăшалĕсене хатĕр тытса пыраççĕ. Манăн ватă анне пĕчĕк ача пек йĕрсе юлчĕ. «Мĕнле хăтăлас ку тăшмансен аллинчен?» тесе шухăшласа пыратăп. Вĕсем пире тӳрех штаба илсе кайма тăчĕç. Шуррисен штабĕ — шахта тулашĕнче. Унта вăрман урлă каймалла. Шахтăран тухсан вăрмана кĕтĕмĕр.

— Ваше благороди, манăн ăш ыратать...— терĕм эпĕ пĕкĕрĕлсе.

Офицер ман çине шурă куçĕсемпе çаврăнса пăхрĕ.

— Штаба çитиччен тӳс. Инçе мар...— терĕ вăл çиллĕн.

— Тӳсме çук, ваше благороди,— терĕм эпĕ авкаланса.

Офицер ман ăш ыратнине ĕненчĕ пулас.

— Вăн, кайса лар...— терĕ йĕрĕнчĕклĕн.

Эпĕ çултан пăрăнса çӳлĕ курăк ăшне кĕрсе лартăм.

— Ваше благороди, мана та ирĕк парăрсам...— тет ман юлташ. Вăл та манпа юнашар пырса вырнаçрĕ.

— Тарар... Штаба çитерсен — кансĕр пулĕ...— тетĕп юлташа шăппăн.

Юлташ та тарма килĕшрĕ.

— Ну, хăвăртрах!..— кăшкăрать офицер.

Самантран иксĕмĕр те харăс сиксе тăтăмăр та вăрман чăтлăхне пĕрхĕнтĕмĕр.

— Стой!..

— Стой!.. кăшкăрса ячĕ офицер.

Хыçран пеме пуçларĕç хайхисем. Пульăсем пуç урлă шилесе иртсе каяççĕ. Печĕç-печĕç — лектереймерĕç. Тарса хăтăлтăмăр.

— Хăтăлтăмăр, юлташ,— терĕм эпĕ, чупма чарăнса.

Йывăç вуллисем хушшипе утса пыратпăр.

— Кунтан ĕнтĕ пирĕн ял инçе мар,— тесе калаçса пырать ман юлташ. Сасартăк хай офицерпа салтаксем пирĕн ума пычĕç тухрĕç.

— Стой!— кăшкăрать офицерĕ.

Эпир калле тапса сикрĕмĕр. Каллех пеме пуçларĕç.

Ман юлташ, чупса пынӑ ҫӗртех, чикӗнсе ӳксе юлчӗ. Эпӗ, ак, аран тарса хӑтӑлтӑм. Тен, мана тытатчӗҫ пулӗ. Эсӗ пулӑшрӑн, мучи...— тесе пӗтерчӗ ҫамрӑк ҫын хӑйӗн сӑмахне.

— Эсӗ хӑтӑлтӑн... Юлташна шел,— терӗ Ехрим старик, вӑрӑммӑн сывласа.

Унтан вӗсем пӗр вӑхӑта чӗнмесӗр ларчӗҫ.

— Манӑн та, сан пекех, пӗр ывӑл пурччӗ, Салтака илсе кайрӗҫ те — ҫухалчӗ. Ҫыру та килмест. Те вӗлерчӗҫ, те тыткӑна лекрӗ...— терӗ Ехрим старик хуйхӑллӑн.

— Вӑл та, ку та пулма пултарать... Вӑрҫӑ вӗт... Сан ывӑлу мӗнле хушаматлӑ? Тен, эпӗ ӑна пӗлетӗп те-и,— терӗ ҫамрӑк ҫын.

— Протасов Уҫӑп.

Шахтер Ехрим старик куҫӗнчен тинкерсе пӑхрӗ.

— Протасов Уҫӑп?! Вӑл сан ывӑлу?.. Эсӗ унӑн ашшӗ?..

— Вара, ман ывӑл... Эсӗ ӑна пӗлетним?

— Тарса хӑтӑлаймарӗ... Вӗлерчӗҫ... тӑшмансем...— терӗ шахтер хуллен.

— Сан юлташу ман ывӑл — Уҫӑп пулнӑ-и вара?...— Ехрим старик ури ҫине сиксе тӑчӗ.

— Ҫавӑ, ман ҫывӑх юлташ...— хуллен пӑшӑлтатрӗ шахтер.

Пӗр вӑхӑта вӗсем сӑмах чӗнмесӗр пуҫӗсене чиксе тӑчӗҫ.

— Кӗтсе пурӑнтӑмӑр... Вӗлерчӗҫ.... Чуниллисем!..— терӗ Ехрим старик, куҫҫулӗсене шӑлса.

Хӗвел вӑрман хыҫне анса пытанчӗ. Ҫанталӑка каҫхи сӑн хупласа илчӗ.

— Ывӑлӑн ӳчӗ инҫетре-и?..— пӑшӑлтатрӗ Ехрим старик.— Пытарас пулать...

— Ҫывӑхрах, мучи... Атя, кайӑпӑр...

Ехрим старикпе шахтер вӑрманалла кӗрсе кайса курӑнми пулчӗҫ. Барсас шывӗ сасӑсӑр юхать. Кӳлӗсенче кайӑк-кӑвакалсем нартлатаҫҫӗ. Таврара пурнӑҫ вӗресе тӑрать.

* * *

Шӑматкун. Паян Ехрим старик киле таврӑнмалла. Васса, хуняшшӗне кӗтсе, мунча хутса хатӗрлерӗ. Анчах старик темшӗн час таврӑнмарӗ.

— Мӗн туса тӑчӗ тата?.. Пулӑ лайӑх кӗрет пуль...

Çавăнпа тытăнса тăрать...— тесе хăй тĕллĕн калаçать Васса килĕнче. Вăл паçăрах мунча кĕрсе тухнă ĕнтĕ — чӳрече умĕнче кăлкан пек сарă çӳçне тураса ларать. Çак вăхăтра Ехрим старикпе шахтер хапхаран пырса кĕчĕç.

Васса, салтак гимнастерки тăхăннă шахтера курсан, хăйĕн упăшки Уçăп таврăнчĕ пулĕ тесе савăнса ӳкрĕ; анчах савăнни кăлăхах пулчĕ.

— Кин, паллашăр... Ку çын — Уçăп юлташĕ — Морозов,— терĕ хуллен Ехрим старик.

Васса пĕр самант сăмах чĕнмесĕр хытса тăчĕ.

— А Уçăп ăçта вара?..— ыйтрĕ вăл юлашкинчен.

Ехрем старикпе шахтер пĕр-пĕрин куçĕнчен пăхса илчĕç.

— Мĕн пытаратăр эсир манран?.. Калăр тӳррипе, Уçăп ăçта?

Шахтер Васса куçĕнчен хурлăхлăн пăхса илчĕ те «сасартăк каласа кăмăлне хуçас мар», тесе шухăшларĕ.

— Уçăп Кальчугина чарăнса юлчĕ. Ыран килсе çитет...— терĕ вăл йăваш сасăпа.

— Уçăп таврăнать-и?!— савăнăçлăн кăшкăрса ячĕ Васса.

— Çаплах...— пăшăлтатрĕ хуллен шахтер.

Ехрим старик шарламарĕ: «Уçăпа вĕлерни çинчен каласан, халех ĕсĕклесе йĕме пуçăнать. Халь калас мар, кайран, ыран пĕлтерĕп», тесе шухăшларĕ.

Васса, упăшки чăнахах ыран Кальчугинран килет тесе, пĕтĕм чĕринчен савăнса ӳкрĕ.

— Атте, мунча кайса кĕрĕр. Пултарни нумай пулать. Сивĕнсе кайĕ тата. Эпĕ эсир çăвăнса тухиччен апат хатĕрлем...— тесе кăмака умĕнче кăштăртатма пуçларĕ Васса.

Ехрим старик хуйхăллă. Вăхăт-вăхăт вăл таранпăн сывласа илет.

— Атя, ачам, кайса кĕрер...— терĕ Ехрим старик, ассăн сывласа.

Ехрим старикпе шахтер мунча кĕме тухса утрĕç. Васса васкаса апат хатĕрлеме пикенчĕ. Халĕ ĕнтĕ унăн пĕтĕм шухăшĕ те Уçăп çинче. Хăй те сисмест:

— Уçăп, чунăм, ыран эпир санпа каллех пĕрлешетпĕр,— тесе хăй тĕллĕн мăкăртатать Васса.

Тĕттĕм пулчĕ. Барсасран тĕтре çĕкленсе пĕлĕте хуплаcа хучĕ. Ялта никамăн та хăй çути курăнмасть. Пĕр

Васса пӳрчӗн чӳречисенчен ҫеҫ йӑлтӑр ҫутӑ курӑнать. Ќӑмаки мӑрйинчен палкаса тӗтӗм тухать.

Васса кӑмака умӗнче апат хатӗрлесе тӑнипе хӑй те сисмерӗ — пӳрт алӑкӗ уҫӑлчӗ те, пӳрте икӗ салтакпа офицер кӗрсе тӑчӗҫ.

— Ќил хуҫи арӑмӗ, эпир сирӗн пата ҫӗр выртма кӗтӗмӗр. Чармастӑн пулӗ,— терӗ хулӑн саспа офицер.

Васса, хӗҫпӑшаллӑ ҫынсене курсан, хӑраса ӳкрӗ. Ҫанҫурӑмӗ сивве шӑннӑ пек чӗтресе илчӗ. Ури вӑйӗсем пӗтсе кайрӗҫ. Хирӗҫ сӑмах чӗнеймест — чӗлхи хытса ларчӗ.

— Ну, мӗн юпа пек хытса тӑран тата?! Ҫимелли пур-и? Хатӗрле хӑвӑртрах! Халиччен салтаксене курман-им эсӗ?— тесе хытах кӑшкӑрчӗ офицер.

— Ара, пирӗн пӳрчӗ пит пӗчӗккӗ-ҫке... Ӑҫта вырнаҫтарса вырттарӑп эпӗ сире?..— терӗ Васса, аран пӑшӑлтатса.

— Пире вырӑн нумай кирлӗ мар. Хатӗрле хӑвӑртрах апатна! Эпир паян иртенпе ҫимен,— терӗ офицер, салтӑнма пуҫласа.

Салтаксем пӑшалӗсене алӑк кӗтессине тӑрата-тӑрата хучӗҫ.

Васса, ним тума пӗлмесӗр, кӑмака умӗнче хыпаланса ҫӳрет. Хӑй пӗтӗм ӳт-пӗвӗпе сиксе чӗтрет.

— Самогон пур-и?— тесе ыйтать офицер.

—Ҫук, эпир халиччен ӑна юхтарса курман.

— Хӑвӑрӑн пулмасан — кӳршӗрен кайса тупса кил!— тесе хушать офицер.

— Пирӗн ялта пуян Утриван пур, унӑн самогон ҫеҫ мар, пыллӑ сӑра та пички-пичкипех. Сирӗн пек иртсе ҫӳрекен салтаксем ялан ун патне кӗрсе выртаҫҫӗ,— тесе пӗлтерет Васса.

— Эсӗ мана ҫӗр варринче пуян Утривана шыраттарса ан ҫӳре. Эпӗ мӗн каланӑ — ҫавна итле. Халех пӗр четверть самогон тупса кил!

Васса ним тума аптраса ӳкрӗ. Ҫак самантра Ехрим старик мунчаран тухса пычӗ. Вӑл, офицерпа салтаксене курсан, алӑк умӗнче хытса тӑчӗ.

— А-а, пулӑҫӑ старик! Паян эпир сана иккӗмӗш хут куратпӑр,— терӗ офицер, старик ҫине пӑхса.

Ехрим старикӗн калаҫса тӑма вӑхӑт ҫук — халех шахтер пырса кӗме пултарать.

— Эккей... эпӗ чӗлӗме мунча умне манса хӑварнӑ.

Ҫайса илсе килем-ха,— тесе пӳртрен калле васкаса тухрĕ Ехрим старик.

— Атте, ҫул май аннесем патне кĕрсе пĕр четверть самогон илсе кил!— тесе кăшкăрчĕ Васса.

— Юрĕ,— алăк хыҫĕнче старик сасси илтĕнчĕ. Ехрим алăкран тухсанах шахтера хирĕҫ пулчĕ.

— Пӳрте ан кĕр. Унта хай, сана хăвалакан офицерпа салтаксем,— тесе пĕлтерчĕ.

Шахтер хăраса ӳкрĕ.

— Ҫалле мунчана кайса пытанса лар,— терĕ старик шахтера.

* * *

Васса сĕтел ҫине апат хатĕрлерĕ.

— Сан упăшку ăҫта?— тесе ыйтрĕ офицер, сĕтел хушшине кĕрсе ларсан.

— Тăваттăмĕш ҫул ĕнтĕ салтака кайнăранпа, таврăнмарĕ,— тесе пĕлтерчĕ Васса.

Офицер Васса ҫине ăмсанса пăхса илчĕ.

— Салтак арăмĕ апла эсĕ. Аван!..— терĕ те уссине калле-малле сăтăркаласа якатрĕ.

Ҫĕҫех Ехрим старик пĕр четверть самогон йăтса пырса кĕчĕ. Вăл, чĕнмесĕр, четвертне сĕтел ҫине пырса лартрĕ те хăй кăмака сакки ҫине кайса ларчĕ.

Офицерпа салтаксем самогон ĕҫсе апатланаҫҫĕ. Ехрим старик, пуҫне чиксе, шухăша кайса ларать. Унăн ҫав тери ҫилли тулса ҫитнĕ. Вăл, ватă пулсан та, хăйĕн пĕртен-пĕр юратнă ывăлне вĕлерекенсене халех тавăрма хатĕр.

— Старик, эпир леш эсир курнă ҫынна шыраса тупаймарăмăр. Тарса хăтăлчĕ, каналья! Ниҫта та каяймĕ, эпир ăна пурĕ-пĕрех шыраса тупатпăр! — тесе мухтанать офицер.

Ехрим старик офицера хирĕҫ сăмах чĕнмест. Вăл ăшĕ ҫуннипе пĕр вĕҫĕмсĕр чĕлĕм мăкăрлантарать. Унăн «Ҫын вĕлерекенсем! Юнĕҫенсем!» тесе кăшкăрасси килет. Анчах шикленет.

Васса хуняшшĕ салху ларнине сисет. Тата шахтер мунча кĕрсе таврăнманни те тĕлĕнтерет ăна. Анчах офицерпа салтаксем умĕнче ыйтма хăяймасть.

Офицерпа салтаксем четверть самогона ĕҫсе пĕтерчĕҫ.

— Ну, старик, эпир ҫывăрма выртатпăр. Эсĕ пире

хuралла. Вăл-ку пулсан, вăрат,— вăхăт хăрушă,— терĕ офицер, сĕтел хушшинчен тухса.

Ĕшеннĕ тата самогон ĕçсе ÿсĕрĕлнĕ офицерпа салтаксем выртнă-выртманах çывăрса кайрĕç.

Ехрим старик кинне тула чĕнсе тухрĕ.

— Кин, пĕлтерем ĕнтĕ сана, çаксем паян пирĕн Уçăпа... персе пăрахнă,— терĕ вăл хурлăхлăн.

Васса кăна илтсен сулăнса кайрĕ. Пĕр вăхăт вăл сывламасăр куçне хупса тăчĕ. Унтан аран пăшăлтатса:

— Ара, ун юлташĕ, Уçăп Кальчугина чарăнса юлчĕ, ыран килсе çитет терĕ-çке...

Ехрим старик ĕç мĕнле пулнине йĕркипе каласа пачĕ.

— Эпир унăн юлташĕпе Уçăпăн ÿтне шыраса тупса вăхăтлăха çĕр айне пытартăмăр. Кĕçĕр çавăнпа час таврăнаймарăмăр,— тесе пĕтерчĕ вăл хăйĕн сăмахне.

— Вĕсем... ман упăшкана вĕлернĕ... Қаçарассăм çук вĕсене уншăн!...— терĕ Васса çиллĕн.

Ехрим старик мунчана кайса шахтера чĕнсе пычĕ. Виççĕн пĕрлешсе, хăйсен тăшманĕсене мĕнле тавăрасси çинчен канашларĕç. Унтан виççĕшĕ те харăс пÿрте кĕчĕç.

Утă çулнă вăхăтра кĕске çĕр хăвăрт иртсе кайрĕ. Хĕвел хĕрелсе тухрĕ. Анчах ялтан офицерпа икĕ салтак тухса кайнине никам та курмарĕ. Вĕсем çинчен Ехрим старик, Васса тата шахтер çеç пĕлеççĕ. Вĕсем хăйсен тăшманĕсене кирлĕ пек тавăрчĕç.

— Халĕ ĕнтĕ, мучи, пирĕн алăра икĕ винтовка, тепĕр наган пур. Татах та тупас пулать пирĕн вĕсене. Шуррисене хирĕç тăрса çапăçма чухăн хресченсенчен партизан отрячĕ тăвас пулать,— терĕ Морозов.

— Эпир те кинпе санран юлмастпăр!— терĕ Ехрим старик татăклăн.

## II

Яла карательнăй отряд килес умĕн Ехрим мучипе Васса, шахтер хушнипе, килти хаклăрах япаласене тата икĕ ĕнине чухăн пурăнакан кÿршĕ çыннине пăхса усрама парса хăварчĕç те Барсас хĕрриневаскарĕç.

Пысăках мар кимĕ инçе çула тухма хатĕр: шахтер унта шур офицерпа салтаксенчен туртса илнĕ пăшалсене, çимелли, тăхăнмалли япаласене типтерлĕн майлаштарса хунă.

— Ну, васкар, мучи, çынсем ан курччăр тата,— терĕ шахтер, ун-кун пăхкаласа.

Старик пĕр саманта ял ҫинелле пăхса шухăша кайса тăчĕ. Мĕн каласан та шел: паян вăл, ватă ҫын, тăван ялне, ҫуртне, выльăх-чĕрлĕхне пăрахса тухса каять. Нимĕн тума та ҫук. Вăхăчĕ ҫавăн пек.

— Ну, мучи, ҫынсем курман чух васкар,— терĕ Морозов тепĕр хут.

Старик ыйхăран вăраннă пек шартах сикрĕ:

— Эпĕ... хатĕр. Ҫайрăмăр,— терĕ вăл, кимĕ сăмсине шалалла пăрса.

Тепĕр самантран кимĕ ҫыран хĕрринчен уйрăлчĕ те, шыва ик еннелле ҫурса, шалалла кĕрсе кайрĕ.

Ҫимĕ ҫăмăллăн та хăвăрттăн аналла шăвать. Ҫыран хĕрринче ĕмĕр-ĕмĕр пуртă, пăчкă сасси илтмен пихтăсем, чăрăшсем, кедрсем ларса юлаççĕ.

Шахтерпа Васса юнашар ларнă: кĕсменĕсемпе шыва хумхантарса, мĕнпур вăйран ишеççĕ. Ехрим старик кимме тытса пырать.

— Ну, мучи, вăрҫа каятпăр вĕт!— тесе хăвăртран хăвăрт ишет шахтер.

— Ҫаятпăр, ачамсем, каятпăр... Виççĕшне тĕп турăмăр, тата пĕр виçĕ пинĕшне пĕтересчĕ вĕсене, вара тин Уçăпшăн ҫунакан чĕрем лăпланĕччĕ,— тет ассăн та ҫиллĕн Ехрим старик.

— Виçĕ пин мар, тĕпĕ-йĕрĕпех кăкласа тăкмалла вĕсене. Вара тин эпир ирĕклĕн пурăнма пултаратпăр,— тесе сăмах хушать Васса.

— Тĕрĕс калатăн, Васса. Вăл тăшмансене пĕр тымар юлмиччен кăкласа тăкмалла. Унсăрăн эпир ирĕклĕ те телейлĕ пурнăç курас ҫук,— тесе ҫирĕплетет шахтер.

Пĕр талăк ниçта чарăнмасăр Барсас тăрăх аналла анчĕç вĕсем. Иккĕмĕш кунне Яя шывĕ ҫине тухрĕç. Яя шывĕ те, Барсас шывĕ пекех, хăвăрттăн та пĕтĕрĕнсе юхать, анчах унăн шывĕ Барсасăнни пек хура тĕслĕ мар, кĕмĕл пек ҫап-ҫутă. Пăхсан — тĕпĕ курăнать. Пулăсем ишсе ҫӳрени те паллă. Барсаспа Яя пĕр ҫĕре пырса кĕнĕ ҫĕрте пĕр-пĕринпе хутшăнасшăн мар пек вăрахчен кĕрмешеççĕ. Мĕн чухлĕ кĕрмешсен те, Яя шывĕ Барсас шывне ҫĕнтерет: пĕр ҫухрăм пек аналла ансан, Барсас шывĕ пăтранса каять. Яя шывĕ ăна хăй ăшне пĕтĕрсе чикет. Аналла вара кĕмĕл тĕслĕ ҫап-ҫутă тăрă шыв юхать.

Яя тăрăх ҫурлă-кĕрлĕ пысăк мар пăрахутсем те улăхса анаççĕ. Сулăсем юхаççĕ. Халĕ пăрахутсем те, сулăсем

те курăнмаççĕ. Пĕртен-пĕр кимĕ çеç никамран хăрамасăр анаталла анать: ун çинче пĕр хĕрарăм та икĕ арçын ларса пыраççĕ.

Кимĕ Яя тăрăх пĕр пилĕк-ултă çухрăм пек анчĕ те:

— Çитрĕмĕр. Çакăнта анатпăр,— терĕ шахтер.

Ехрим старик, кимĕ сăмсине пăрса, çыран хĕррине илсе пычĕ. Унтан вĕсем кимме, шывран сĕтĕрсе кăларса, чăтлăх хăва ăшне кĕртсе лартрĕç.

— Кирлĕ пулĕ, çынсем курса ларса ан кайччăр,— терĕ старик.

Ларса табак туртрĕç. Пĕрер татăк сухари çирĕç. Унтан, Ехрим старикпе шахтер винтовкисене илчĕç те, Вассана наган парса, вăрман ăшнелле кĕрсе кайрĕç.

Вăрах та утмарĕç, Том шывĕ хĕррине çитрĕç.

— Çак таврара инçе мар партизан отрячĕ пулма кирлĕ,— терĕ шахтер.

Чарăнчĕç. Васса шыв хĕррине анса шыв ĕçрĕ, Морозовпа Ехрим старик ăна кĕтсе тăчĕç. Сасартăк:

— Стой! Аллăрсене çĕклĕр, вырăнтан ан хускалăр!— кăшкăрчĕ пĕр сасă.

Васса шартах сикрĕ, çаврăнса пăхрĕ, хăй те сисмерĕ, аллинчи наганне хыттăн чăмăртаса тытрĕ: çыран хĕрринче, пăшалне тытса, кивĕ накидка тăхăннă çын тăрать.

— Ну, парăнăр!— тет вăл татăклăн.

Ехрим старикпе шахтер пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç.

— Камсем пулатăр эсир?— ыйтрĕ Ехрим старик.

— Пăшалăрсене çакăр, утăр ман умра!— приказ пачĕ накидка тăхăннă çын.— Лере паллашăпăр.

— Партизансем пулас... Утар, мучи...— пăшăлтатрĕ шахтер, пăшалне хулĕ урлă çакса,— эпĕ кăштах паллатăп ку çынна...

Вĕсем накидка тăхăннă çын умĕн мирлĕнех утса пычĕç.

Нумаях та утмарĕç вĕсем, пысăках мар ĕшнери темĕнле пĕчĕк пӳрт патне тухрĕç.

Накидка тăхăннă çын вĕсене отряд начальникĕ патне илсе пычĕ.

— Рогов юлташ, акă темĕнле çынсем, хĕçпăшаллă,— терĕ вăл начальник умне пырса.

Хура мăйăхлă, çӳçне шакла кастарнă Рогов хăй умĕнче тăракан пĕр хĕрарăмпа икĕ арçын çине тинкерсе пăхрĕ.

— Ара, Ехрим мучи, эсĕ вĕт ку?! — тĕлĕнсе ыйтрĕ Рогов. — Мĕнле майпа?

Ехрим старик Рогова часах палласа илчĕ: ĕлĕк Рогов шахтăра ĕçлетчĕ. Çулла час-часах Барсас çине пулă тытма анатчĕ. Ехрим старикпе темиçе каç та пĕрле çĕр каçнă вĕсем. Пулă шӳрпи пĕçерсе çинĕ. 1914-мĕш çул Рогова вăрçа илсе кайнă. Çавăнтан вара Ехрим старик Рогова курман.

— Чим, Рогов вĕт эсĕ, Рогов! — хавасланса ӳкрĕ Ехрим старик. — Пулăç пулăçа инçетрен курать!

Вĕсем пĕр-пĕрин аллисене хыттăн чăмăртарĕç.

— Уçăп мĕнле, ăçта вăл? Ку кам пулать сирĕн? — ыйтрĕ Рогов, шахтер çине пăхса.

— Ку — Уçăп юлташĕ... Шахтер. Уçăпа... шуррисем вĕлерчĕç. Юлташĕпе — Иванпа пĕрле пулнă вĕсем, — терĕ пуçне усса Ехрим старик. Унтан вăл Уçăпа шуррисем мĕнле вĕлернине тĕплĕн каласа пачĕ. Старик сăмахне Рогов шăппăн итлесе ларчĕ.

— Вĕсем манăн пĕртен-пĕр ывăлăма айăпсăр персе вĕлерчĕç, эпир те вĕсене шеллесе тăмарăмăр: нӳхрепе ярса, çĕрпе витсе хутăмăр. Ак, пăшалĕсем пирĕн алăра, — тесе пĕтерчĕ хăйĕн сăмахне Ехрим старик.

— Уçăпа питех те шел... Анчах эсир аван тунă. Çапла кирлĕ вĕсене. Тăшман сана пĕрре çапсан, эсĕ ăна виçĕ хут ытларах тавăрса пама тăрăш. Çавăн чухне çеç тăшмана çĕнтерме пулать, — терĕ Рогов, шухăша кайса.

Ывăлĕ аса килнипе старик кăмăлĕ хуçăлчĕ пулас, унăн ирĕксĕрех куçĕсем шывланса, пĕркеленчĕк вată пичĕ тăрăх куççуль тумламĕсем юхса анчĕç.

— Ну, ан кулян, Ехрим мучи. Эпир — партизансем. Ăнлантăм эпĕ сире: эсир пирĕн пата килнĕ. Пĕрле çапăçăпăр тăшмансемпе! — тесе лăплантарчĕ Рогов старике.

Ехрим старик шывланнă куçĕсене çанă вĕçĕпе шăлса типĕтрĕ:

— Çаплах, ачамсем, пĕрле çапăçăпăр, халĕ йăлтах ăнлантăм ĕнтĕ эпĕ, — терĕ вăл, аллинчи пăшалне чăмăртаса.

Рогов пулас партизансене пӳрте чĕнсе кĕртрĕ.

— Кĕçĕр е ыран ирхине шуррисен пăрахучĕ Кузнецкран Томск еннелле иртмелле. Пирĕн çав пăрахута, кирек мĕнле пулсан та, хамăр алла тытса илмелле: унта хĕçпăшал нумай тиенĕ. Пире хĕçпăшал çăкăртан та ытларах

кирлӗ. Хальхи вăхăтра революцие çынсемпе хӗçпăшал тăваççӗ,— терӗ Рогов.

— Тартас марччӗ, тытса илесехчӗ апла вăл пăрахута,— терӗ Ехрим старик.

Рогов, шакла пуçне шăлкаласа, пӗр вăхăт шухăша кайса ларчӗ.

— Темле, те хуса çитсе тытрӗç ӗнтӗ,— терӗ вăл пăлхануллăн.

Ехрим старик ăна ăнланаймарӗ.

— Паян ирхине,— терӗ Рогов,— пӗри тарчӗ пирӗн, шпион пулнă. Хыççăн ятăм. Тытса килӗç-и, килмӗç-и... Тытса килмесен — начар пулать, вăл пирӗн плана пӗлет: пăрахут каялла кайма пултарать.

Роговăн куçӗсем сасартăк çутăлса кайрӗç.

— Тартас çук-ха ăна манăн ăмăрткайăксем!— терӗ вăл.

— Тытсан, тем пекех лайăхчӗ...— пăшăлтатрӗ Ехрим старик.

— Ну, Васса юлташăм, эсӗ отрядра санитарка пулăн. Пирӗн халь пӗр санитар çеç. Вăл сана суранланнă юлташсене перевязка тума вӗрентӗ. Эсӗ, Морозов юлташ, ман пулăшаканни пулăн,— терӗ Рогов, хăйне итлесе ларакан Вассапа шахтер çине пăхса.

— Мана мӗнле ӗç хушатăн, Рогов юлташ?— ыйтрӗ Ехрим старик.

— Эсӗ хуть те хăçан та манпа пӗрле пулатăн, Ехрим мучи,— терӗ Рогов.

Старик нимӗн те чӗнмерӗ. Ķăлкан пек шупка сарă сухалне çеç каллӗ-маллӗ сăтăркаласа илчӗ.

Ķӗçех пӳрте икӗ партизан пырса кӗчӗç. Хăйсем, халь çеç шыва кӗрсе тухнă пек, йӗп-йӗпе тарланă.

— Ну, мӗнле, тытрăр-и? — васкаса ыйтрӗ Рогов.

— Тытрăмăр, командир юлташ!— терӗç иккӗшӗ те харăс.

— Ăçта вăл?

— Хӗрӗх аршăн çӳлӗш чăнкă çыран сăмсахӗнчен Том шывне чăмтартăмăр. Сикесшӗн мар, каналья: «Ķаçарăр... Эпӗ калле отряда пыратăп. Сирӗнпе пӗрле пурнăçа шеллемесӗр çапăçап. Эпӗ... йăнăшрăм», тесе йăлăнать, куççулӗпех йӗрет. Ну-и шыва чăмтартăмăр ăна, персе сас тумарăмăр.

— Молодцы! Аван тунă. Халӗ ӗнтӗ канăр,— терӗ Рогов партизансене.

Қаҫхине Том ҫыранĕ хĕррине, пăрахут килнине хураллама, Рогов хăй тухрĕ. Унпа пĕрле Ехрим старик те пур. Партизансем хӳтĕ вырăн суйласа ҫыран хĕррипе ларса тухрĕҫ. Вĕсен умĕнче кĕмĕл пек ҫутă Том шывĕ сарăлса выртать. Йĕри-тавра тайга вăрманĕ кашласа ларать.

Ҫуллахи ҫĕр кĕске. Лайăххăн тĕттĕм пулса та ҫитмерĕ — хĕвелтухăҫĕ кăвакара та пуҫларĕ.

Сасартăк инҫетре-инҫетре, шыв ҫинче пĕр хура пăнчă курăнса кайрĕ.

— Пăхăр-ха, пăхăр, мĕн хури унта? — терĕ Ехрим старик хыпкаланса.

Рогов куҫĕ умне бинокль тытса пăхрĕ.

— Кимĕ хăпарать, икĕ ҫын ишеҫҫĕ. Разведка килет — шуррисен разведки. Вăл кимĕ ҫинчи ҫынсене пăшал сасси кăлармасăр илес пулать. Айтăр манпа виҫĕ ҫын: Морозов, Иванов... айтăр!

— Эпĕ те пырам-и? — васкаса ӳкрĕ Ехрим старик.

Вĕсем пиллĕкĕн шыв хĕррине анчĕҫ. Самантрах ҫарамасланса, хăмăш чăтлăхне курăнмалла мар пытанса ларчĕҫ.

Кимĕ ҫыран хĕррипе хăпарать. Ҫанталăк тăп тăрать, кĕсменпе шыва ҫаптарса ишни таҫтанах илтĕнет. Ак, партизансем ҫумĕнченех ишсе иртет кимĕ.

— Стой!.. Чарăнăр! — терĕ Рогов, хăмăш чăтлăхĕнчен ҫĕкленсе. Унпа пĕрле тата тăватă мĕлке ҫĕкленчĕҫ. Пурте пăшалĕсене хатĕр тытнă.

Кимĕ чарăнчĕ.

— Кимĕ ҫинчен анăр! — хушрĕ Рогов.

Икĕ ҫын мирлĕнех, ним пулман пек, кимĕ ҫинчен анчĕҫ.

— Ухтарăр! — приказ пачĕ Рогов.

— Пăшал тавраш ҫук... Шыва пăрахма ĕлкĕрнĕ пулас... — терĕ Ехрим старик, икĕ ют ҫынна ухтарса пĕтерсен.

— Қамсем пулатăр, ăҫта каятăр?

— Эпир хресченсем... Хăнана кайма тухнăччĕ... — терĕ вĕсенчен пĕри, чĕтрекен сассипе.

— Мĕншĕн ҫĕрле, кăнтăрла мар?

Тыткăна лекнĕ икĕ ҫын Рогов ҫине, усал йытăсем пек, сăмах чĕнмесĕр, сăмса тăрăх пăхса тăраҫҫĕ.

— А ну-ка, хывăр ҫиелти тумтирсене! Ну, ну, хывăр! Вот ҫапла, ҫарамасах юлăр.

Икĕ çын хăйсен умне хывса хунă тумтирсене Рогов пĕрерĕн-пĕрерĕн çавăркаласа пăхма пуçларĕ.

— Кусем мĕнле кĕлемесем кĕпе-йĕм çинче!? Салтак кĕписем вĕт кусем!— терĕ Рогов, тыткăнри çынсем çине сиввĕн пăхса.— Мужиксем апла эсир? Хăш ялсем? Ăçта каятăр?

— Утара...

— Кам патне?— хыпăнса ыйтрĕ Ехрим старик.

Тыткăнри çынсем пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç те пуçĕсене усрĕç.

— Чĕнместĕр? Утарта кам пураннине пĕлместĕр апла? Шел!— терĕ Рогов. Ну, ыйтса тăма кирлĕ те мар: пăрахут кунта хăçан пулассине эпир сирĕнсĕрех аван пĕлетпĕр.

Йĕри-тавра шăп. Ниçта нимĕнле сас-чӳ те илтĕнмест. Пĕр тайга вăрманĕ кăна майĕпен кашлать. Çанталăк уяр. Тӳпери çăлтăрсем йăлтăртатса курăнаççĕ. Тул çутăлса килет. Том шывĕнчен кăвак тĕтре çĕкленет.

— Ну, юлташсем, кусене шаларах, чăтлăхалла илсе кайăр... Пăшал сасси — ни-ни!— терĕ Рогов.

— Тăванăрсем патне хăнана çитеймерĕр... Халĕ айтăр ёнтĕ хăнана пирĕн пата. Эпир сире самогонка мар, таса спирт ĕçтерĕпĕр,— терĕ Ехрим старик, тыткăна лекнĕ шуррисен разведчикĕсен аллисене каялла çыхса.

— Ну, айтăр...

— Ну, юлташсем,— терĕ Рогов.— Хатĕр пулăр! Час пăрахут килсе çитме тивĕçлĕ. Разведка пирĕн алăра!

Кăшт тăрсан тыткăнрисене илсе кайнă партизансем таврăнчĕç.

— Ну, мĕнле? — ыйтрĕ Рогов.

— Хăнана кайрĕç,— кĕскен ответлерĕ Ехрим старик.

Отряд пăрахут килессе кĕтет. Партизансем тӳсеймесĕр тăра-тăра пăхаççĕ.

— Çук, курăнмасть-ха...— пĕлтереççĕ пĕрне-пĕри.

Вăрах кĕтни час çитрĕ: тепĕр вун-вунпилĕк минутран пăрахут курăнчĕ. Шыва хумхатса ишсе килни лайăхах илтĕнет.

— Килет!..

— Килет!— сасăсем илтĕнчĕç.

— Команда пулмасăр, нимĕн те тумалла мар!— приказ пачĕ Рогов.

Пăрахут çинче çутă çук. Тул çутăлса килнĕ май, корма

çинче ик çын хуралта тăни те, руль будкинчи рулевой та уççăнах курăнаççĕ.

— Малти караулти икĕ çыннине тата рулевойне илес пулать пуль,— пăшăлтататать Ехрим старик.

Ак, пăрахут шăп отряд тĕлне ишсе çитрĕ.

— Рогов юлташ, ма пеме команда памастăр? Иртсе каять вĕт...— тӳсеймест Ехрим старик.

— Ан васка. Ёлкĕретпĕр!— пӳлет ăна Рогов.

Сасартăк капитан будкинче йăлтăр çутă курăнчĕ.

— Караултисене, рулевоя, капитан будкинчисене илес пулать,— приказ пачĕ Рогов.

— Отряд, пли!..

Виççĕр алă пăшал пĕр пăшал сасси пек харăс ухлатрĕ. Урăм-сурăм янраса кайрĕ тайга. Пăшал сасси нумайччен ухлатса тăчĕ сĕм вăрман тăрăх. Пăрахут чарăнчĕ, каялла ишме пуçларĕ. Тĕтĕм сирĕлсен, палуба çинче çынсем тĕркĕшсе чупни уççăнах курăнчĕ.

— Команда, пли!— тепĕр хут илтĕнчĕ Рогов сасси. Палуба çинчен шуррисем шывалла сикме пуçларĕç.

— Палуба çине!— команда пачĕ Рогов. Хăй пуринчен малтан шыва сикрĕ.

Пăрахут хăяккăн пăрăнса çыран хĕрринелле юхса пычĕ те ăшăх тĕле чарăнса ларчĕ.

— Парăнăр! Малта — мина!— кăшкăрчĕ Рогов.

Партизансем, пăрахута сырăнса илсе, васкавлăн палуба çине улăхма пуçларĕç. Палуба çинче тытăçу пуçланчĕ. Шуррисем сахаллăн иккен. Тытăçу нумая пымарĕ. Сывă юлнисем, аллисене çĕклесе, парăннине пĕлтерчĕç. Рогов тӳрех капитан будкине çĕмĕрсе кĕчĕ. Юнланса пĕтнĕ капитан урай варринче нăйкăшса выртать.

— Капитана халех перевязка тăвăр!— приказ пачĕ Рогов.

Вассапа тепĕр санитар васкаса капитан патне пычĕç; вĕсем унăн аманнă хулне перевязка тума пуçларĕç.

— Ан чăрманăр. Персе пăрахăр,— турткаланать капитан.

— Сирĕн, господин, хул кăна аманнă,— тавăрать ăна Васса.

Капитан перевязка тума памасть.

— Рогов юлташ, капитан перевязка тутармасть,— пĕлтерет Васса.

Рогов капитан умне утса пычĕ.

— Капитан, ан ухмахланăр! Эсир çăмăл аманнă. Эсир пире кирлĕ пулатăр.

— Эпĕ тăшмансен тарçи пулма пултараймастăп!— хаяррăн тавăрать капитан.

— Сирĕн обязанность: пăрахута хĕрлисем патне çитересси. Пирĕн кунта ăста матроссем пур. Пулăшĕç вĕсем сире. Чăн-чăн пурнăç парăпăр сире.

— Çук, персе пăрахăр.

Рогов сăмах чĕнмесĕр наганне туртса кăларчĕ те капитан çинелле тĕллерĕ.

— Ну, сирĕн ирĕк,— терĕ вăл,— килĕшетĕр-и? Е вилĕм, е пурнăç?..

Капитан хыпкаланса ӳкрĕ. Пĕр вăхăт сăмах чĕнмесĕр шухăша кайса ларчĕ.

— Сирĕн арăму, ывăлусем те пулĕ?— тесе илчĕ ăна Рогов.

— Килĕшетĕп,— терĕ капитан,— перевязка тăвăр!

Вассапа санитар капитана типтерлĕн те çемçен перевязка турĕç.

Тепĕр сехетрен пăрахут хускалса кайрĕ. Ун çине партизан отрячĕ тиеннĕ. Капитанпа юнашар Рогов ларса пырать. Мачта тăрринче хĕрлĕ ялав вĕлкĕшет.

— Вăт ку лайăх! Хĕрлĕ Çарпа пĕрлешетпĕр, Рогов юлташ!— терĕ хавассăн Ехрим старик.

— Пĕрлешетпĕр, пĕрлешетпĕр!— тет Рогов, Ехрим мучие çурăмран лăпкаса.— Эпир тăшмансене çĕнтеретпĕрех!

Пăрахут, шыва ик еннелле çурса, хăвăрттăн малалла шăвать. Шыв хумĕсем çыран хĕррине çите-çите çапăнса юлаççĕ.

## УНКĂРАН

### I

Тарăн шухăша путса, йывăррăн кашлаççĕ тайгари вată кедрсем, чăрăшсем, пихтăсем. Йĕри-тавра нӳрĕк, çĕрĕк йывăç, кăмпа, мăк шăрши. Сывлама йывăр. Çăварпа сывласан, пыр тĕпне касать, сăмсапа сывласан, вĕтĕ табак туртнă пек ӳсĕрттерет. Хура сăхман пек карса илнĕ хура пĕлĕтрен кĕрхи вĕтĕ çумăр йăсласа анать. Çавăнпа та çанталăк пушшех нӳрлĕ сăнлă курăнать.

Щетинкин партизан отрячĕ, шуррисен отрячĕпе виçĕ талăк пĕр чарăнмасăр çапăçнă хыççăн, ывăннă,— малалла чăтса тăрайман, вăхăтлăха чакма шутланă.

Шуррисем ытла хĕстернипе вăл çĕрле чакнă. Çумăр çунипе кĕркуннехи çĕр тĕттĕм пулнă. Уйăх мар, çăлтăр та курăнман. Çавăн пирки отряд ăçталла чакнине Щетинкин хăй те, партизансем те чухласа илеймен. Юлашкинчен, аташса, çын кĕрсе тухайми лачака ункине кĕрсе кайнă. Лачака йĕри-тавра хĕрĕх çухрăм. Шăп вăта çĕрĕнче утрав. Утравĕн урлăшĕ ултă çухрăм, тăршшĕ — тăхăр çухрăм.

Çав лачака ункинчен ĕнтĕ Абакан ятлă пысăк, пулăллă, ыткăнса юхакан сулхăн шывлă çырма пуçланса каять. Абакан тăрăх çулла пĕчĕкрех пăрахутсем те çӳреççĕ. Абакан шывĕ, Минусинск хулинчен кăшт аяларах, Енисей шывне пырса хутшăнать.

Çав лачака ункине кĕрсен, унтан тухма питĕ кансĕр.

Икĕ вырăнта çеç сукмаксем пур. Вăл сукмаксене хăшпĕр çынсем çеç пĕлеççĕ.

Çутăлсан, курăна пуçласан тин Щетинкин хăйĕн отрячĕпе аташса йăнăш çулпа кĕрсе кайнине чухласа илчĕ.

— Стой! Чарăнăр, юлташсем! Эпир йăнăш çулпа кĕрсе кайнă. Кам чухлать — хăш вырăнта эпир? Мана пирĕн отряд Абакан лачаки ункине çитсе кĕнĕ пек туйăнать,— терĕ вăл, виçĕ талăк пĕр хĕлхем çисе курман, хĕç пек çӳхелнĕ тимĕр кăвак ăйăрне чарса. Ăйăрĕ те аташса йăнăш çулпа кĕрсе кайнине сисрĕ пулас: пуçне çĕклерĕ те, хăлхисене тăратса, унталла-кунталла пăхкаласа илчĕ.

— Тĕрĕс, Щетинкин юлташ, пирĕн отряд лачака ункине çитсе кĕнĕ. Малалла кайма çул çук. Кĕнĕ йĕрпе каялла тухмасан, эпир ку лачака ункинчен нихçан та тухас çук. Малалла кайсан та, аяккинелле пăрăнсан та, лашапа та, çуран та каçма вырăн çук. Пирĕн йĕри-тавра — кĕсел пек хумханса тăракан лачака. Ку лачака ункинче сахалах мар охотниксем, ылтăн шыракансем, аташса кĕрсе, тухаймасăр пĕтнĕ,— терĕ Черемховски шахтинчен пынă шахтер, партизан Трусов.

Щетинкин Трусовăн куçĕсенчен шăтарас пек пăхса илчĕ те кăшт шухăша кайса ларчĕ. Унтан айĕнчи ăйăрĕн пĕкĕ пек авăнчăк мăйĕнчен аллипе çупăрласа:

— Çук, Трусов юлташ, кĕнĕ йĕрпе калле тухма юрамасть: хăрушă, мĕншĕн тесен шуррисем пирĕн отряд лачака ункине кĕрсе кайнине сиссен, эпир калле тухасса сыхласа, отряда пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкма пултараççĕ. Пĕтĕм вăя хурса пуçтарнă отряда салатса ярсан, çĕнĕрен пуçтарма питĕ йывăр ăна.

— Курăпăр. Кĕнĕ йĕрпе каймасан, ăçтан ертсе тухăн отряда? — çиленсе пăрăнса кайрĕ Трусов.

— Юри улталаса ертсе кĕнĕ пуль пире ку лачака ункине. Отрядра шуррисен шпионĕ пур пулĕ,— мăкăр-мăкăр калаçни илтĕнчĕ партизансем хушшинче.

— Ан хăрăр. Отрядра нимĕнле шпион та çук, юлташсем. Çĕр питĕ тĕттĕм пулнипе хамăрах йăнăш кĕрсе кайнă,— тесе лăплантарчĕ Щетинкин партизансене хăйĕн яланхи ăшă сăмахĕпе.

— Щетинкин юлташ! Эпĕ ку лачака ункинчен тухма сукмак пĕлетĕп. Анчах халь хăш вырăнта иккенне кăшт маннă. Чухласа илейместĕп. Эсир мана шанатăр пулсан, эпĕ малтан разведкăна кайса килем. Вара пĕтĕм отрядпа тухăпăр,— терĕ партизан Макар.

Макар — çурта пек яштака пӳллĕ маттур йĕкĕт. Унăн çавракa тулли куç шуррисем, çĕр çывăрмасăр çӳренипе, сарăхнă. Вĕсем ылтăн тĕслĕ, сап-сарă курăнаççĕ. Питçăмартийĕсем тин пиçсе çитнĕ панулми пек,— таса, хĕрлĕ. Макар тăваттăмĕш çул ĕнтĕ пĕр канмасăр вăрçăра çӳрет. Малтан вăл Германи вăрçинче икĕ çул çӳресе таврăннă. Унтан килсен, пĕр эрне пек пурăнсанах, ăна Колчак çарне тытса кайнă. Унта нумай çӳремен вăл, Щетинкин отрядне тарса пынă. Партизан отрядĕнче иккĕмĕш çул ĕнтĕ тайга тăрăх выçăллă-тутăллă, çĕтĕк-çатăк тумтирпе, эрни-эрнипе çывăрмасăр, уйăхĕ-уйăхĕпе пит-куçне çумасăр, Колчакăн карательнăй отрячĕсемпе çапăçать. Партизана кашни сехетре, кашни секундра — малта та, хыçалта та — вилĕм сыхласа çӳрет. Анчах, мĕнле сыхласан та, Макара мăйĕнчен çавăрса тытса, пусса ӳкерейместь. Макар вилĕме парăнмасть. Хăрамасть. Вăл паттăр. Çăмăл ĕç мар вăл пуянсемпе çапăçасси, вĕсене çĕнтересси...

Макар çамрăк-ха. Тутисемпе янаххисене тин мăйăхсухал сăрать пулсан та, вăл нумай пурăннă, нумай илтнĕ, нумай пĕлет, нумай тӳснĕ. Малта татах та нумай-ха курмалли, илтмелли, пĕлмелли, тӳсмелли. Макарăн пурнăçĕ тин пуçланать-ха.

Салтака кайиччен Макар тĕрлĕ прииск-шахтăсенче ĕçлесе пурăннă. Кунта тĕрлĕ çын пулнă,— аванни те усалли те. Шахта хуçисем рабочисен культурлăхĕшĕн тăрăшман, çавăнпа та ĕçлекенсенчен хăшĕ-пĕрисем пушă вăхăтра эрех ĕçсе, картла выляса, хĕрарăмсем хыçĕнчен хăваласа ирттернĕ, тепĕр чухне вĕсем айăпсăр çыннах тыта-тыта хĕненĕ. Макар та вĕсенчен юлман, вăл та çавăн пекех ирсĕр хăтланнă.

Макар çак Абакан лачакинче эрни-эрнипе, уйăхĕ-уйăхĕпе ылтăн çуса выртнă. Кунта вăл урлă та, тăрăх та, ăçтан кĕмелли, ăçтан тухмалли сукмаксем тăрăх каллĕ-маллĕ сахал мар утнă, чупнă. Çавăнпа та Макар çак лачака ункине хăй алли çинчи пӳрнисем пек таса пĕлет.

Макар тĕнчере çирĕм улттăмĕш çул çеç пурăнать. Тӳррипе каласан, вăл хăй ку таранччен мĕншĕн пурăннине те пĕлмен. Уншăн эрех, табак, карт, хĕрарăм, çапăçу, ирсĕр сăмахсем пулсан, çитнĕ. Çак малта кăтартнă пурнăçшăн Макар ылтăн çеç мар, чунне пама та хатĕр пулнă. Шеллемен.

Ёҫсе ӳсӗрӗлсе, урнӑ йытӑ пек, кампа лекнӗ, унпа ҫапӑҫса ҫӳренипе Макар икӗ малти шӑлне ҫухатнӑ. Хӑй ылтӑн чавакан пулсан та, Макар хуть ҫав шӑлӗсене те ылтӑнран ларттарайман. Малти шӑлӗсем ҫуккипе, калаҫнӑ чух ҫӑварӗнчи хӗрлӗ чӗлхи каллӗ-маллӗ пӑтранни курӑнать. Сӑмахӗсем селӗп тухнинчен Макар хӑш чух вӑтанать пулас. Ун пек чух вара Макар катӑк шӑлӗсене тутисемпе хупласа:

— Колчака ҫӗнтерсе, вӑрҫӑ пӗтсен, каллех ылтӑн ҫума пуҫласанах, пуринчен малтан шӑлсене ылтӑнран ларттаратӑп,— тесе мухтанать партизансем умӗнче. Юратать Макар хӑйӗн юлташӗсем умӗнче мухтанма.

Анчах мӗн каласан та, отрядра Макарӑн усаллинчен ырлӑхӗ нумайрах, мӗншӗн тесен вӑл разведкӑна кайсан, ӗҫне тумасӑр таврӑнман. Макар, епле йывӑр пулсан та, яланах шуррисем ӑҫта, хӑш вырӑнта, хӑш ялта тӑнине, мӗн чухлӗ вӑй пуррине, мӗнле хӗҫпӑшалланнине тӗплӗн пӗлсе таврӑннӑ. Макар разведки хыҫҫӑн отряд пӗр шикленмесӗр вырӑнтан вырӑна куҫма пуҫлать. Ҫак енчен пӑхсан вара, Щетинкин Макар ҫине хӑй ҫине шаннӑ пекех шаннӑ.

Щетинкин халӗ те чи малтан Макар ҫине пӑхса илчӗ.

— Разведкӑна, Макар, эсир Фроловпа иксӗр кайӑр. Отряда кӑлармалли ҫула тӗплӗн пӗлмесӗр калле ан ҫаврӑнӑр. Яла-мӗне ҫитсе лексен, ӗҫсе, асса ан ҫӳрӗр. Юлашки хут астутаратӑп,— кайран хресченсем мӗн те пулин каласси ан пултӑр. Ун пек, кун пек пулас пулсан, малашне ман отряда юлӑп тесе ан та шутла. Отряд ятне ҫӗртсе ан ҫӳре. Илтрӗн-и?.. Шуррисен отрячӗ хӑш ялта тӑрать, мӗн чухлӗ унӑн вӑйӗ, ҫавна пӗлсе таврӑнӑр. Анчах нумай ан ҫӳрӗр. Пит нумай ҫӳресен — ҫур талӑк. Ӑнлантӑр-и?— начальникле хушса каларӗ Щетинкин.

Макар Щетинкин сӑмахӗсемпе пӗтӗмпех килӗшрӗ. Хирӗҫ чӗнмерӗ. Яланхи пек, пуҫне ҫеҫ тайрӗ. Макар нумай калаҫмасть. Анчах мӗн хушнине тӗплӗн тума тӑрӑшать.

Разведкӑна каякансемпе калаҫса пӗтерсен, Щетинкин ытти партизансем енне ҫаврӑнса тӑчӗ.

— Лашӑрсем ҫинчен анса, вӗсене курӑк ҫине ҫиме ярӑр. Кирлӗ вырӑнсене хуралсем тӑратӑр!— тесе приказ пачӗ.

Партизансем ҫавӑнтах лашисем ҫинчен сике-сике анса, ҫӑварлӑхсене кӑларса, тӑм ӳкнипе сарӑха пуҫланӑ

вăрăм курăк çине ячĕç. Хăйсем ушкăн-ушкăн канма ларчĕç, хăшĕсем курăк çине тăсăлса выртрĕç.

Макарпа Фролов виçĕ талăк çитермен выçă лашисене майĕпен уттарчĕç. Вĕсене Щетинкин курăнми пуличченех пăхса тăрса ăсатрĕ.

II

Йĕри-тавра вăрман кашласа ларать. Нӳрлĕ лачака шăрши сăмсана çурать. Кĕрхи шăнасем вилес умĕн аран-аран нăйласа вĕçеççĕ. Сентябрь хĕвелĕ майĕпен кăнтăрланалла кармашать. Лаша ури айĕнче кĕрхи курăк чаштăртатать. Макарпа Фролов лачака тăрăх тăвăр сукмакпа пыраççĕ. Макар малта пырать, Фролов — кайра. Иккĕшĕ те вĕсем çын илтмелле мар пăшăл-пăшăл калаçаççĕ. Çапла калаçса пынă çĕртех сисмен те, лачака ункинчен тухса та кайнă. Малта, инçе те мар, мечетлĕ тутар ялĕ курăнать.

— Пăх-ха, пăх, Макар. Яла çитсе тухрăмăр. Мĕнле ял вăл, пĕлетĕн-и? — савăнăçлă кăшкăрса ячĕ Фролов.

— Кăшлав вăл, тутар ялĕ, — кĕскен пĕлтерчĕ Макар.

— Атя, кĕрсе апатланса тухар, манăн пит çиес килет. Санăн епле? — терĕ Фролов.

— Эпĕ те вĕт санпа пĕрлех виççĕмĕш кун çимен. Кĕресси кĕрĕпĕр те, юланутпа мар, çуран. Ку ялта шуррисен отрячĕ тăма пултарать, мĕншĕн тесен кунта тайга хĕрри. Пуян ял вăл Кăшлав, — терĕ Макар, ун-кун пăхкаласа.

— Апла лашасене ак çак кукăра кĕртсе кăкарса хăваратпăр та хамăр çуран кĕретпĕр, — тесе, Фролов утланнă лашин пуçне пĕр çăра хурăн вăрманĕ еннелле пăрса уттарчĕ. Вăрман патне çитсе пынă чух сасартăк тăватă юланут, лашисене казакла йăкăлт-йăкăлт сиктерсе, пырса та тухрĕç.

— Лекрĕмĕр. Ав шуррисен разведки, — хăранă сассипе кăшкăрарах каларĕ Фролов.

— Чăнах. Атя, ан юл ман хыçран, — терĕ Макар, çĕлен пек авкаланса утакан çӳрен лашине карт туртса. Лаши çавăнтах мăйне хур пек тăсса хучĕ те тапса сикрĕ. Ун хыçĕнчен Фролов сиктерчĕ. Хыçĕсенчен пылчăк çеç çĕкленсе юлчĕ. Вĕсене курсан, шуррисем те лашисене хистесе сиктере пуçларĕç.

— Стой! Чарăнăр! — кăшкăраççĕ хыçалтан. Унччен



те пулмарĕ, йĕркесĕр пăшал сассисем пĕрин хыççăн тепри кĕрлесе те кайрĕç.

— Ай!— хаяррăн кăшкăрса ярса, лаши çинчен кĕлте пек сирпĕнсе, ӳксе юлчĕ Фролов. Лаши, аçа-çиçĕм пек, Макартан иртсе, килнĕ çулпа вĕçтерчĕ.

Макар лаши мăйĕ çумне сăвăс пек çыпçăнса выртрĕ те, шуррисенчен хăтăласшăн, лашине урисемпе хĕстерсе хăвала пуçларĕ. Шуррисем пăшалĕсене кĕрслеттереççĕ, пульăсем, кĕркуннехи шăна-пăвансем пек, тĕрлĕ сасăсемпе шăйласа ирте-ирте каяççĕ. Ав, инçе мар, малта, тайга вăрманĕ, унта кĕрсен, Макар хăтăлать. Çавăнпа вăл лашине юлашки вăйне хурса хистет. Сасартăк çил пек вĕçсе пыракан лаша, малти ури çине такăнса, çăмха пек пĕтĕрĕнсе анчĕ, Макар, лаша мăйĕ урлă сирпĕнсе, ик-виçĕ хăлаçа кайса ӳкрĕ.

Шуррисем, çавăнтах тавăрттарса çитсе, Макара çавăрса та илчĕç. Анчах Макар вĕсене часах парăнмарĕ: пĕр салтакне сăмси урлă çапса юн кăларчĕ, иккĕмĕшне, çӳхе çĕртен урипе тапса, ăнтан ячĕ, виççĕмĕшне кăкăрĕнчен çапса антăхтарчĕ. Тăваттăмĕшне те çапма тытăнчĕ, анчах ĕлкĕреймерĕ, леш, пĕтĕм вăйĕпе ахлатса, Макара тăнлавран пăшал кӳпчекипе çапрĕ. Вара Макар, вăкăр пек мĕкĕрсе, çĕре тăсăлса ӳкрĕ. Унăн тăнĕ çухалчĕ.

## III

Çав тери витĕрĕн шăнса, сивĕ тытнă пек пĕтĕм ӳт-пĕвĕпе чĕтресе сике пуçласан тин Макар тăна кĕчĕ. Вăл, куçне уçса, пуçне çĕклесе пăхрĕ. Йĕри-тавра хăйне тытнă салтаксем кăшкăрашса тăнине курчĕ. Мĕн пулнине Макар хăй те ăнланса илеймест. Кăшт шухăша кайса выртсан-выртсан, Макар хаяр сассипе кăшкăрашса илчĕ.

— Ха-ха-ха! Хĕрлĕ куштанăн ăнĕ кĕчĕ,— ахăлтатса кулса ячĕç салтаксем.

— Ах, шуйттансен аллисене çитсе лекнĕ вĕт эпĕ, ухмах. Мĕнле хăтăлас? Мана вĕлернипе вĕсем нимĕнле усă та курас çук та, анчах отряд... Отряда шел... Унта пилĕкçĕр çын ытла. Вĕсем выçă. Лачакаункинчен тухма çул пĕлмеççĕ,— шухăшласа илчĕ Макар. Унтан ури çине майĕпен тăчĕ.

— Ăна кĕрсе çитрĕ. Мĕн тăватăр ĕнтĕ унпа малашне?— терĕ пĕр урлă мăйăхлă, çăра янахлă салтак, Макар çине кăтартса.

— Халех штаба леçес. Унта, мĕн кирлине ыйтса тĕпчесен, ăçта хумаллине кăтартса парĕç,— терĕ шĕвĕр сăмсаллă фельдфебель.

«Мĕн чухлĕ тĕпчесен те, эпĕ сире пĕр сăмах та калас çук. Анчах чăтма йывăр. Мĕнле хăталас? Ну, Макар Кузьмич, пĕрре вĕсен аллине лекрĕн-тĕк,— виличчен тӳс. Вĕлерсен те, пĕр сăмах тĕрĕссине ан кала. Эсĕ вĕт хăваншăн вилместĕн — пĕтĕм отрядшăн. Унта пилĕкçĕр çын, вĕсем лачакаран тухма çул пĕлмеççĕ», каллех шухăшласа илчĕ Макар.

— Ăна хиртенех илсе килмелле марччĕ. Çавăнтах вĕлерсе хăвармаллаччĕ. Халĕ çӳре ĕнтĕ ун хыçĕнчен сыхласа,— тесе вăрçса илчĕ пĕр салтакĕ.

— Юлташсем, эсир мана штаба илсе кайиччен çитерсе тăрантарсан, питĕ аван пулĕччĕ. Тутă хырăмпа калаçма авантарах. Эпĕ выçă. Виççĕмĕш кун ĕнтĕ çимен,— терĕ Макар хуллен, кăшт йăлăннă пек пулса.

— Молчать! Ăçтан эпир сан юлташу пулатпăр? Эсир вĕт Российăна сутнă. Анчăк çури!— сăнчăрти йытă пек хар кăшкăрса пăрахрĕ фельдфебель.

— Эсĕ ан çилен-ха, эпĕ сире «юлташсем» тенĕшĕн. Йăнăш каларăм. Тĕрĕс, сирĕнпе эпир юлташлă пулма пултараймастпăр, эсир капиталистсемшĕн кĕрешетĕр, эпир ĕçхалăхĕпе хресченсемшĕн, господин фельдфебель. Çапах та эсир мана, выçă хырăмпа мар, çитерсе тăрантарса вĕлерме тивĕçлĕ, закон çапла,— терĕ Макар, кăшт мăшкăлланă пек пулса.

— Парас пĕрер татăк çăкăр. Ан тив, çитĕр. Уншăн çылăх пулмĕ. Епле пулсан та, çын вĕт вăл, йытă мар,— терĕ çара янахлă салтак.

Фельдфебель, ним тăвайман енне, мăйăхне çăварне хыпса чăмлама пуçларĕ.

— Парăр эппин йытта пĕр татăк. Çитĕр те, унтан халех штаба илсе пырăр. Эпĕ малтан кайса систерем. У-у... Сволочь!— фельдфебель Макар çине усал куçĕсемпе çаврăнса пăхрĕ те штаб еннелле васкаса утрĕ.

Çара янахлă салтак хăйĕн сăран сумкинчен пĕр пысăк чĕлĕ ыраш çăкăрĕ кăларса Макара пачĕ.

Макар, çăкăр чĕллине илсе, тав турĕ. Унтан пуçне тайрĕ те, çăвар тулли çырта-çырта, чăмла пуçларĕ...

Çиййĕсене Англи шинелĕсене, пуçĕсене Франци картузĕсене, урисене Америка пушмакĕсене тăхăннă икĕ салтак Макар çине, капкăна лекнĕ кашкăр çине пăхнă пек,

вăл типĕ çăкăр кавленине усал куçĕсемпе пăхса, аллисенчи пăшалĕсене хатĕр тытса тăраççĕ. Макар, тарас тесе, кăшт çеç вырăнĕнчен хускалсанах, халех персе е чиксе пăрахма хатĕр. Макара çăкăр панă салтакĕ лешсем пек мар, вăл ун çине ăшă куçĕсемпе пăха-пăха илет. Пăхнă май сылтăм куçне кăшт хĕсет, пашалу пек хулăн тутисене йăл култарать...

Макар çара янаха куçĕсене илмесĕр пăхать: «Те хĕрхенет ку мана, Колчак йытти, те мăшкăлласа кулать»,— тесе шухăшлать вăл хăй ăшĕнче.

— Эй! Тыткăна лекнине илсе килĕр хăвăртрах!— пырĕ тĕпне хыртарса кăшкăрчĕ фельдфебель штаб умĕнчен.

— Ну, çисе тăрантăн пуль, тăр. Атя, ут ман хыçран,— терĕ çара янах Макара.

— Тавтапуç, юлташ. Ах, каллех йăнăш каларăм. Каçар, господин салтак,— тесе ури çине тăчĕ Макар.

— Мана юлташ тесен те пырать. Эпĕ фельдфебель пек доброволец мар, мобилизованнăй, рядовой салтак çеç,— ответлерĕ те салтак, штаб еннелле утрĕ.

Макар ним чĕнмесĕр, пуçне чиксе, çара янах хыçĕнчен утăмларĕ. Макарăн ик аяккинче икĕ салтак, виççĕмĕшĕ — хыçалта, пăшалĕсене Макар еннелле тытса пыраççĕ.

«Малтан эпĕ камне, хăш партизан отрядĕнче пулнине ыйтса тĕпчĕç. Эпĕ пĕр сăмах та каламăп. Вара... Вара мана е персе, е штыкпа чиксе, е юпа çине çакса вĕлерĕç. Унтан... Унтан ман ӳте выльăх вилли пек анкартисем хыçне кăларса пăрахĕç... Çапла мана йытăсем, кашкăрсем, çăхансем, татăкăн-татăкăн çăлса, çисе пĕтерĕç. Юлашкинчен шăмăсем çеç, ăçта пăхнă унта йăванса выртĕç. Эх, вилĕм! Мĕн вăл вилĕм? Маншăн ним те мар. Эпĕ вилĕп те пĕтĕп. Нимĕн те пĕлмĕп, илтмен, курман. Анчах отряда шел. Унта пилĕкçĕр çын ытла. Вĕсем лачака ункинчен тухма çул пĕлмеççĕ. Выçă...»

Çапла Макар тарăн шухăша путса утать. Вăл вилĕмрен хăрамасть. Унăн пĕтĕм шухăшĕ те — отряд çинчен. Май пулсан, вăл халех çак хăйне сыхласа пыракан салтаксене виççĕшне виçĕ çĕре çапса йăвантарĕччĕ те отряд патне чупĕччĕ. Анчах салтаксем пăшалĕсене тĕллесех пыраççĕ. Вĕсен хăрушă штык вĕçĕсене кура, Макар каллех, пуçне лашт чиксе, менкă пек çаврăнса илнĕ виçĕ салтак хушшинче пырать.

Шуррисен штабĕ мечетьпе юнашар ларакан мулла çуртĕнче. Алăкран кĕрсенех, пĕр пысăк пӳлĕм. Пӳлĕм вăтаçĕрĕнче çаврака сĕтел; йĕри-тавра хыçлă тенкелсем. Стена çумĕнче диван ларать. Çав диван çинче пуçне çӳлелле каçăртса, çăварне пирус хыпса, янахне сухал сăрма пуçланă çамрăк прапорщик ларать. Ун умĕнче, кăкăрне малалла каçăртса, пуçне тĕве пек çӳлелле çĕклесе, фельдфебель тăрать. Вăл хăйĕн начальникне Макара тытса пыни çинчен мухтанарах каласа парать:

— Пĕччен тăватă çынна парăнасшăн мар, ваше благороди. Пуçĕнчен пăшал кӳпчекипе çапсан тин парăнчĕ...

— Молодец! Сана уншăн хĕрес памалла тăвăп,— мухтать прапорщик фельдфебеле.

Фельдфебель, маччана çитсе лекес пек, çӳлелле туртăнать.

Макара илсе кĕчĕç. Прапорщик ун çине ури тупанĕсенчен пуçласа пуç тӳпине çитиччченех пăхса тухрĕ те кăвас икерчи пек тутисене кăшт култаран пек турĕ.

— Хе-хе-хе! Эсĕ пулатни-ха вăл Щетинкин бандит отрячĕн разведчикĕ?

Макар кăшт шухăша кайса тăчĕ.

— Пĕлетĕн-им? Пĕлсен ыйтма та кирлĕ мар,— терĕ Макар, прапорщик куçĕсенчен шăтарас пек пăхса.

— Лайăх, пит лайăх. Анчах эсĕ ан хăра. Тӳррине каласан, эпĕ сана нимĕн те тăвас çук. Халех ирĕке ярăп. Анчах эпĕ мĕн ыйтнине пурне те ним суймасăр каласа пар. Юрать-и?..

Макар прапорщике хăйĕн пуçланă сăмахĕсене каласа пĕтерме памарĕ.

— Эпĕ санран ирĕк ыйтмастăп. Ыйтсан та, эсĕ мана ăна парас çук. Эпир ирĕке сирĕнтен хамăр алăсемпе, вăйпа туртса илесшĕн. Пĕр хамшăн анчах мар,— пĕтĕм Российăри, Çĕпĕрти, Украинăри, Кавказри рабочисемпе хресченсемшĕн,— терĕ вăл прапорщик сăмахне татса.

— Сирĕн отряд ăçта, хăш вырăнта тăрать? Кала тӳррине?— ыйтрĕ прапорщик.

— Ха-ха-ха! Ăçта? Çĕрпе пĕлĕт хушшинче,— кулса ячĕ Макар.

Халĕ çеç тилĕ пек йăпăлтатса калаçакан прапорщик сасартăк çиленсе ӳкрĕ.

— Ах, мерзавец! Эсĕ манпа — офицерпе — чиперрĕн калаçасшăн мар-и-ха. Эпĕ сана калаçтарăп. Калаçмасан, чĕлхӳне касса илĕп. Тирне чĕрĕлле сĕвĕп. Кала,

хăш вырăнта тăрать сирĕн отряд?— тӳсеймесĕр ури çине сиксе тăчĕ вăл.

— Эпĕ сан аллунта, мĕн тăвас тетĕн, çавна тума пултаратăн. Эпĕ санран каçару ыйтмастăп. Отряд ăçта тăнине каларăм: çĕрпе пĕлĕт хушшинче,— терĕ Макар.

— Илсе тухса кайăр йытта. Куç умĕнчех мăшкăллать!— фельдфебель çине пăхса кăшкăрчĕ прапорщик.

— Так точно! Итлетĕп, ваше благороди. Анчах ăçта хурас? Мĕн тăвас унпа?

Фельдфебель, урисене шартлаттарса çыпăçтарса, майне прапорщик еннелле кăркка пек тăсрĕ.

— Ăçта хурассине, мĕн тăвассине пĕлместĕр-им? Эх, сволочь! Эсир çак бандит пек çирĕп пулсан, эпир вĕсене тахçанах çĕнтерпĕ пулăттăмăр. Шкурниксем çеç эсир. Хăвăрăн тирĕрсене çеç сыхласшăн эсир, çветтуй вырăс Российишĕн ним чухлĕ те тăрăшмастăр. Мĕншĕн сĕтĕрсе килтĕр эсир ăна ман пата? Унăн кашкăр сăнне кăтартма-и?

— Ан хăра, прапорщик, эпĕ кашкăр мар, чăн-чăн партизан. Бандит ятне мана ан пар, ху çине ил,— терĕ Макар, прапорщике пӳлсе.

— Так точно, пĕлетĕп, ваше благороди, ăçта хумаллине. Ахаль çеç ыйтрăм,— терĕ фельдфебель.

— Пĕлетĕн пулсан, мĕн ыйтса тăратăн тата? Марш, халех илсе тухса кай! Ӳлĕмрен кун пеккисене ман пата ан илсе килнĕ пултăр! Илтрĕн-и?

— Так точно, илтрĕм. Шагом марш, ман хыçран!— команда пачĕ фельдфебель, Макар çине пăхса...

Шăп çав вăхăтра:

— Смир-но-о!— команда янраса кайрĕ урамра.

Çавăнтах:

— Здорово, орлы!

— Здравия желаем,— йытăлла вĕрсе ячĕç салтаксем.

— Стой! Ан илсе тух. Капитан Могильников килет. Вăл калаçса пăхтăр-ха тата унпа,— терĕ прапорщик, фельдфебеле чарса...

Сарă алăк яр уçăлчĕ. Упа пек мăнтăр, кĕске мăйлă, лутра, хырнă янахлă, хĕрлĕ сăнлă капитан Могильников пырса кĕчĕ.

— Смирно!..— капитан умне хăвăрт утса пырса рапорт пачĕ прапорщик.

— Здравствуйте!

— Хав-хав-хав!— харăс ахăрса ячĕç штабран салтаксем.

Капитан, тĕпелелле иртсе, Макар çине чалăшшăн пăхрĕ:

— Ку кам? Мĕнле çĕтĕк-çурăк?

— Тыткăна лекнĕ бандит, господин капитан,— пĕлтерчĕ прапорщик.

— Эх-е-е!.. лекрĕн-им, голубчик... Ыйтса пĕлтĕр-и? Мĕн калаçать? Хăш банда отрядĕнчен?

— Ыйтса пĕлесшĕн пултăм та, калаçасшăн мар. Куç умĕнчех мăшкăллать, господин капитан,— терĕ прапорщик.

— Мăшкăллать? Ах, сволочь! Эсĕ вырăс офицерĕнчен кулма-и-ха!.. Ак сана!— пĕтĕм вăйĕпе Макарăн янах шăмминчен чышрĕ капитан.

Макар шăлĕсене шарт çыртрĕ. Сасартăк çыртнипе, чĕлхине ыраттарчĕ пулас, çăварне аллипе тытса, сурчăкне шалалла ĕмсе илчĕ. Тӳсеймерĕ Макар. Аллине чăмăртаса, капитан çине сăмси тăрăх пăхса илчĕ те:— Кучченеçе хирĕç — кучченеç! Ме, тыт!— тесе, млатук пек чăмăрне капитанăн лапчăкрах сăмси урлă хучĕ. Капитан, аллисемпе питне хупласа, диван çине кайса ларчĕ. Çавăнтах янаххи тăрăх юн юхса анса, урайне тумла пуçларĕ.

Прапорщик васкаса наганне туртса кăларчĕ. Макар çине тĕллерĕ. Анчах персе ĕлкĕреймерĕ, çав вăхăтрах тепĕр пӳлĕмрен такана пек сарлака хырăмлă мулла, чупса тухса, прапорщик умне пырса тăчĕ:

— Господин офицер. Господин, дома убивать нельзя. Крех большой. Улица можно убивать... Кровь, пол мараешь. После жить нехорошо. Большевик пахнет будет...— терĕ.

— Фу, сволочь! Турă качакисен кĕтӳçи. Кансĕрлесе çӳретĕн,— вăрçса тăкрĕ прапорщик муллана.

Капитан, юнлă сăмси-çăварне тутăрпа шăлса, хушу пачĕ:

— Малтан шомпăлпа çирĕм пилĕк хут çапăр. Унтан пăрлă нӳхрепе хупса лартăр. Ытла хаяр, кăшт йăвашлантăр. Вĕлерме ĕлкĕрĕпĕр. Малтан отрячĕ ăçта тăнине каласа патăр. Каламасан, тирне йĕппе сĕвĕпĕр. Илтрĕр-и?

— Так точно, илтрĕм, господин капитан,— терĕ прапорщик.

— Хушнисене халех ӗҫе кӗрт. Ҫасхине ҫӗнӗрен ыйтса тӗпчӗпӗр. Эпӗ канам-ха кăшт,— капитан тепӗр пӳлӗме кӗрсе кайрӗ.

— Фельдфебель, илтрӗн-и господин капитан мӗн каланине? Марш! Халех илсе тухса кай,— терӗ прапорщик фельдфебеле.

Макар прапорщик ҫине арӑслан пек сивӗ куҫӗсемпе ҫавӑнса пăхрӗ те, ним чӗнмесӗр, фельдфебель хыҫӗнчен утса тухрӗ. Ун хыҫӗнчен виҫӗ салтак утрӗҫ. Пӳлӗм пушанса юлчӗ.

## V

Вăхăт кăнтăрлахи апат тӗлӗ. Ялта автансем авăтаҫҫӗ, хурсем какăлтатаҫҫӗ. Карательнăй отрядăн салтакӗсем, котелоксене шанкăртаттарса, урам варринче лараканн кухня патне чупаҫҫӗ. Ҫумăр чарăнмасть, вăл майӗпен йăслать...

Килкарти ăшне тухса нӳхреп умне ҫитсен, фельдфебель Макара чарчӗ.

— Стой! Смирно! Антар йӗмне. Вырт ҫакăнта,— пӳрнипе ҫӗрелле тăсса кăтартрӗ.

— Вăю ҫитсен, антар та вырттар. Хам йӗме хам антарсах сана хӗнеттерме ухмаха ермен-ха эпӗ,— терӗ Макар ҫиллӗн.

— Э-э-э-э... Эсӗ мана, начальнике, пăхăнасшăн мари-ха!.. Эпӗ сана пăхăнтарăп,— хаяррăн ахăрса, пилӗк ҫинчи кӗске пăшалне ярса тытрӗ фельдфебель...

— Эсӗ маншăн начальник мар — тăшман. Акă ҫак кăвак шинельсемшӗн ҫеҫ начальник эсӗ.

Салтаксем ҫавăнтах Макара ҫавăрса тытса йӗмне антарса вырттарасшăн пулчӗҫ. Макар чылайччен выртасшăн мар пулса кӗрешрӗ. Кӗрешсен-кӗрешсен, ывăнчӗ пулас, лăпланчӗ. Вара ăна ҫӗре тăсса вырттарчӗҫ. Унтан пӗр салтакӗ урисем ҫине, тепри ӗнси ҫине улăхса ларчӗҫ.

— Ну, Ванюшкин, кăлар шомпăлна. Ҫап ҫирӗм пилӗк. Асту, ан шелле. Шеллесен, хăвна лекӗ,— терӗ фельдфебель пӗр салтакне.

— Ну, большевик, чăт; чăтсан, утаман пулăн,— хаяр сассипе кăшкăрса, аллинчи шомпăлне ӳкерем пек турӗ салтак. Анчах хăй ҫавăнтах, Макар пуҫӗ тӗлне шомпăлне илме пӗшкӗнсе:— Эсӗ ан хăра, юлташ. Эпӗ хытă ҫапмăп. Анчах эпӗ ҫапмассерен, ыратнă пек туса, хаяррăн кăшкăр,— тесе хăлхинчен систерчӗ.

«Ара, ку хамăр çын вĕт. Капла хăтăлма та майсем пур»,— тесе шухăшларĕ Макар.

Çара янахлă салтак тепĕр хут:— Ну, чăт. Пĕрре... Иккĕ... Виççĕ...— тăстарса суса, Макарăн çара ӳчĕ çине шомпăлне ӳкерет. Макар, ӳчĕ çумне шомпăл çитсе тивмессерен, качака пек çухăра-çухăра ярать.

Фельдфебель аяккинчен пăхса тăрать. Савăннипе вăл:

— Э-э-э... пăхăнăн-и!— тесе шăлне шатăртаттарать.

Макарăн урисемпе ĕнси çинче ларакан салтаксем, Ванюшкин шомпăлне çӳлелле çĕклесе антармассерен, куçĕсене мăч-мăч хупа-хупа илеççĕ.

Ванюшкин, пĕтĕм вăйĕпе ахлатса çапнă пек:— вуннă... вунпилĕк... çирĕм... ярăнтарса шутлать.

Çапла Макара, çирĕм пилĕк хут шомпăлпа çапнă хыççăн, пăрлă нӳхрепе пăрахса, питĕрсе илчĕ фельдфебель.

— Ванюшкин, эсĕ хурал тăр. Эпир апатланса килер. Унтан эсĕ кайăн. Асту, ан тарт. Хытă сыхла!..

— Итлетĕп, господин фельдфебель,— аллине картуз сăмси çумне тытса честь пачĕ Ванюшкин.

Фельдфебельпе салтаксем пурте апата кайрĕç. Нӳхреп лаççи умĕнче Ванюшкин пĕччен çеç тăрса юлчĕ. Нӳхрепре тĕттĕм, нӳрлĕ, сивĕ. Урисем айĕнче пăр, çĕрĕк шăрши.

— Шăнтăн пуль, юлташ?— илтрĕ Макар сасартăк Ванюшкин сассине.

— Шăнасса пит шăнман та, çапах сивĕ!.. Мĕншĕн эсĕ мана «юлташ» тесе чĕнетĕн? Эпĕ саншăн ăçтан юлташ пулам! Эпир вĕт иксĕмĕр — тăшмансем,— терĕ Макар шалтан...

— Эх, юлташ. Эсĕ мана карательнăй отрядра тăнăшăн тăшман тесе шухăшлатăн пуль. Çук, юлташ. Эпĕ те сан пекех çын. Мана та хам ирĕкпе мар, вăйпа тытса килсе салтак шинелĕ тăхăнтартрĕç те алла пăшал пачĕç. Халĕ ĕнтĕ хам пекех ĕçлекенсемпе хресченсене пăшалпа персе, штыкпа чиксе вĕлерме, шомпăлпа çапма хушаççĕ. Хушнине итлемесен, хама вилĕм сĕнеççĕ. Тахçанах тарма шухăш тытнă, анчах нимпе те май тупаймастăп. Пĕр эпĕ çеç мар кунта. Ман пеккисем татах та пур. Доброволецсемпе хутшăнтарса янă та, çапкаланса çӳретпĕр,— тесе, хурлăхлă сăмахне пĕтерчĕ Ванюшкин.

— Суймасть-ши ку тăшман? Йăпăлтатса калаçса, от-

ряд ăçтине пĕлесшĕн мар-ши? Çук, апла тесен — çăкăр пачĕ, шомпăлпа ыраттармасăр çапрĕ. Тĕрĕс! Вăйпа салтака тытса килнĕ хресчен ывăлĕ пулмалла,— тесе шухăшларĕ Макар.

Çав вăхăтра фельдфебель сасси янăраса кайрĕ:

— Молчать! Мĕншĕн тăшманпа калаçатăн? Кам хушрĕ сана?— Çавăнтах тата: Ой!— кăшкăрса, пĕр çын пĕвĕ çĕре лаплатса ӳкрĕ.

Нумаях та вăхăт иртмерĕ, çăра шăлтăр-шалтăр турĕ. Унтан нӳхреп хупăлчи хăвăрт уçăлчĕ.

— Тух нӳхрепрен!— кăшкăрчĕ фельдфебель улшăннă сассипе.

Макар, нӳхрепрен пуçне кăларсанах, инçе те мар пĕр салтак юн юхтарса йăванса выртнине курчĕ. «Ах, тăшман! Ванюшкина вĕлернĕ вĕт ку», шухăшларĕ вăл, йĕри-тавра çаврăнкаласа пăхса.

## VI

Кĕрхи çумăр йăслама чарăнмасть. Хутран-ситрен ялта ӳсĕр салтаксем юрлани илтĕнет.

— Халех тыткăна лекнине илсе килĕр. Живо!— кăшкăрчĕ штабран прапорщик.

— Халех, ваше благороди,— сасă пачĕ фельдфебель. Унтан, Макар çине пăхса:— Смирно! Атя, ут ман умран,— терĕ.

Макар малтан, ун хыçĕнчен, аллине наган тытса, фельдфебель утрĕ.

Вăл Макара штаба мар, урамалла хуса тухрĕ. Урама тухсан, пăхать Макар,— хапха тулашĕнче икĕ йĕнерлĕ лаша кăкарăнса тăраççĕ: пĕри çӳрен, тепри çĕлен-хура. Лашасене курсан, Макар пĕтĕм пĕвĕпе siksе ӳкрĕ:— Эх, пĕрин çине утланасчĕ те вĕçесчĕ,— тесе шухăшларĕ. Унтан вăл хăйĕн хыçĕнчен утакан фельдфебель çине çаврăнса пăхма çеç пуçне пăрнăччĕ, сасартăк:

— Живо, утлан çак лаша çине!— хушрĕ фельдфебель, çӳрен лаша çине наганпа тăсса кăтартса.

Макар, пĕр самантрах лаша çине партизанла сиксе утланса, чĕлпĕрĕнчен ярса тытрĕ.

— Ну, большевик, тарса хăтăлсан, сан телей. Хăтăлаймасан, хăвна ху ӳпкеле,— терĕ фельдфебель, хура лаша çине утланма хатĕрленсе.

Макар пĕрре хăй утланнă лаши çине, тепре фельдфебель утланакан лаша çине пăхса илчĕ те:

— Апла та, капла та — пурпĕр вилĕм, тен, хăтăлăп,— тесе шухăшласа илчĕ. Вара лашине, партизанла карт туртса урисемпе хĕстерсе хучĕ те, малалла ӳпĕнсе, чĕлпĕр вĕçĕпе çăт çапрĕ. Лаши çавăнтах, çĕлен пек авкаланса, сиккипе малалла вĕçтерчĕ. Макар лаша мăйĕ çумне çыпçăнса выртрĕ.

— Стой! Ăçта таратăн? Тыт, большевик тарать!— кăшкăрса ячĕ фельдфебель. Унтан наган сасси пĕр вĕçĕмсĕр янăрама пуçларĕ.— Пульăсем Макар пуçĕ урлă, пăван пек сĕрлесе, ирте-ирте каяççĕ.

Макарăн çан-çурăмĕ пĕрре шăнса, тепре вут пек пĕçерсе илет. «Лекмерĕç-ха, иртсе кайрĕç»,— шухăшлать вăл, хыçалалла çаврăнса пăхса. Курать: фельдфебель пĕр пилĕк хăлаç пек çеç хыçра лашине сиктерсе пырать. Макар, фельдфебельтен тарса хăтăласшăн пулса, лашине урисемпе тапăрлать, чĕлпĕрĕ вĕçĕпе çапать. Çук, фельдфебельтен нимĕнле те уйрăлса кайма çук. Лешĕ çавах, хыçĕнчен юлмасăр, пырсан-пырсан, наганне кĕрлеттерсе ярать. Хăй çаплах:— Тыт! Тыт!— кăшкăрать.

— Мĕн ухмахланать ку пирĕн фельдфебель?

— Курмастăн-им? Авă, тыткăна лекнĕ бандита персе вĕлерме ялтан уялла хуса тухать.

— Э-э... Ха-ха-ха!.. Пĕркун та вăл çапла пĕрне, уй тăрăх хуса çӳресе, персе вĕлерчĕ.

— Хы-хы-хы! Юратать бандитсене вĕлерме.

— Юратмасăр, виççĕмĕш çул вĕт карательнăй отрядра тăрать. Вĕреннĕ ĕнтĕ. Ахальтен мар икĕ медаль панă. Акă, час хĕрес те парĕç.

— Пур енчен те пултарать. Çырăва çеç сахал пĕлет. Тахçанах офицера тухмалла...

Савăнăçлă калаçса тăрса юлчĕç карательнăй отряд салтакĕсем.

Макар малтан, ун хыçĕнчен фельдфебель ялтан тухса кайрĕç. Макар çаврăна-çаврăна пăхать: фельдфебель çывхарнăçемĕн çывхарать. Наганне хăй пĕрмай кĕрлеттерет.

Акă, ял та курăнми пулчĕ. Фельдфебель наганĕнчен пеме чарăнчĕ. Кам пĕлет, тен, патрон сахалланчĕ пулĕ, тен, урăх сăлтав? Макар ăна пĕлмест.

Макар юлашки хут çаврăнса пăхрĕ. Курать — фельдфебель çывăхах çитнĕ:— Персе мар, хĕçпе касса пăрахасшăн пуль. Ах, епле тарса хăтăлас,— шухăшлать вăл, лашине урисемпе тапăрласа. Çук, лаши, хуть те темле

хистесен те, фельдфебель лашинчен нимпе те уйрăлмасть. Макаршăн вăл пĕр вырăнтах тапăртатса тăнă пек туйăнать. Çавăнпа та, лаша çинчен сиксе анса, çуран тарма шутласа пăхать. Анчах тарса хăтăлассăн туйăнмасть. Макар çамрăк-ха, унăн пурăнас, курас, илтес, пĕлес килет. Вилес килмест: «Пурпĕр пĕрре! Халĕ ĕнтĕ эпир уй варринче иккĕн çеç, е вăл мана, е эпĕ ăна»,— тесе шухăшларĕ те вăл, лашине фельдфебель еннелле пăрса, кушак пек сикрĕ, фельдфебеле, мăйĕнчен çавăрса илсе, лаши çинчен сĕтĕрсе антарчĕ. Ак, иккĕшĕ çăмха пек айĕн-çийĕн çаврăна пуçларĕç. Пĕрре пĕри, тепре тепри çиеле тухать.

Акă, Макар, фельдфебеле çавăрса çапса, ун çине хăпарса выртрĕ те мăйĕнчен пăвма тытăнчĕ. Анчах çав вăхăтра фельдфебель, сасартăк кăшкăрса ярса, Макара хăй çийĕнчен аяккалла сирсе пăрахрĕ те ури çине сиксе тăчĕ.

— Çывăха ан кил. Халех персе пăрахатăп!— кăшкăрса ячĕ вăл, наганĕпе тĕллесе...

Макар, тăп чарăнса, юпа пек хытса кайрĕ:

— Тинех персе пăрахать,— тесе шутласа илчĕ вăл.

— Ха-ха-ха! Ан хăра! Эпĕ сана перес çук. Кил кунталла,— терĕ фельдфебель, савăнăçлăн кулса. Унтан наганне чиксе хучĕ. Макар пĕрре хăранипе, тепре савăннипе мĕн иккенне пĕлмесĕр тăрать.

— Мĕн хытса тăратăн тата? Кил ĕнтĕ,— тепĕр хут чĕнчĕ фельдфебель.

Юлашкинчен тин Макар фельдфебеле сасран уйăрса илчĕ. Вăл, фельдфебель мар, Ванюшкин пулса тăчĕ. Вилĕм аллинчен хăтăлнипе савăнса, Макар урисем лаштах кайрĕç. Вăл, ӳсĕр çын пек, чĕркуççисем çине хутланса ларчĕ.

Ванюшкин Макар умне пырса тăчĕ:

— Ан хăра, хăтăлтăмăр ĕнтĕ. Ме-ха, кăштах шыв ĕçсе пăх, çăвару типрĕ пуль.

Макар, шыв ĕçсе, сывлăшне çавăрчĕ.

— Эпĕ ним те ăнланаймастăп. Мĕнле пулчĕ-ха ку? Эпĕ вĕт сана фельдфебель тесе, кашни секундăрах вилĕм кĕтсе тарнă. Халь Макарăн сăмахĕсем таса тухрĕç. «С» «Ç» саспаллисем вырăнне «Ш» каламарĕ. Вăл сиксе тăрса Ванюшкина ыталаса чуптурĕ.

— Акă, мĕнле пулчĕ. Илтрĕн пулĕ вĕт, вăл ман пата

пырсан: «Молчать»! Мĕншĕн тăшманпа калаçатăн?»— тесе кăшкăрнине?

— Илтрĕм.

— Çавăн чух, йĕри-тавра пăхатăп, никам та курăнместь. Салтаксем шыв илме кайнă. Фельдфебель нӳхреп лаççине кĕрсенех, ăна хырăмĕнчен штыкпа яшлаттартăм. Унтан, шинелĕпе картузне хывса илсе, тумлантăм. Ак, куратăн вĕт: эпĕ — фельдфебель, эсĕ — тыткăна лекни,— савăнăçлăн кулса ячĕ Ванюшкин.

— Ку лашасене ăçтан хатĕрлерĕн?

— Лашасем вĕсем леш капитан Могильниковпа унăн адъютанчĕн.

— Тавтапуç сана, юлташ. Эсĕ мана çеç мар, пирĕн пĕтĕм отряда хăтартăн. Унта пилĕкçĕр çын. Вĕсем лачакан ункинчен тухма çул пĕлмеççĕ. Выçă. Ку ĕçшĕн саң яту пролетари кĕрешĕвĕнче чаплă вырăн йышăнса тăрĕ.

Каллех пĕрне-пĕри ыталаса илсе чуптурĕç.

— Ну, юлташ, атя хăвăртрах. Эпĕ отрядран тухни икĕ талăк çитрĕ. Унта мана кĕтеççĕ.

Макар, хăвăрт утса пырса, лаша çине утланса ларчĕ. Анчах халĕ çеç савăнăçлă Ванюшкин пуçне лăшт чикнине курчĕ.

— Ванюшкин юлташ! Мĕн пулчĕ тата сана? Утлан лашуна. Атя хăвăртрах,— кăшкăрчĕ Макар.

— Эх, юлташ. Эсĕ савăнăçлă, хăвăн сывăх юлташусем патне таврăнатăн. Анчах эпĕ ăçта? Унта партизансем. Эпĕ карательнăй отряд салтакĕ. Ман çине мĕнле куçпа пăхĕç вĕсем,— терĕ Ванюшкин.

— Ха-ха-ха... Мĕнле куçпа? Çаплах, тӳп-тӳрĕ куçпах пăхĕç. Вĕсене эпĕ эс кам иккенне каласа парсан, сана, айăплама мар, алă çинче йăтса çӳрĕç. Эсĕ вĕт карательнăй отряда ху ирĕкӳпе мар пынă, сана вăйпа тытса пынă.

— Тĕрĕс,— терĕ те лаши çине siксе утланчĕ Ванюшкин...

Çавăнтах икĕ юланут, харăс сиксе, хускалса кайрĕç.

## VII

Макарпа Ванюшкин савăннипе каç пулнине те сисмен. Çумăр çума чарăннă. Тулли уйăх тăрă пĕлĕт çине çунакан капан пек çĕкленет. Çĕр тĕттĕмĕ уçăла пуçларĕ.

Икĕ юланут, лашисене йăкăлт-йăкăлт сиктерсе, лачака еннелле пыраççĕ. Сасартăк инçе те мар йывăррăн сывласа йынăшакан пĕр сасă илтĕнчĕ.

— Тпру!

— Қам йынăшать унта?

Макарпа Ванюшкин лашасене тăп чарчĕç. Сасă пĕр вĕçĕмсĕр ахлатса йынăшать. Вăл пĕрре таçта инçетре пек туйăнать, тепре çывăхра пекех илтĕнет.

— Çын сасси ку.

— Мĕнле çын-ши вăл?

— Атя, çитсе пăхар.

Çавăнтах, лашисене пăрса, сасă еннелле чуптарчĕç. Нумаях та каймарĕç, пĕр çын мĕлки упаленни курăнчĕ. Вăл ури çине тăрасшăн çĕр çумĕнчен çĕкленчĕ те каллех ахлатса йăванса ӳкрĕ.

Макар çын патне çитсе чарăнчĕ.

— Қам эсĕ? Мĕн пулнă сана?

— Ой, э-эпĕ... Щетинкин партизан отрядĕнчен. Тархасшăн вĕлерсе хăварăр мана, юлташ.

Çын, пуçне çĕклесе, мĕскĕннĕн пăхрĕ.

Макар çавăнтах палларĕ. Вăл лаши çинчен сиксе анчĕ те мĕлке умне чĕркуçленсе ларчĕ.

— Фролов, эсĕ-им ку?

— Э-эпĕ... шыв ĕçесчĕ. Ой! çунса вилетĕп.

— Ванюшкин юлташ, пар шывна...

Ванюшкин, лаши çинчен сиксе анса, фляжкине хывса пачĕ. Фролов фляжкăри шыва лăнкăртаттарса ĕçсе ячĕ.

Фролова шуррисен пульли вилмелле мар лекнĕ,— вăл аманнă çеç. Икĕ талăк вăл, ăçталла та пулсан каяссăн пулса, упаленнĕ. Анчах лаши çинчен мĕнле ӳкнĕ, çав вырăнтан ниçта та хускалайман, мĕншĕн тесен унăн икĕ ури те аманнă пулнă. Пĕрмай ахлатнипе сасси тытăнса ларнă. Вутпа пĕçернĕ пек, тути-çăварĕсем хăмпăланса тухнă. Юн нумай юхнипе, сăнĕ шап-шурă шуралса юлнă. Çак икĕ талăк хушши ăна никам та курман, сассине те илтмен!

— Ну, Фролов юлташ. Иксĕмĕр те вилĕм аллинчен çăлăнтăмăр. Отряд инçе те мар. Сурану йывăр пулсан та, кăшт тӳс,— терĕ Макар, Фролова лаши çурăмĕ çинчи йĕнерĕ çине урлă вырттарса.

Çавăнтах юланутсем, уйăх çути айĕнчен йывăççем хушшине кĕрсе кайса, курăнми пулчĕç...

## VIII

Виççĕмĕш талăк кĕтет ĕнтĕ Щетинкин, пĕр куç хупмасăр, Макарпа Фролов çаврăнса килессе. Аптранă енне вăл тĕрлĕ май шухăшласа пăхать:

— Ķаллех пĕр-пĕр яла лексе, эрех ĕçсе, хĕрарăмсемпе асса çӳрет пулĕ... Эх, сана, Макар... Çук, апла тесен, вăл хăй килмесен те, Фроловне ярĕччĕ. Пĕлет вĕт вăл отряд лачака ункинчен тухма çул тупайманнине, выçă ларнине. Тен, карательнăй отряд аллине çитсе лекрĕçши?.. Апла вара кĕтмелли те çук... Ķĕнĕ йĕрпе каяллах тухас пулать. Анчах тухма хăрушă. Унта, мĕн каласан та, шуррисем сыхласа тăраççĕ. Урăх вырăнтан тухма çул пĕлекен çын çук. Эх, мĕншĕн ятăм-ха эпĕ ăна...

Щетинкин каллĕ-маллĕ уткаласа çӳрет.

Йĕри-тавра хура вăрман кашлать. Нӳрлĕ шăрш сăмсана çурать. Партизансем выçă. Çимелли нимĕн те çук. Аптраса çитнипе вĕсем кĕпçесем тупса чăмлаççĕ. Хăшĕпĕрисем пиллĕкмĕш талăк çăкăр хĕлхемĕ хыпса курман пулсан та, пуçĕсене усмаççĕ. Унта та кунта юрланă, ташланă сасăсем илтĕнеççĕ:

Ай-ну, мĕн пулчĕ?
Буржуйсен шалчи тулчĕ...
Пире ирĕклĕх çитрĕ...
Ĕмĕрхи нуша пĕтрĕ.

Вĕсем пирвайхи кун çеç мар капла выçă. Хăш чух кунтан та ытларах выçă çӳренĕ. Çапах тӳснĕ, вилмен. Вĕсем Щетинкин çине шанаççĕ: вăл кун пек йывăрлăхран çеç мар, ытлараххинчен те хăтарса тухнă.

Хăшĕ-пĕрисем пуçĕсене уснă. Вĕсем Щетинкин çине сивĕ куçĕсемпе шанчăксăр пăхаççĕ:— Ун пирки çак лачака ункинче выçă ларатпăр. Йăнăш кĕрсе кайнине пĕлсенех, кĕнĕ йĕрпе тухмаллаччĕ,— тесе пăшăлтатса калаççĕ. Кун пек шухăшлисене Щетинкин куçĕсенчен пăхсах пĕлет.

Хăшĕ-пĕрисем лайăхрах кăмпа тупсан, хăйсем çимесĕр Щетинкин патне илсе пырса:— Щетинкин юлташ, санăн та хырăму выçнă пулĕ, ме, çисе пăх,— тесе сĕнеççĕ.

Çук, ун çиес шухăш мар, урăх. Унăн, епле майпа çул тупса, отряда лачака ункинчен илсе тухас шухăш. Çапах та, кăмпа паракансен кăмăлне хуçасшăн мар пулса:— Тавтапуç, юлташ. Хăвăн çимеллеччĕ,— тесе тав тăвать.

Лачака йĕри-тавра унта та кунта разведчиксем çӳреççĕ. Анчах ниçтан та тухма çул тупаймаççĕ.

Макаровпа Фролов пĕтĕмпех çухалчĕç. Хăшĕ-пĕрисем вĕсем калле çаврăнса килессине шанми пулчĕç.

— Эпĕ малалла выçă тӳссе пурăнма пултараймастăп ку лачака ункинче. Эсир хуть те мĕн тăвăр. Эпĕ килнĕ йĕрпе калле тухатăп,— терĕ Трусов, Щетинкин умне лашипе пырса тăрса.

Щетинкин Трусова урлă та тăрăх пăха-пăха илчĕ.

— Хăравçă. Йывăрлăха тӳсме пултараймастăн. Шкурник. Хăвăн тирне çеç сыхласшăн. Отряда пăхăнассу килмесен, кай. Эпĕ сана чармастăп. Анчах... Урăх вара пирĕн отряда килсе ан хутшăн. Мана хăравçăсем кирлĕ мар. Эпир Макарпа Фролов килессе кĕтетпĕр-ха.

— Хуть те мĕн каласан та, эпĕ чарăнас çук ĕнтĕ. Шухăшланă — пĕтнĕ,— терĕ Трусов. Унтан лашине отряд килсе кĕнĕ йĕрпе калле сиктерчĕ. Трусов хыçĕнчен тата ик-виç юланут хускалса кайрĕç.

— Эх, хăравçăсем. Выçă вилесрен хăраса, отряда пăрахса каяççĕ. Нумая тӳснине, сахала тӳсеймеççĕ.

— Вĕсен партизанра мар, килĕсенче, арăмĕсем хыçĕнче çеç выртмалла пулнă,— тесе кулса юлчĕç партизансем.

— Выçă ларсан-ларсан, эсир те пирĕн хыçран тухăр-ха,— кăшкăрса хăварчĕ Трусов.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, инçетре — тра-та-та... ух-ух... пăшал тата пулемет сассисем кĕрлени илтĕнчĕ.

— Хырăмсене тăрантарасшăн кайса, шуррисен капкăнне çитсе лекрĕç,— калаçса илчĕç партизансем.

— Тĕрĕс. Карательнăй отряд пирĕн отряд тухасса сыхланă,— шухăшларĕ Щетинкин та.

Кăшт тăрсан, Трусовăн лаши, хырăмĕ айнелле çавăрăннă йĕнерне çапкалантарса, аçа-çиçĕм пек сиксе пычĕ.

— Хăйне е вĕлернĕ, е тыткăна илнĕ ĕнтĕ,— каллех калаçса илчĕç партизансем...

— Çав кирлĕ. Йывăрлăхран ан тартăр...

Щетинкин малалла тӳссе тăраймарĕ: йăйăрне утланчĕ те лачака тăрăх çул шырама кайма пуçтарăнчĕ. Шăп çав вăхăтра шурăмпуç çути айĕнчен юланутлă мĕлкесем курăнчĕç.

— Макар!

— Фролов!

— Çитрĕç.

— Урра-а-а-а!— кăшкăрса, хирĕç чупаççĕ партизансем...

— Урра!— кăшкăрчĕç килекенсем те. Çул тупрăмăр. Отряд çăлăнать.

— Тавтапуç сире, юлташсем. Отряда лачака ункинчен туртса кăларнăшăн сирĕн ятăрсем пролетариатăн историйĕнче паллă вырăна çырăнĕç,— терĕ Щетинкин, Макарпа Фролова ытала-ытала чуптуса.

— Пире çеç мар, акă кама пуринчен ытла тав ту. Вăл пире вилĕм аллинчен çăлчĕ. Ун ырлăхĕпе пирĕн отряд лачака ункинчен тухĕ,— тесе фельдфебельле тумланнă Ванюшкин çине кăтартрĕ Макар. Унтан ĕç епле пулнине йĕрки-йĕркипе каласа пачĕ. Партизансем Макара, ункă пек çавăрса илсе, итлерĕç. Юлашкинчен Макар хăйĕн сăмахне çапла пĕтерчĕ:— Тăвăр сукмак тăрăх килетпĕр, сасартăк лаша кĕçенни илтĕнчĕ. Пăхатпăр — Фролов лаши пуçĕ кăна курăнать. Вăл сукмакран çиме шыраса пăраннă та лачакана путса ларнă. Аран-аран кăлартăмăр. Ман лашана карательнăй отряд салтакĕсем персе вĕлерчĕç.

Шурăмпуç сӳнчĕ. Хĕвел, юн пек хĕрелсе, çунса тухрĕ.

Щетинкин отрячĕ тăвăр сукмак тăрăх, хур кĕтĕвĕ пек, умлăн-хыçлăн лачака ункинчен тухать.

Çав кун ĕнтĕ Щетинкин отрячĕпе Могильниковăн карательнăй отрячĕ юлашки хут тытăçрĕç. Кăнтăрла çитнĕ çĕре Кăшлав ялне партизансем йышăнчĕç. Анчах Могильниковăн салтакĕсем ялтан тухса кайни курăнмарĕ. Могильников капитанăн хăйĕн те ячĕ илтĕнмерĕ.

Çав чаплă ĕçе ĕмĕр хисеплĕн асăнмалăх, каярахпа Кăшлав ĕçхресченĕсем хăйсен ялне чаплă партизан отрячĕн пуçлăхĕн ятне пачĕç.

Халĕ ĕнтĕ çав тутар ялĕ Кăшлав мар, Щетинкин ятлă.



Цена 3 р. 10 коп.
с 1. I. 1961 г.— 31 к.